К72.96:81
Ч-12
И-41217

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ: АВАЛЛӐХРАН МАЛАШЛӐХА

THESAURUS
LINGUAE TSCHUVASCHORUM
THESAURUS
LINGUAE TSCHUVASCHORUM
THESAURUS
LINGUAE TSCHUVASCHORUM

Национальная библиотека ЧР
4-041217

***Н.А. РЕЗЮКОВ***
***çуралнăранпа***
***110 çул***
***çитнине***
***халалласа***





К
К72.96:81
Ч12

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ

Обязат. экз.

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ: АВАЛЛĂХРАН МАЛАШЛĂХА

## Статьясен пуххи

Кр

Шупашкар
2007

УДК 811.512.111
ББК 81.2Чув
Ч — 12

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн
Ăслăлăх Канашĕ йышăннипе пичетленет*

*Печатается по постановлению Ученого Совета
Чувашского государственного института гуманитарных наук*

Редакци йышĕ / Редакционная коллегия
**В.С. Григорьев, Г.А. Дегтярёв,
А.А. Трофимов, В.Г. Харитонова, А.П. Хузангай**

**Чăваш чĕлхи: аваллăхран малашлăха**. Статьясен пуххи / Г.А. Дегтярёв пухса йĕркеленĕ. — Шупашкар: Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2007. — 130 с.

Статьясен пуххине паллă лексикографа, пуçламăш тата аслă шкул кĕнекисен авторне Н.А. Резюкова (1898—1969) асăнса хатĕрленĕ. Унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне тата Н.И. Ашмаринăн 17 томлă словарĕ мĕнле йывăрлăхсем витĕр тухнине сăнланă, çавăн пекех хальхи лексикографипе терминологи ыйтăвĕсене тишкернĕ.

**Чувашский язык: из глубины веков в будущее**. Сборник статей (на чуваш. и русск. яз.) /Науч. ред. и сост. Г.А. Дегтярёв. — Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 2007. — 130 с.

Сборник посвящен памяти известного чувашского лексикографа, автора школьных и вузовских учебников Н.А. Резюкова (1898—1969). Представлены новые материалы о жизни и творчестве ученого, истории издания семнадцатитомного «Словаря чувашского языка» Н.И. Ашмарина, а также исследования по актуальным проблемам чувашской терминологии и лексикографии.

ПРОВЕРЕНО
2010 16 МАР 2017

ISBN 978–5–87677–067–7

© Чувашский государственный институт
гуманитарных наук, 2007

Ч-41217
НАЦИОНАЛЬНАЯ
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

## УМ CĂMAX

Сирĕн алăра – «Чăваш чĕлхи: аваллăхран малашлăха» ятпа тухакан иккĕмĕш кĕнеке. Çак ярăмри статьясен малтанхи пуххине А.П. Хусанкай – Василий Георгиевич Егоров профессор çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май – 2000 çулта хатĕрленĕччĕ. Акă ĕнтĕ иккĕмĕш пухăм калăпланса тухать. Ăна вара Николай Андреевич Резюков чĕлхеçе халаллатпăр. Вăл çуралнăранпа килес çул 110 çул çитет.

Вырăспа чăваш чĕлхисен шайлаштаруллă грамматикин («Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков») авторĕ, Н.И. Ашмарин профессорăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» чылай кăларăмне пичете хатĕрлекенĕ – вăл ăслăлăхра та, вĕрентÿре те палăрса юлнă. Çирĕм çул ытла чăваш шкулĕсем Николай Андреевич хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхипе» вĕреннĕ, вăл майлаштарнă орфографи тытăмĕпе тата программа таврашĕпе усă курнă. Сирĕн умри кĕнеке ăна асра тытмалли хăйне евĕр палăк пултăр.

«Чăваш чĕлхи: аваллăхран малашлăха» статьясен пуххинче эсир Н.А. Резюков пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те, Н.И. Ашмаринăн 17 томлă словарĕ пирки те çĕннине нумай пĕлме пултаратăр. Эпĕ хамăн статьяна архив документчĕсене тĕпе хурса çыртăм. Истори наукисен кандидачĕн Е.П. Погодинăн ĕçĕ – тĕрлĕ ăслăхсен тĕпчев мелĕпе усă курса хатĕрленĕ психологи портречĕ (унччен вăл Н.Я. Бичурин, Л.Н. Гумилев, П.В. Денисов, В.Д. Димитриев, Н.В. Никольский, М.П. Петров-Тинехпи, М.И. Скворцов ăсчахсем çинчен кун йышши тишкерÿсем пичетленĕччĕ). Николай Андреевича астăвакан сумлă çынсем, педагогика ĕçĕн ветеранĕсем А.С. Канюкова, И.Я. Тенюшев, Б.Л. Тихонов (Борлен) мĕн калани уйрăмах паха. Хисеплĕ ĕçтешĕмĕр С.П. Юшков та хăйĕн асаилĕвĕсене çырма пуçланăччĕ: шел, ĕлкĕреймерĕ – пĕлтĕр пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Çак кĕнеке валли статья хăварнă В.А. Андреев чĕлхеçĕ те текех пирĕнпе çук ĕнтĕ. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, ырă ячĕ асăмăртан тухас çук...

Пухăмăн иккĕмĕш пайне чăваш чĕлхи аталанăвĕпе çыхăннă тĕпчевсем кĕчĕç. Вĕсен авторĕсен йышĕнче: Чăваш патшалăх

гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн сотрудникĕсем Е.И. Батченкăпа Г.Ф. Юмарт, И.Н. Ульянов ячĕллĕ университетăн ăсчахĕсем В.И. Сергеевпа О.Р. Студенцов, педагогика университечĕн профессорĕ Н.П. Петров, пултаруллă çыравçă тата куçаруçă Е.Н. Лисина. «Этнокультура тĕпчевĕсенчи терминологи ыйтăвĕсем» темăпа гуманитари институтĕнче 2006 çулта ирттернĕ ăслăлăхпа практика конференцийĕн сĕнĕвĕсене А.П. Хусанкай пĕтĕмлетсе пачĕ. Хула шкулĕн ачисене чăваш чĕлхи вĕрентекен И.В. Дегтярёва тата Чăваш Республикин патшалăх пичет архивĕн пай пуçлăхĕ С.В. Налимова Николай Андреевич Резюковпа çыхăннă библиографи кăтартмăшне хатĕрлерĕç.

Статьясен пуххине кăларма, рецензилеме хутшăннă ĕçтешсене пурне те чĕререн тав тăватăп. Пĕрлехи вăйпа калăпланнă кĕнеке тăван культурăпа ăслăлăх талккăшĕнче хăй вырăнне тупасса шанатăп.

*Геннадий Дегтярёв*

*Г.А. Дегтярёв*

## НИКОЛАЙ РЕЗЮКОВ ТАТА «ЧӐВАШ СӐМАХӖСЕН КӖНЕКИ»

> В моем распоряжении известное число документов и известная сумма свидетельств о человеке. Я пытаюсь нарисовать его правдивый портрет. Каким он будет? Не знаю... Мы хотим, чтобы все документы были использованы, если они проливают свет на новые стороны объекта: ни страх, ни восхищение, ни враждебность не могут побуждать биографа чем-либо пренебречь или о чем-либо умолчать.
>
> *Андре Моруа*

Халӗ ку ял Тутар Республикин Теччӗ районӗнче шутланать, ӗлӗк Чӗмпӗр кӗпӗрнин Пӑва уесне кӗнӗ. *Кӑнна Кушки* ятлӑ вӑл. Тӑван культура историне тӗшмӗртекен чӑваш ҫынни ҫав ята илтнех ӗнтӗ. Пирӗн халӑхӑн ҫӗнӗ тапхӑрти ҫутлӑх ҫулӗ Кӑнна Кушкинче пуҫланнӑ мар-и-ха? Кунта аслӑ вӗрентекенӗмӗр, хальхи ҫырулӑхӑн никӗслевҫи Иван Яковлевич Яковлев кун ҫути курнӑ. Ҫӗрӗ-шывӗ сиплӗ, сывлӑшӗ симлӗ пулнӑ-тӑр ҫав хутлӑхра: пултаруллӑ ачасем ҫуралсах пынӑ. Ӳссе ҫитӗннӗ те культурӑпа ӳнерлӗх ӗҫченӗсем пулса тӑнӑ – чӑваш ӑс-хакӑлне, Тӑван ҫӗршыв ӑспурлӑхне пуянлатнӑ. Мухтава тивӗҫлӗ Кӑнна Кушкисен йышӗнче: Алексей Рекеев, Игнатий Иванов, И. Максимов-Кошкинский, Александр Алга. Ҫавӑн пекех – Анна Казакова, Тихӑн Петӗркки, Александр Тимбай, Михаил Сугалов (Серте Мишши), Николай Байдеряков... Пирӗн кӗнекен тӗп сӑнарӗ Николай Андреевич Резюков та ҫак тӗлӗнтермӗш чӑваш ялӗнче чӗм илнӗ. Сӑмах май каласан, «Тӑхӑрьял» авторӗ Григорий Тимофеев тата литература тӗпчевҫи Николай Дедушкин ӑна тӑван тивнӗ.

### Кун-ҫул пуҫламӑшӗ

Пулас чӗлхеҫӗ 1898 ҫулхи чӳкӗн 26-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе – раштавӑн 9-мӗшӗнче) ҫуралнӑ. Резюковсен йӑх ятне

мăнаслашшĕн ашшĕ Ĕреçӳк (тĕне кĕртнĕ хыççăн – Çемен) пуçарнă, мăнаслашшĕ Ĕреçӳк Сатайĕ (хут çинче – Николай Резюков) вара хушма ята çирĕплетсе хăвараканĕ пулнă.

Николай Резюкован ашшĕ – Андрей Васильевич – Кăнна Кушкинче икĕ класлă шкул пĕтернĕ, унтан темиçе уйăх Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕнче вĕренсе пăхнă. 1899 çулта (ун чухне ывăлĕ Микул çулталăк та тултарман пулнă-ха) вăл Хусана кайса «хура ĕçе» вырнаçнă – вырăс мар халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарие вут хутса тăма кĕрĕшнĕ. Семинарире географи вĕрентекен Н.И. Ашмарин ăна çийĕнчех асăрханă, Кушкă чăвашĕсен чĕлхи пирки ыйта-ыйта пĕлнĕ (унăн йăли çапла пулнă – куç тĕлне пулнă пĕр чăваша та калаçăшĕ-пуплевĕ пирки тĕпчемесĕр «вĕçертмен»). Çак паллашу витĕм кӳнĕ-ши: Андрей Васильевич 1901 çулта, хăй тĕллĕн хатĕрленсе, хут вĕрентекен пулма экзамен тытнă. Вара Святитель Гурий тăванлăхĕн шкулне ĕçе вырнаçнă та халăха вулама-çырма вĕрентме пуçланă. 1905 çулта кун йышши шкулсене пăрахăçласан, пулас чĕлхеçĕн ашшĕ хăй пурнăçне чиркӳ ĕçĕпе çыхăнтарнă. Андрей Васильевичăн кун-çулĕнчи çак пулăмсем пурте каярах ывăлĕн шăпинче палăрнă...

Сакăр çула çитиччен Микул хăйĕн амăшĕпе пĕрле аслашшĕн килĕнче пурăннă. Ашшĕ псаломçă (тиечук) ĕçне вырнаççан, çемйи ун патне куçса килнĕ – Микул Аслă Арапуç (Первомайски) шкулне çӳреме пуçланă.

Кашни çур çултах Резюковсен çемйи çĕнĕ вырăна куçнă: хальхи Комсомольски тăрăхĕнчи Шурут ялĕ, Шăхасан вулăсĕнчи (Канаш р-нĕ) Энтрияль. Кунта икĕ çул тĕпленсе пурăннă хыççăн, куккăшĕ Микулая Ĕпхӳ кĕпĕрнинчи Пелепей уесĕн Шаран вулăсне – хăй ĕçлекен шкула – илсе каять. Ашшĕне вара Шăхран ялне (халĕ – Канаш хули) ĕçлеме куçараççĕ.

Пуçламăш пĕлӳ илсен, 1910 çулта Микулай Енĕш-Нăрвашри икĕ класлă шкула вĕренме кĕрет. Кунти учительсем виççĕшĕ те Чĕмпĕрте И.Я. Яковлев патĕнче ăс пухнăскерсем пулнă. Çав вăхăтра шкулта Василий Иванов (кайран *Токсин* хушаматпа паллă, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ), Николай Лукин (кайран – *Юшунев*, Чăваш АССР Тĕп Ĕçтăвкомĕн Президиумĕн Председателĕ), Николайпа Кузьма Ивановсем (*Ванерккесем*) вĕреннĕ. Николай Резюков кунта нумаях тытăнса тăман, Шупашкарти тĕн училищине куçнă (ашшĕ витĕмĕпе пулĕ ĕнтĕ). Унтан вĕренсе тухсан тепĕр тăватă çул (1914–1918)

Хусанта тĕн семинарийĕнче пĕлĕве ӳстернӗ. Тĕн йӑли-йӗркипе ҫыхӑннӑ предметсемсӗр пуҫне грек, латин, нимӗҫ чӗлхисене вӗреннӗ, психологипе логикӑна, историпе философие, алгебрӑпа физикӑна, геометрипе тригонометрие, вырӑс сӑмахлӑхне ӑса хывнӑ.

1915 ҫулта, ашшӗне ҫара илсен, Николайӑн кил-йышне тӗкӗлесси пирки шутлама тивет. 1916–1917 ҫулсенчи каникул вӑхӑтӗнче вӑл Арзамас – Шӑхран чукун ҫулне тунӑ ҫӗре хутшӑнать. 1918 ҫулта Шӑхранти кредит юлташлӑхне вырнаҫать (ашшӗ – ку вӑхӑта ҫартан таврӑннӑскер – чиркӳ хӗсмечӗсӗр пуҫне ҫак юлташлӑхра шут ӗҫне туса пынӑ), пайташсене куллен кирлӗ таварпа тивӗҫтермешкӗн Мускавпа Питӗр таранах кайса ҫӳрет. Кӗркунне вара университета кӗрес ӗмӗтпе Хусана ҫитет. Унта йышӑну вӗҫленнине пула Халӑх ҫутӗҫӗн аслӑ институтӗнче (кӗскетнӗ вырӑсла ячӗ – ВИНО, ӑна 1918 ҫулта учительсен институтӗнчен йӗркеленӗ) вӗренме пуҫлать.

Чӳк уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Хусан университечӗ ҫӗнӗрен заявленисем йышӑнма пуҫлать. Ҫавӑнпа усӑ курса Николай Резюков университета физикӑпа математика факультетне вӗренме куҫать. Анчах каллех ӑнмасть: укҫа-тенкӗрен хӗсӗк пулнипе аслӑ шкула тепӗр уйӑхран пӑрахма тивет. Ун чухне рабочисемпе хресченсен ачисене ҫеҫ стипенди тӳленӗ. Микул ашшӗн, тиечук пулнӑ май, ачисене нухратпа хӑйӗнех тивӗҫтермелле пулнӑ (вӑл вӑхӑтра унӑн 5 ачинчен виҫҫӗшӗ вӗреннӗ).

1918 ҫулхи раштав варринче Н. Резюков Ҫӗрпӳ уесӗнчи (хальхи Канаш районӗнчи) Вырӑскас Пикшик шкулӗнче пӗрремӗш классене вӗрентме пуҫлать. Ҫав вӑхӑтрах вулӑсри ҫутӗҫ уйрӑмӗнче ҫыруҫӑ ӗҫне туса пырать.

1919 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗнче уес учителӗсем, 200 ҫынна яхӑн, Ҫӗрпӗве – пӗлӗве ӳстерекен курса – пухӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнта заняти ирттерме Хусан преподавателӗсене чӗнсе илеҫҫӗ. Вӗсен йышӗнче паллӑ ӑсчахсем Н.И. Ашмарин, Н.В. Никольский, Г.И. Комиссаров пулнӑ. Николай Иванович Ашмарин, Хусантан Ҫӗрпӗве пынӑ чухне, Николай Резюковӑн ашшӗ патӗнче Шӑхранта чарӑнать (вӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑну ҫухатман, паллӑ чӗлхеҫӗ А.В. Резюкова хӑйӗн кӗнекисене те парнелесех тӑнӑ), лешӗн мӑшӑрӗ вара ывӑлне валли Ашмарин урлӑ апат-ҫимӗҫ парса ярать. Ҫавна май «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекин» авторӗ хӑйӗн вӗренекенӗ, ӗҫтешӗ пулас ҫынпа паллашать (каярах пӗрле ӗҫлесси пирки ун чухне вӗсем тӗлленмен пулӗ ӗнтӗ).

Малалла вĕренес туртăмлă Николай Резюков авăн уйăхĕнче Хусан университетне таврăнать. Анчах та 1920 çулхи нарăс вĕçĕнче вĕренĕве каллех пăрахма тивет, кĕр çитиччен Хусан кредитартельсоюзăн Шăхран (Канаш) уйрăмĕнче хут ĕçĕсем туса пырать. Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илеççĕ, сывлăхĕ хавшак (строй службине юрăхсăр) пирки РККАн Атăлçи çар округĕн Шăхранти вăрçă хатĕрĕсен склад управленине çыруçă пулма вырнаçтараççĕ. 1922 çулхи нарăсра хĕсметрен пушансан, пулас тĕпчевçĕ çуралнă ялне Кăнна Кушкине каять, виçĕ çул хушши хресчен ĕçĕпе пурăнать.

1925 çулхи утă уйăхĕнче – ашшĕ чиркӳ хĕсметне пăрахса яла таврăнсан – Н. Резюков Шупашкара килет, Чăваш потребитель пĕрлĕхĕсен союзне хут ĕçне вырнаçать. Çулталăк вĕçĕнче, Чăваш АССР Çутĕç наркомачĕ сĕннипе, Хĕвелтухăç педагогика институтне (маларах асăннă ВИНОн çĕнĕ ячĕ) вĕренме кĕрет. Çав хушăрах Н.В. Никольский профессорăн пулăшуçи тивĕçне пурнăçласа пырать. Пурнăçа сыпăнтармалăх нухрат тупас тени те, ăслăлăх патне туртăнни те пащăрнă-тăр кунта. Н.В. Никольский Хусан университечĕ çумĕнчи Археологи, истори тата этнографи обществин этнографи секцине ертсе пынă, Николай Резюков унăн секретарĕ шутланнă[1]. 1927 çулхи çулла (16.VI – 13.VIII) вăл Пурлăх культури историйĕн академийĕ Чăваш Республикинче ирттернĕ этнографи экспедицине хутшăннă[2], унăн тĕллевĕсемпе «Канаш» хаçатра халăха паллаштарнă[3].

### Ашмаринпа çума-çумăн

1925 çулхи юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком Президиумĕн ларăвĕнче Чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртекен комисси çулталăк хушшинче (1924 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1925 çулхи юпаччен) мĕнле ĕçленине тата 1925–1926 çулсенче мĕн палăртнине пăхса тухнă. Лару протоколĕнче ытти йышăнусемпе пĕрле çапла çырса хăварнă: «Ашмарин профессорăн академилле словарьне кăларассине васкавлă тумалли чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе шутлас»[4].

1926 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче республикăн Тĕпĕçтăвкомĕ «Ашмарин профессорăн чăвашла-вырăсла словарьне кăларас» ыйтăва ятарласа тишкерет те «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» 1926 çулта пичетлеме пуçлама тата тăватă çул хушшинче кăларса пĕтерме палăртать[5]. Анчах ĕç-пуç тӳрех йĕркеленсе каяймасть-ха...

1928 çулта Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» I томĕ аранах пичетленсе тухать. Малалли кăларăмсен ал çырăвне хăвăртрах хатĕрлемешкĕн автора шакăрчасем кирлĕ пулнă. Хĕвелтухăç педагогика институчĕн чăваш пĕлĕвĕ кафедри Николай Ивановича пулăшма 10 студент уйăрса парать. Анчах студентсен бригадипе ĕçлени словарь хатĕрлессине пĕртте хăвăртлатаймасть. Пĕр уйăх пек çапла тăрмашсан Н.И. Ашмарин ăнланса илет: пулăшу ушкăнĕн йышĕ пĕчĕкрех пулмалла, ăсталăхĕ – пысăкрах.

Чăваш çутĕç комиссариачĕн элчипе (П.И. Ивановпа) тата Н.В. Никольский профессорпа канашланă хыççăн словарь авторĕ Хĕвелтухăç пединститутĕнче икĕ пулăшуçă суйласа илет: пĕри – III курс студенчĕ Н.А. Резюков, тепри – чăваш уйрăмĕнче II курсра вĕренекен И.К. Куприянов. 1928 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче пĕчĕкçĕ штат ĕçе пуçăнать: çыхăри карточкăсене алфавит йĕркипе вырнаçтараççĕ, Ашмарин ертсе пынипе ал çыру хатĕрлеççĕ.

Авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕнче ку йышра улшăну пулса иртет – И.К. Куприянов вырăнне ВПИн тепĕр икĕ студенчĕ ĕçе пуçăнать: А.М. Волгин (Шакмаков) карточкăсене майлаштарать, С.Н. Санчугов карточкăсенчен куçарса çырать. Тĕп ĕçе Н.И. Ашмарин хăй тата, вăл ертсе пынипе, Н.А. Резюков пурнăçласа пынă.

1928 çулхи çĕртме уйăхĕн варринче Чăваш çĕршывне сăнакансен ушкăнĕ (Общество изучения Чувашского края), хальхи пек каласан, Пĕтĕм чăваш таврапĕлӳçисен пĕрремĕш съездне ирттерет. Общество председателĕ П.И. Иванов докладра çапла каланă: «Кăçал эпир Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» кăларма укçа-тенкĕ уйăрттарма пултартăмăр. Çулла... икĕ кăларăм пичетлесе кăларĕç. Пурĕ 15 кăларăм палăртаççĕ, вĕсене виçĕ çул хушшинче пичетлесе пĕтерĕç»[6]. Докладра çавăн пекех Хĕвелтухăç педагогика институтĕнчи Чăваш уйрăмĕн ăслăлăхри пĕлтерĕшне, Н.И. Ашмаринпа ĕçлеме пултаракан ăстаçă пуррине («есть подготовленный кадр») палăртнă. Съезд резолюцийĕнче çакăн пек çырса хăварнă: «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» кăларма чарса тăракан пĕтĕм чăрмава пĕтермешкĕн васкавлă мерăсем йышăнмалла»[7].

1929 çулхи пуш уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш çутĕç наркомачĕн Академи центрĕ ятарлă лару ирттерет. Унта М.С. Сергеев, Т.М. Матвеев, М.П. Петров, Ф.Т. Тимофеев, А.П. Сарри, Е.Д. Ванеркке, Н.И. Ванеркке тата ыттисем хутшăнаççĕ.

Пуханнисем Ашмарин словарьне каларассипе çыханна ыйтусене (хут ыйтăвĕ, шрифт ыйтăвĕ, корректура ыйтăвĕ т.ыт.) сӳтсе яваççĕ. 1928–1929 бюджет çулĕнче II–III томсене каларма палăртаççĕ: латин шрифчĕллине – Хусанта, теприне (III томне) – Шупашкарта. Çулталăк пĕтиччен V тома кăларас ыйтăва тишкерсе уçăмлатма Т.М. Матвеева хушаççĕ[8].

1929 çулхи çĕртмен 21-мĕшĕнче Çутĕç наркомачĕн Академцентрĕ словарь ыйтăвне тепĕр хут сӳтсе явать. Унта М.С. Сергеев нарком, Н.В. Никольскипе Н.И. Ашмарин профессорсем, Наукăпа культура канашĕн элчи Т.М. Матвеев тата ыттисем хутшăнаççĕ. Тепĕр бюджет çулĕнче «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» 90 пичет листилĕх кăларма палăртаççĕ. Çапла йышăнаççĕ: çуррине (45 пичет листине) кăларма вырăнти бюджетран нухрат тупмалла, тепĕр çурри валли Главнаукăран укçа ыйтмалла[9].

Анчах Главнаука словарь валли укçа уйăраймасть. Апла пулин те Çутĕç наркомачĕ 1929–1930 бюджет çулĕнче «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» 4 томне кăларма майсем шырать тата V–VII томсене пичетлес тĕлĕшпе Чăвашгизпа килĕшӳ тăвать. V тома 1930 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕ тĕлне кăлармалла пулнă, улттămĕшне – çĕртме пуçламăшне, VII тома вара – юпа уйăхĕн пуçламăшне.

Çав вăхăтра Н.А. Резюковăн институтри вĕренӳ тапхăрĕ вĕçленсе пынă (вăл чăваш чĕлхипе литературине тата вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен пулса тухнă). Хĕвелтухăç педагогика институчĕн Чăваш уйрăмĕ пирĕн республикăн Çутĕç наркоматне янă характеристикăра Николай Андреевич пирки çапла каланă: «*Общее развитие достаточное. Может быть хорошим работником, но загружает себя работой, несколько разбрасывается и не сидит над определенной работой как следует*». Ĕçри ăнăçулăх енчен хакласа, ăна М.С. Сергеев, В.А. Андреев тата П.П. Павлов студентсем хыççăн асăннă[10].

Каярах, 1930 çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнче, Н.И. Ашмарин Чăваш Республикин çутĕç наркомĕ патне янă çырура вара Николай Резюков пирки çакăн пек сăмахсем вулатпăр: «*Мой главный сотрудник... Найти вместо него другое лицо невозможно... В Казани такого человека нет... Я вообще желал бы иметь его помощником до самого конца работы*»[11]. Николай Иванович палăртнă тăрăх, пулăшуçă çакăн пек ĕçсем туса пынă:

1) словарь валли хатĕрленĕ карточкăсене тепĕр хут пăхса тухса йĕркене кĕртнĕ, вĕсенчи текста уçăмлатнă;

2) сăмахăн пĕлтерĕшĕсене уйăрса тухнă;
3) хăш-пĕр текста вырăсла куçарма пулăшнă;
4) корректурăна малтан вуласа тӳрлетӳсем тунă.

Асăннă çырура Ашмарин тӳресене çапла сĕннĕ: диплом илнĕ хыççăн Николай Резюкова ЧАССР Çутĕç наркомачĕ çумне çирĕплетмелле, вара словарь сотрудникĕ туса Хусанта хăвармалла. Профессор шучĕпе, унăн пулăшуçи «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» никĕсĕнчи ăслăлăх идейине пĕлсе çитнĕ, ĕç йĕркине алла илнĕ – словарьпе çыхăннă кирек хăш ĕçре те вăл питĕ кирлĕ çын.

Н.И. Ашмарин ыйтнине Шупашкарсем шута илеççĕ – 1930 çулхи ака уйăхĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа Николай Резюкова Чăваш çутĕç наркомачĕ çумĕнчи Словарь комиссийĕн вăхăтлăх сотрудникĕ («временный сотрудник Словарной комиссии Чувашнаркомпроса по изданию научного словаря чувашского языка») пулма çирĕплетеççĕ, словарь авторĕпе пĕрле Хусантах ĕçлеме хушаççĕ.

Çав çул вĕçĕнче Николай Андреевичăн тăван ялĕнче пăтăрмахлă ĕç-пуç пулса иртет: ашшĕне, Андрей Васильевича, «патшалăх заданине пурнăçлассинчен сĕмсĕррĕн пăраннăшăн» тесе судпа айăплаççĕ, пилĕк çуллăха аякри Обдорск (Салехард) хулине ссылкăна ăсатаççĕ, пĕтĕм пурлăхне туртса илеççĕ, çемйин те ялтан тухса кайма тивет. Н.А. Резюкова «ыр çынсем» хушамата улăштарма сĕнеççĕ, анчах лешĕ ашшĕнчен писмест, унпа çыхăну тытма пăрахмасть. Ашшĕне тӳрре кăларас тесе ТАССР Аслă судне те çырса пăхать – ку та пулăшмасть. Чĕлхеçĕ амăшĕпе пĕчĕк йăмăкне хăй патĕнче хӳтлĕх тупса парать. Николай Андреевич ун чухне мăшăрĕпе Наталья Федоровнăпа тата икĕ уйăхри ачипе çын патĕнче хваттерте пурăннă. Словарьшĕн тӳлекен укçа çителĕклĕ пулман тата вăхăтра пырса тăман, çавăнпа Резюковăн тепĕр ĕçе те çӳреме тивнĕ: 1930–1931 вĕренӳ çулĕнче Тутар педрабфакĕнче лаборант тата вырăс чĕлхи преподавателĕ пулса ĕçленĕ, тепĕр çулхине Тури Услон районĕнчи колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче общество кӳртĕмне вĕрентнĕ.

1929 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чăваш çĕршывне сăнакансен ушкăнĕн чĕлхепе литература тата этнографи секцийĕсен пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ. Тĕпчевçĕсем Ашмарин словарĕн пĕлтерĕшĕпе пахалăхне сӳтсе явнă. К.В. Элле шучĕпе, «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинчи» латинла куçарăва тата танлаштаруллă чĕлхе материалне хăвармалла. Е.З. Захаров (Маден) çакна хирĕç пулать: ун шучĕпе, латинла текст вырăнне акăлчанла куçару усăллăрах

пулĕччĕ, анчах ăна малашне кăна пурнăçлама май пур. М.П. Петров çак словарь чăваш çыравçисемпе куçаруçисемшĕн тата тăван культурăн ытти ĕçченĕсемшĕн усăллине палăртать. «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» чĕлхе аталанăвне сулăм кӳресси те ăна иккĕлентермест: тĕслĕхрен, словарьти арман пайĕсен ячĕсемпе аэроплан пайĕсене ят панă чухне усă курма пулать. Н.Р. Романов палăртнă тăрăх, «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» – чĕлхе словарĕ çеç мар, чăваш культурин энциклопедийĕ те. Н.Т. Ваçанкка Ашмарина çĕнĕ сăмахсемпе терминсене шута хуманшăн тиркет. Ун шучĕпе, чиркӳ кĕнекисенчен суйланă тĕслĕхсене халькхи калаçу чĕлхинчен илнĕ тĕслĕхсемпе улăштарни вырăнлăрах[12].

Çавăн чухне пирĕн республикăра лексикографишĕн яваплă ятарлă орган пулнă – Словарь комиссийĕ. Ун йышне çутĕç наркомĕ М.Сергеев тата ЧАПП, Чăвашгиз, Чăвашакадемцентр элчисем Н. Меценатов, Н. Ашмарин, В. Егоров т. ыт. кĕнĕ. Комисси ĕçне Т. Матвеев йĕркелесе пынă. 1931 çул валли комисси çакăн пек тĕллевсем палăртнă пулнă:

1) «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» VI–VII кăларăмĕсене пичетлесе кăлармалла, тăххăрмĕшĕнчен пуçласа 12-мĕш таран ал çыру хатĕрлесе çитермелле;

2) Н.В. Никольскин чăвашла-вырăсла словарьне (12–15 пичет листи) тата Е.З. Захаровăн чăваш чĕлхин этимологи словарьне (90 пичет листи) хатĕрлесе çитермелле[13].

Шел, Н.В. Никольскин тата Е.З. Захаровăн словарĕсем кун курайман, «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» те йывăррăн калăпланса пынă.

1930 çул вĕçне Н.И. Ашмаринпа унăн пулăшуçисем «м» тата «н» сасăпа пуçланакан сăмахсене словарь валли йĕркелесе çитереççĕ, «п»-па пуçланаканнисемпе ĕçлеме тытăнаççĕ. Тепĕр çулне 785 лист (1570 стр.) чухлĕ ал çыру хатĕрлеме палăртаççĕ. Çав шута «п», «р», «с» сасăллă сăмахсем тата «ç»-ллисен пĕр пайĕ кĕмелле пулнă[14]. Ашмарин ушкăнĕ çапла та сĕннĕ: хушма укçа уйăрсассăн революци хыççăнхи (13 çул хушшинче тухнă) кĕнекесенчен тĕслĕхсем çырса илсе словаре кĕртме май пур.

Кунта çакна каласа хăвармалла: 1926 çултан пуçласа Чăваш çутĕç комиссариачĕ Н.И. Ашмарина уйăхсерен 230 тенкĕ пулăшу укçи тӳлесе тăнă, 1931 çул пуçламăшĕнче уйăхри пулăшăва 260 тенке çитернĕ. Анчах çак укçана та чылай чухне вăхăтра парайман. Словарь кăларассине йĕркелес яваплăх тĕпчев институтне куçсан, лару-тăру пушшех япăхланнă. Çакă Н.А. Резюков

1931 çул вĕçĕнче института янă çыруран та курăнать. Унта «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» хатĕрлекен ушкăн икĕ уйăх çурă ĕç укçи илейменнине асилтернĕ, Н.И. Ашмаринăн пурнăçĕ питĕ юрлă пулнине палăртнă[15].

Влаç «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» ăсталакансене вăл вăхăтра кирлĕ пек пулăшу парайман, анчах словарь ал çырăвне хатĕрлесе пĕтермелли сроксене çине-çинех палăртса тăнă: 1932 çулхи юпа уйăхĕ тĕлне, 1933 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен, çĕртме уйăхĕччен...

1932 çулхи çуркунне лару-тăру уйрăмах синкерлĕ килсе тухать: «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» идеологи йăнăшĕсем тупаççĕ, словарь хатĕрлесе кăларас ĕçе чарса хураççĕ. Н.А. Резюковăн ирĕксĕрех Ĕпхӳ хулине кайса ĕçе вырнаçма тивет – Пушкăрт педтехникумĕнче вырăс чĕлхи вĕрентме пуçлать («ударник-просвещенец» ята тивĕç пулать). Çапах та Н.И. Ашмаринпа çыхăну тытма пăрахмасть, май çитнĕ таран пулăшуçă ĕçĕсене туса пырать: хăйĕнпе пĕрле илнĕ словарь материалне йĕркене кĕртет, çыру урлă авторпа канашлать, майлаштарнă ал çырусене ун патне ярса тăрать.

Çурла уйăхĕнче Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» тăххăрмĕш кăларăмне хатĕрлеме пуçлать. Шупашкарсем вара тахçанах калăпланă томсене те пичетлемеççĕ-ха – тĕрлĕ сăлтав тупса ик-виç çул вырттараççĕ, словарь авторне çителĕклĕ тĕкĕлемеççĕ, ĕçне путлĕн хакламаççĕ...

Чӳк уйăхĕнче словарь ал çырăвĕсене тишкерсе редакцилеме ятарлă комисси йĕркеленет: унта Т.М. Матвеева, Е.З. Захарова тата Ф.Т. Тимофеева кĕртеççĕ. «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» «ЧАССРăн 15 çулхи юбилейĕ тĕлне пичетлесе пĕтерме палăртаççĕ[16]. Анчах куншăн словарь авторĕн пурнăçĕ лайăх енне улшăнмасть. Н.И. Ашмаринăн Шупашкара, тĕпчев институтне 1932 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче янă çырăвне лăпкăн вулама çук: чăваш чĕлхин сăмах пуянлăхне тĕнче умне кăларакан ватă та чирлĕ çыннăн хутман хваттерте ĕçлесе ларма тивнĕ, пĕр стакан сĕт туянмалăх та нухрат пулман[17]. Словарьпе çыхăннă пăтравлă лару-тăру, кулленхи пурнăç херĕпĕсем синкер патне çитернĕ – 1933 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕш кунĕнче Николай Иванович Ашмарин профессорăн канăçсăр чĕри тапма чарăннă...

### Усрава илнĕ словарь

Çакăн хыççăн Ашмарин словарьне хатĕрлесе кăларасси пĕтĕмпех Чăваш наука тĕпчев институчĕ çине тиенет. Çутĕç

наркомачĕпе институт дирекцийĕ Н.А. Резюкова Ĕпхӳрен куçса килме пулăшаççĕ, Шупашкарта пурăнма хваттер тупса параççĕ, института ĕçе вырнаçтараççĕ. Икĕ енлĕ килĕшӳре палăртнă тăрăх, Николай Андреевичăн тивĕçĕ çакăн пек пулнă:

1) IX–XV томсен ал çырăвĕсене пăхса тухса пичете хатĕрлесе çитермелле;

2) «х» тата «ш» сас паллисемпе пуçланакан сăмахсен карточкисене майлаштарса тухмалла;

3) VI–XI кăларăмсен автор корректурине вуламалла;

4) словарь кăтартмăшне хатĕрлемелле[18].

«Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» çыхăннă çынсем лайăх пĕлнĕ: словаре авторĕсĕр хатĕрлесе пĕтерме питĕ йывăр пулать. Инкек çине синкек тенĕ пек, кĕçех тата тепĕр синкер тупăннă...

Чăваш наука тĕпчев институчĕн директорĕ С.С. Кутяшов 1933 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче М.Д. Данилов сотрудника Ашмарин словарĕн материалĕсене – ал çырусене, карточкăсене – илсе килме Хусана командировкăна ярать. 12-мĕш числара Михаил Даниловичпа пулăшаканĕсем – М.Ф. Спиридоновпа В.Е. Рзай – словарь хатĕр-хĕтĕрĕпе каялла килме тухаççĕ. Кăнтăр иртни икĕ сехет тĕлне Хусан пристанне çитеççĕ. Пăрахут киличчен кĕтмешкĕн çӳлти хута, командировкăрисен пӳлĕмне вырнаçаççĕ. Багажа черетпе сыхлаççĕ. М.Д. Данилов хуралта чухне, каçхи 5–6 сехет тĕлĕнче, пĕр миххи çухалнине асăрхать. Çав михĕре «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» ал çырăвĕсем – (121–360 №№) – пулнă[19]. Вырăнта та шыраса-ухтарса пăхнă, «Красная Татария» хаçатра та икĕ хутчен пĕлтерӳ пичетленĕ – уççи-хуппи тупăнман, виçĕ тома кĕмелли ал çырусем (Ашмарин хăй тӳрлетсе тухнăскерсем) йĕп пек çухалнă. Ăна кайран, уйăхĕ-уйăхĕпе тăрмашса, çĕнĕрен хатĕрлеме тивнĕ*.

1934 çулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче наука тĕпчев институчĕн дирекцийĕ Н.А. Резюковпа тата тепĕр договор тăвать, унччен палăртнă ĕçсем çумне çĕннисем хушăнаççĕ:

– сăмахсен пĕлтерĕшĕсене уçăмлатса ăнлантармалла, хăш-пĕр предложенисене вырăсла куçармалла;

---

* 1946 çулта Н.А. Резюков Ашмарин словарĕпе çыхăннă икĕ çухатăва аса илнĕ: пĕрре унăнне çул çинче XV кăларăмăн карточкисене вăрласа кайнă (куçарса çырнă хутсем упранса юлнă), тепринче тата чĕлхе уйрăмĕн пуçлăхĕ Тимухха Хĕветĕрĕ патĕнчен VIII–XII кăларăмсен ал çырăвĕсем çухалнă (карточкисем сыхланса юлнă) имĕш[20].

— ал çырăвне çĕнĕ орфографие пăхăнтармалла;

— Чăваш Республикинчи ял ячĕсене хальхи администраци-территори пайланăвĕпе килĕшӳллĕн палăртмалла;

— тĕслĕх çăлкуçĕсен кĕскетӳ стандартне хатĕрлемелле[21].

Малтанхи çулталăкĕнче Н.А. Резюковăн тĕп ĕç норми çакăн пек пулнă — Ашмарин словарĕн черетлĕ кăларăмĕ валли уйăхсерен 3 пичет листилĕх ал çыру хатĕрлесе памалла (пĕр листашăн çĕр тенкĕ тӳленĕ). 1934 çулхи юпа уйăхĕнче тĕпчев институчĕн директор ĕçĕсене пурнăçлаканĕ А.С. Сергеева урăхла хушу кăларать: академилле словаре хатĕрлекен ăслăлăх сотрудникĕн уйăхри ĕç нормине 4,5 пичет листине çитермелле, нормăран ирттерсе хатĕрленĕ пĕр пичет листишĕн 60 тенкĕ тӳлемелле. Хушупа паллашнă хыççăн Н.А. Резюков çапла çырса алă пуснă: «Вуларăм. Уйăхра 4,5 листа хатĕрлемелли нормăна пурнăçлама май çук тесе шутлатăп»[22]. Ун чухне Николай Андреевичăн ĕçĕ уйрăмах йывăр пулнă — сухалнă ал çырусене çĕнĕрен «чĕртме» тивнĕ.

Çапах та çакна палăртмалла: 1934—1935 çулсенче Чăваш наука тĕпчев институчĕн дирекцийĕ «Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» çыхăннă ыйтусене татса парас тĕлĕшпе нумай тăрăшнă, словаре хатĕрлесе кăларассине хăвăртлатмалли майсене шыранă. Н.А. Резюкова, тĕслĕхрен, икĕ пулăшуçă — М.П. Петров-Тинехпипе К.В. Эллене — сĕнсе пăхнă. Дирекци чӳк уйăхĕн пĕрремĕшĕнче ирттернĕ канашлу протоколĕнче çапла çырса хуни пур: «Н.И. Ашмарин профессор словарьне хатĕрлес ĕçе Н.А. Резюков туса пырать, вăл ытти сотрудниксене явăçтарасшăн мар». Пухăннисем тата Николай Андреевич хăйĕн «социализмла обязательствисене» мĕнле пурнăçласа пынине тишкернĕ, «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» VI кăларăмĕнче пичетленмелли «Ум сăмахăн» юлашки вариантне çирĕплетнĕ[23].

1934 çулхи чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче ирттернĕ ларура институт дирекцийĕ çакăн пек йышăну тунă: «Ашмарин профессор словарĕн ал çырăвĕсене, редакцилесе пичете сĕниччен малтан, рецензилеме памалла», çак ĕçе IX кăларăмран пуçăнмалла.

Раштав уйăхĕн виççĕмĕшĕнче каллех «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» хатĕрлесе кăларасси мĕнле пынине сӳтсе яваççĕ — дирекци ларăвĕнче Н.А. Резюковăн отчетлă докладне итлеççĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртать:

1. Словарĕн 7-мĕш томĕ вăрах пичетленет: малтан палăртнă икĕ наборщик вырăнне ĕçе пĕр çын кăна пурнăçлать, шрифт

çителĕксĕр. Шрифта Хусантан вăхăтра илейсен черетлĕ кăларăм çĕнĕ çул тĕлне тухать.

2. IX том валли палăртнă словарь материалĕн пĕр пайне саккăрмĕшне куçарма тиврĕ.

3. Хусантан илсе килнĕ чухне çухалнă 80 пичет листилĕх ал çырăвне çĕнĕрен хатĕрлемелле пулчĕ. С.Н. Санчугов 73,4 пичет листилĕх куçарса çырнă ĕнтĕ»[24].

Чăваш наука тĕпчев институчĕн чĕлхепе литература уйрăмĕ 1935 çул валли çакăн пек план йышăннă:

1) Н.А. Резюковăн Ашмарин словарĕн X–XII томĕсене (60 п.л.) редактор валли хатĕрлесе памалла тата «х», «ш» сас паллипе пуçланакан сăмахсен карточкисене майлаштармалла;

2) С.Н. Санчуговăн карточкăсене куçарса çырассине вĕçлемелле;

3) Т.М. Матвеевăн IX–XI томсене тата вуниккĕмĕшĕн пĕр пайне (пурĕ 65 пичет листи) редакцилемелле.

Наука тĕпчев институчĕ Ашмарин словарьне халăх хушшинче сарас тĕлĕшпе те чылай тăрăшнă. 1934 çулхи чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче дирекци чĕлхепе литература уйрăмĕн пуçлăхне А.С. Львова çапла хушать: словаре вырăнти тата центрти пичетре пропагандăламалла, ку ыйтупа ытти республикăсенчи наука тĕпчев институчĕсемпе тата тăван тавралăха сăнакан обществăсемпе çыхăну йĕркелемелле. Çак тĕллевпех 1935 çулхи нарăсра институт сотрудникне Сергей Ялавина Тутарпа Пушкăрт республикисене тата Куйбышев облаçне командировкăна яраççĕ. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче А.С. Львова тепĕр хут аса илтереççĕ: «Ашмарин словарьне популяризацилес тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнмалла, ку тĕлĕшпе мероприятисен планне хатĕрлесе памалла» (хушу илекенĕ приказ айне çапла çырса хунă: «Вуларăм, ним те тăваймастăп. А. Львов. 23.03.1935.)».

Çав приказăн тепĕр пунктĕнче Н.А. Резюкова çапла хушнă: «Ашмарин профессор словарĕн тĕкĕнми фончĕ Ăслăлăх библиотекинче мĕнле упраннине тĕрĕслемелле. Пичетрен тухнă VI тата VII томсене çав фонда 500-шер экземпляр памалла»[25].

Çĕршывăмăр историне хура сăрăпа кĕрсе юлнă 1937 çул «Чăваш сăмахĕсен кĕнекишĕн» те синкерлĕ килнĕ. Словарĕн VI–XI томĕсене редакциленĕ Т.М. Матвеева «контрреволюцилле организацире» тăракан «буржуалла националист» тесе хупса лартнă хыççăн наука тĕпчев институчĕн директорĕ хушу кăларать: «*Вместо выбывшего Т.М. Матвеева ответственным*

*редактором Словаря чувашского языка проф. Ашмарина Н.И. назначить с сего числа научного сотрудника ЧНИИ культуры Е.З. Захарова, которому немедленно приступить к редактированию рукописи XII выпуска словаря со слова "çит — достигать"»*[26].

Анчах Е.З. Захаров та яваплă редактор ĕçĕсене вăрах пурнăçлаймасть: вуниккĕмĕш кăларăма вĕçлет те теприне якатса тÿрлетме пуçлать. 1937 çулхи ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче унăн ĕç пÿлĕмне ухтараççĕ, хăйне тытса каяççĕ. Çавăнпа Ашмарин словарĕн XII кăларăмĕ яваплă редактор ячĕсĕрех тухать.

Çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче наука тĕпчев институчĕн пуçлăхĕ çĕнĕ хушу çырать: «*Вместо изъятого органами НКВД ред. Е.З. Захарова назначить редактором конца XIII в. и XIV в. Словаря чувашского языка проф. Ашмарина Н.И. с сего числа редактора Чувашского государственного издательства Н.Т. Васянка, которому предлагаю приступить к редактированию XIII в. со слова* Т*ташлама чĕлĕ*У». Çапла вара Никифор Васанкка вунвиççĕмĕш кăларăмăн яваплă редакторĕ пулса тăрать. Хăйĕн тивĕçĕсене вăл юпа уйăхĕн 20-мĕшĕччен пурнăçласа пырать.

Репрессисен ахрăмĕ «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» патĕнче тек-текех палăрнă. Акă, 1937 çулхи утă уйăхĕнче типографире Ашмарин словарьне пичетлеме пăрахаççĕ. Сăлтавĕ мĕн-ха? Шкулта «халăх тăшманĕсен» вĕренÿ кĕнекисемпе, хайлавĕсемпе усă курма чарнă. Çав кĕнекесене çĕнетсе улăштарасси, авторсен ятне катертесси типографи çине йывăр çĕклемĕн тиеннĕ. Çавна май «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» кĕç-вĕç кун курас XIII кăларăмĕ чарăнса ларать, XIV томăн çулталăк ытла типографире выртма тивет. Вĕсен хуплашкисем çине «1937» тесе кăтартнă, тĕрĕссипе вара ку кăларăмсем вулакан патне тепĕр çулне çеç çитнĕ.

### Н.А. Резюков — институт пуçлăхĕ

1937 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче тĕпчев институчĕн директорĕ Н.В. Васильев-Шупуççынни репресси авăрне лекет, «ют патшалăх шпионĕ» пулса тăрать. Юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче Н.А. Резюков республика Совнаркомне çыру янă. Унта НКВД органĕсем институт директорне уйăх çурă каяллах арестленине, çавăнтанпа коллектив ертÿçĕсĕр пурăннине асилтернĕ тата çакăнпа çыхăннă лару-тăрăва хак панă[27]. Вара ЧАССР Совнарком председателĕн çумĕ А.Я. Яковлев хушу кăларнă — тĕпчев институтне вăхăтлăх ертсе пыма Николай Андреевича хушнă.



Ч-41217
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Директор тивĕçне пурнăçласси 1937 çулхи кĕркунне Н.А. Резюковшăн пач çĕнĕлĕх пулнă теме çук. Çакă паллă: 1936 çулхи чӳк уйăхĕн 31-мĕшĕнчен пуçласа 1937 çулхи кăрлач варриччен институтăн ун чухнехи пуçлăхĕ Н.В. Шупуççынни Мускавра вăрăм командировкăра пулнă. Директор çумĕ Е.З. Захаров ăна ылмаштарайман – отпускра каннă. Çавăнпа институт ĕçне уйăх çурă хушши Н.А. Резюков йĕркелесе тăнă.

Совнарком хушăвĕ хыççăн вара институт тилхепине Николай Андреевич сакăр уйăх тытса пынă. Тĕпчев институчĕн йышĕ ун чухне пысăк пулман – вунă çынна та çитмен. Çав вăхăтра тата ВКП(б) Чăваш обкомĕн шкул секторĕ асăннă ăслăлăх учрежденине пачах пĕтерессипирки ыйту хускатнă: тĕпчев институтне хăй хальлĕн хăварнин усси пур-и, ун функцийĕсене ытти культура учрежденийĕсене – Çутĕç наркоматне, Халăх пултарулăх çуртне, Чăвашгиза – памалла мар-и? Ку ыйтупа Н.А. Резюков ВКП(б) обком бюровне ятарлă çыру çитернĕ[28], институт сыхланса юлнинче унăн тӳпи те пур.

Тĕпчев институтне ертсе пынă чухне Николай Андреевич хăйне мĕнле тытнă-ха, мĕнпе палăрнă? Приказсен кĕнекинче упранакан хăш-пĕр хушусем, шел, вăхăтлăх директора ырă енчен кăтартмаççĕ. Тĕслĕхрен, 1937 çулхи раштав пуçламăшĕнчи хушура çапла калани пур: «Институтăн малтанхи ертӳçисем (М.С. Сергеев, С.С. Кутяшов, А.С. Сергеева, Н.В. Васильев), ...сăтăрла хăтланса, политика тĕлĕшĕнчен кĕретех шанчăксăр çынсемпе (Горский, Егоров, Юркин т.ыт.)... институтшăн тухăççăр договорсем тунă»[29]. «Унчченхи пуçлăхсен сăтăрла хăтланăшĕнчен хăтăлас тата институтăн малашнехи ĕçне йĕркелес тĕллевпе» Н.А. Резюков хăй умĕнхи пуçлăхсен тĕрлĕ тĕпчевçĕсемпе тунă килĕшĕвĕсене пурне те тенĕ пекех пăрахăçланă. Çапла вара Н.В. Никольскирен ал çыру пуххине тата И.Н. Юркинран фольклор материалне ăслăлăх архивĕ валли туянасси те, Н.А. Андреевăн терминологи словарьне тата С.П. Горскин «Аналитические и синтетические тенденции в чувашском языке» тĕпчевне пичетлесси те (ку список пысăк) ун чухне пурнăçланман. Николай Андреевичăн çак сарăплă йышăнăвĕн 6-мĕшпе 17-мĕш пункчĕсем уйрăмах курăмлă:

«...6. Договор от 21.04.1937 г. с Егоровым В.Г. и Резюковым Н.А. на составление «Краткого русско-чувашского словаря» расторгнуть и выданный аванс взыскать...

... 17. Издательский договор от 8.10.1936 г. с Егоровым В.Г. расторгнуть и предложить Егорову продать свою рукопись «Русско-чувашского словаря» на правах рукописного материала с правом использования Институтом. В противном случае взыскать выданные суммы и рукопись возвратить»[30].

Тĕрлĕ хутсем хушшинче А.С. Львов чĕлхеçĕ 1937 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче çырса алă пуснă рецензи тупăнчĕ. Унта вырăсла-чăвашла кĕске словарĕн («Краткий русско-чувашский словарь») пĕр пайне – В.Г. Егоров хатĕрленине (К – Я) – хак панă, Н.А. Резюкован пайне (А – И) асăнман та. Ăна А.С. Львов хăй пуçарăвĕпе мар, саккаспа çырнă пулас. Шел, хаклав чĕлхе тишкерĕвĕ пек мар, политика çăхавĕ пек туйăнать. Рецензент ытларах идеологи йăнăшĕсем тупма тăрăшни палăрать (чăвашла куçарса тата кĕскетсе пичетлетпĕр):

1. *«Ал çырăвĕнче чи кирлĕ те пĕлтерĕшлĕ сăмахсем – «коммунизм», «культура», «культпроп», «качество», «количество» т. ыт. те çук.*

2. *Питĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсен политика сĕмне уçăмлă палăртман. Тĕслĕхрен, «контрабанда» патĕнче литературăри буржуалла-троцкистла контрабандăна ăнлантарса паман, «паразит» патĕнче «паразитла классем» ăнлава палăртман. «Сколько» сăмах патĕнче кулаксен каларăшне илсе кăтартнă – «сколько голов, столько умов»...*

3. *Словарьте политика тĕлĕшĕнчен сиенлĕ ăнлантарусем пур... «Прозябать» сăмаха «аслă интерессемсĕр выльăх пек пурăн» тесе ăнлантарнă. Апла рабочи е хресчен революциччен нимĕнле интерессăр пурăннă пек пулса тухать. «Переворот», «переполох», «смута» сăмахсене пĕрешкел, националистла ăнлантарнă: «пăлхав, пăлхавăр, пăлхану»...*

4. *Глаголсене чăвашла хушу наклоненийĕпе куçарнă... Çавăнпа путишле япаласем, ытларах каламасан, пулса тухнă: «обрусеть – вырăса тух», «обрусеть» сăмах вырăса тухмаллах тенине пĕлтермест-çке.*

*Ал çырăвĕ пичете юрăхсăр, ăна тĕпренех улăштармалла е чăн-чăн вĕренӳ словарĕ хатĕрленĕ чухне пуçламăш материал пек усă курмалла».*

Сăмах май каласан, В.Г. Егоров ĕçне сивлесе çырнă çак рецензири шухăшсем, çулталăк пек иртсен, Н.А. Резюкова хирĕçле çаврăнса тухнă – ăна айăпламалли никĕс пулса тăнă...

Çакна та палăртмалла: Николай Андреевич директор тивĕçне пурнăçланă тапхăрта та «Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» çыхăннă лару-тăру пăтравлă аталаннă. Тĕслĕхрен, 1938 çулхи кăрлачăн 24-мĕшĕнчи приказĕпе Н.А. Резюков «Ашмарин профессорăн академилле словарĕн редколлеги йышне» Н. Васанккана, Ç. Элкере тата хăйне кĕртнĕ. Анчах икĕ эрнеренех (нарăсăн 11-мĕшĕнче) малтанхи хушăва улăштарнă та словарь редколлегине çапла палăртнă: хăй, И. Тукташ тата чĕлхе уйрăмĕн сотрудникĕ А. Жуков.

1938 çулхи çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче Николай Андреевич директор тивĕçне пурнăçлама пăрахать[31]. Институтăн çĕнĕ пуçлăхĕ И.Я. Яковлев (Саламбек) çĕртмен 2-мĕш кунĕнче хушу кăларать: «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» Н.А. Резюковăн редакцилемелле.

## Айăплав

Директор, командировкăна каяс чух (кун пекки вăл вăхăтра час-часах пулнă), хăй вырăнне кашнинчех Николай Андреевича хăварнă. 1938 çулхи юпа уйăхĕн варринче ăна тата чĕлхе уйрăмне ертсе пыма хушнă. Анчах çак килĕшӳллĕ те тăнăç лару-тăру кĕçех пĕтĕмпех арканнă...

1938 çулхи чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче институт директорĕ И.Я. Яковлев Н.А. Резюкова ĕçрен кăларса яма приказ кăларать. Хăйĕн хивре йышăнăвне вăл темиçе йӳтĕмпе сăлтавлать (чăвашла куçарса тата кĕскетсе пичетлетпĕр):

«1. Н. Резюков 1928 çулта буржуалла националистсем йĕркелесе ирттернĕ Чăваш ен сăнавçисен [таврапĕлӳçĕсен] съездне хутшăннă, çакна институт дирекцийĕнчен пытарса пурăннă.

2. Ыттисем хатĕрленĕ орфографи словарьне хăйĕн ячĕпе кăларасшăн пулнă...

3. Шкул валли В.Г. Егоровпа пĕрле хатĕрленĕ вырăсла-чăвашла словарьте вырăс глаголĕсене чăвашла хушу формин 2-мĕш сăпачĕпе куçарса кĕретĕнех хулиганла хăтланнă, тĕслĕхрен: «вшиветь» – *пыйтлан*; «давиться» – *çакăнса вил*, *пăвăн*; «зарезать» – *пус*, *пусса пăрах*, *чиксе вĕлер*. «Изменить» глагола *улăштар, урăх майлă ту, тăшмана сутăн* тесе куçарнă, çапла вара шкул ачисене Тăван çĕршыва сутма тӳремменĕх чĕнсе каланă...»[32].

Кун пек айăплав хыççăн çын вăл çулсенче ĕçне кăна мар, ирĕклĕхне те, пурнăçне те çухатма пултарнă. Институт директорĕ

Н.А. Резюковран мĕншĕн çапла майпа хăтăласшăн пулнине халĕ ĕнтĕ татса калама йывăр. И.Я. Яковлев приказĕнчи суя та пустуй сăмахсем хушшинче тĕрĕсси пулнă-ши? Николай Андреевич ун чух хăйне мĕнле хӳтĕленĕ?

Малтан Н.А. Резюковăн ЧАССР çутĕç наркомĕ патне чӳкĕн 13-мĕшĕнче янă çырăвĕпе паллашăпăр. Хăйне тӳрре кăларса чĕлхеçĕ унта çапла çырать:

«1. *Тăван ен сăнавçисен 1928 çулхи съездне хутшăннине эпĕ нихçан та пытарман тата никамран та пытарма пултарайман, мĕншĕн тесен делегатсен списокне «Съезд отчетне» кĕртнĕ, ăна хăй вăхăтĕнче Чăвашгиз çителĕклех пичетлесе кăларнă, халĕ çеç вăл – Чăвашлит йышăнăвĕпе – пăрахăça тухнă. Кунсăр пуçне Шупашкартах çав съезда хутшăннă çынсем пур... Эпир чылайăшĕ ун чух Хусанти Хĕвелтухăç педагогика институтĕнчи Чăваш уйрăмĕн студенчĕсем пулнă, съезда ЧАССР Çутĕç наркомачĕ тата хамăрăн уйрăм ертӳçисем сĕннипе хутшăннă...*

2. *Эпĕ директор тивĕçне пурнăçланă чухне наука тĕпчев институчĕпе Чăвашгиз орфографи словарĕ хатĕрлесе кăларасси пирки килĕшӳ тунăччĕ. Çак ĕç А.К. Жуков В.Г. Егоровăн чăвашла-вырăсла словарĕнчи чăваш сăмахĕсене карточкăсем çине куçарса çырнинчен пуçланчĕ. Суйласа илнĕ сăмахсене кайран И.С. Семенов алфавит йĕркипе вырнаçтарса çырчĕ, эпĕ ăна тӳрлетсе тухрăм...*

3. *Инфинитив форминчи вырăс глаголĕсене словарьте чăвашла куçарнă чухне глагол тĕпĕпе усă курма тивет, вăл хушу наклоненийĕн 2-мĕш сăпачĕпе пĕр килет. Чăн та, XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче Вишневский миссионер хăйĕн «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии» кĕнекинче (Хусан, 1836) вырăс глаголĕсене чăваш чĕлхинчи пулас причасти формипе куçарнăччĕ... Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕ унтанпа çав шайрах юлман. Золотницкий, Ашмарин пек сумлă ăсчахсем чăваш чĕлхине наука тĕлĕшĕнчен çутатса пачĕç. Яковлевăн, ăслăлăх учрежденийĕн директорĕ пулнă май, çав ĕçсемпе паллашмалла пулнă*»[33].

Чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче тĕпчев институчĕн директорĕ И.Я. Яковлев ЧАССР çутĕç наркомĕ патне ăнлантару хучĕ çитерет, Н.А. Резюкова ĕçрен кăларса яни тĕрĕс пулнине ĕнентерме пăхать. Малтан приказра палăртнă сăлтавсене тата пусăмлăрах асăнса тухать:

1. «Хăй вăхăтĕнче буржуалла националистсен съездне хутшăннине директора пĕлтермен».

2. «Ыттисем хатӗрленӗ орфографи словарьне хӑйӗн ячӗпе кӑларасшӑн пулнӑ».

3. «Вырӑсла-чӑвашла словаре контрреволюцилле чӗнӳсем кӗртнӗ: «выражаться» — *усал сӑмахпа вӑрҫ, усал сӑмах кала*; «казнить» — *асаплантарса вӗлер, касса вӗлер, ҫакса вӗлер...* Ҫапла вара, буржуалла националистсен киревсӗр эткерӗпе усӑ курса, Николай Резюков контрреволюцилле шухӑшсем сарнӑ»[34].

Шыракан тупать тенешкел, Ашмарин профессор словарӗн Н.А. Резюков хатӗрленӗ XIV томӗнче наука тӗпчев институчӗн директорӗ И.Я. Яковлев (каярах хӑй те репрессие лекнӗ) юрӑхсӑр сӑмах-юмах сахал мар асӑрханӑ. Пуҫлӑха килӗшмен пуплевсен списокӗнче, тӗслӗхрен, ҫаксем пур:

*Мана Петӗр тытса ирӗксӗрлерӗ* /7с./.

*Кӗтернене ҫул та памасть, курсанах ӑна унтан та кунтан тыткалама тытӑнать* /16 с./.

*Хӗрарӑмсен ним типтер те йолман* /61 с./.

*Чикрӗм — кӑлартӑм, чикрӗм — кӑлартӑм, шурӑ пуҫлӑ ача тупрӑм (уйран уҫлакан услам ҫу кӑларни)* /138 с./.

*Чиркӳре тӑма тӑкӑс (тӑвӑр) пулать* /252 с./ т.ыт.те.

Ҫутӗҫ наркомӗнчен пулӑшу кӗтсе илеймест чӗлхеҫӗ, тӗрӗслӗх шыраса халӑх судне ҫитет. Анчах тӳресем малтан ӑна майлӑ пулман. 1939 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 25-мӗшӗнче Шупашкар хулин пӗрремӗш участокӗнчи халӑх сучӗ ҫапла палӑртнӑ: Николай Резюкова ӗҫрен тӗрӗсех кӑларса янӑ, ӑна валли институтран укҫа-тенкӗ шыраса илмелле мар. Николай Андреевич, паллах, кун пек пӗтӗмлетӳпе килӗшмен, ҫӗнӗ тавӑҫ пуҫарнӑ...

Ку ыйтӑва Аслӑ шкулпа наука тӗпчев учрежденийӗсен профсоюз обкомӗн президиумӗ хӑйӗн ларӑвӗнче пӑхса тухнӑ, 1940 ҫулхи ака уйӑхӗн 4-мӗшӗнче ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тунӑ: «Н.А. Резюкова ӗҫрен кӑларасси пирки йышӑннӑ приказри 1-мӗшпе 4-мӗш пунктсем шута илме тивӗҫлӗ мар, 2-мӗшпе 3-мӗш пунктсене вӑйра хӑвармалла». Ку йышӑнушӑн президиумӑн 5 членӗ сасӑланӑ, пӗри тытӑнса тӑнӑ, тепри — лару председателӗ Д.О. Ивлев — приказӑн 3-мӗш пунктне урӑхлатма сӗннӗ: «Н.А. Резюкова Тӑван ҫӗршыва сутма чӗнекен ҫын пек — халӑх тӑшманӗ пек — хак памалла мар» тенӗ.

Суд хучӗсем хушшинче эксперт комиссийӗсен йышӑнӑвӗсем те упранаҫҫӗ. Тӳресем хушнипе Н.А. Резюков ӗҫӗ-хӗлне ятарласа тишкернӗ ҫынсем мӗнле пӗтӗмлетӳсем тунӑ-ха? Акӑ тӗслӗхрен,

В. Шелегов, Ю. Романова тата М. Сергеев экспертсен йышӑнӑвӗ (чӑвашла куҫарса тата кӗскетсе пичетлетпӗр):

1. *«Чӑваш орфографи словарӗн» материалӗсене И.С. Семенов хатӗрленӗ. Н.А. Резюков ал ҫырӑва пӑхса тухнӑ та (паллӑ тунисем пур) Чӑвашгиза панӑ. Титул листинче, тӗпчев институчӗн ячӗ айӗнче пӗр автор кӑна — Н.А. Резюков, И.С. Семеновӑн ятне асӑнман. Институт директорӗ И.Я. Яковлев ал ҫырӑва тӳрлетсе якатма каялла ыйтса илнӗ. Словаре вара комисси юсаса йӗркене кӗртнӗ, ун йышӗнче М. Сироткин, С. Горский, М. Сергеев пулнӑ. Вӗсем ал ҫырӑва палӑрмаллах улӑштарнӑ, хӑш-пӗр страницӑсене тӗпренех ҫӗнетнӗ.*

2. *«Чӑваш орфографийӗн тӗп правилисен проектне» (1938 ҫулхи ака уйӑхӗн 30-мӗшӗнче «Красная Чувашия» тата «Чӑваш коммуни» хаҫатсенче пичетленнӗ) Н.А. Резюков хатӗрленӗ. Йышӑннӑ сӑмахсене тӗрӗс ҫырассине палӑртакан пая шута илмесен, ку проект 1933 ҫулта пичетленнӗ орфографи правилисенчен питех улшӑнса тӑмасть (пысӑках мар улшӑнусемпе хушӑмсем кӑна пур). Проекта вырӑнта сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн, директор сӗннипе, ал ҫырӑва тӳрлетӳсем кӗртнӗ. Кайран ӑна Мускаврa, Чӗлхепе ҫырулӑх институтӗнче, тата ятарлӑ комисси ларӑвӗнче пӑхса тухнӑ, 1938 ҫулхи раштавӑн 11-мӗшӗнче ЧАССР Аслӑ Совечӗ ҫирӗплетнӗ.*

3. *Н.А. Резюков Ашмарин словарӗн XVI кӑларӑмӗ валли 22,5—23,5 автор листилӗх тата XVII кӑларӑмӗ валли пӗр автор листилӗх карточкӑсем майлаштарнӑ: алфавит йӗркине, сӑмахсен йӑвине тата пӗлтерӗшсене тӗпе хурса вырнаҫтарса тухнӑ. Хӑш-пӗр карточкӑсене авторӗ хыҫҫӑн улшӑнусем кӗртмен, кирлӗ пек тӳрлетмен. XVI том ал ҫырӑвне 234 страница таран (9—10 авт. л.) редакциленӗ, анчах ӗҫе вӗҫне ҫитермен — чылай сӑмахӑн пӗлтерӗшне кӑтартман»*[35].

Суд материалӗсем хушшинче тата тепӗр эксперт комиссийӗн акчӗ упранать. 1939 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 11—22-мӗшӗсенче тӗпчев институчӗн сотрудникӗ С.П. Горский, ЧАССР Ҫутӗҫ наркомачӗн ӑслӑлӑх сотрудникӗ А.С. Отачкин тата пединститут преподавателӗ М.С. Сергеев «Краткий русско-чувашский словарь» ал ҫырӑвне (1938) тишкерсе тухнӑ та ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳсем тунӑ (чӑвашлатса тата кӗскетсе пичетлетпӗр):

1. *Сӑмах кӗнекин хуплашки ҫинче «Н.А. Резюковпа В.Г. Егоров хатӗрленӗ, Н.А. Резюков редакциленӗ» тесе палӑртнӑ. Ҫав словарӗн «К» таранхи (Н.А. Резюковӑн шутланакан) пайне В.Г. Егоровӑн*

*пысăк калăпăшлă «Вырăсла-чăвашла словарĕпе» танлаштарни çакна кăтартать: пысăк словарĕн текстне чылай чухне ним улăштармасăрах илнĕ. Хăш-пĕр улшăнусем вăл е ку сăмахăн ăнлантарăвне кăштах кĕскетнипе кăна сыхăннă.*

2. *«Вырăсла-чăвашла кĕске словарĕн» II пайĕ пирки А.С. Львов çырнă рецензи пур* (кун пирки эпир маларах тĕплĕн каланăччĕ. — *Г.Д.*). *Çав хаклав чăнлăхпа тӳр килет, унпа эксперт комиссийĕ килĕшет. Рецензире асăннă çитменлĕхсем словарĕн пĕрремĕш пайĕшĕн те курăмлă:*

а) *чылай сăмаха тĕрĕс мар куçарса ăнлантарнă;*

ă) *политика терминĕсене çителĕксĕр кĕртнĕ, словарьте «ВКП(б)», «диалектика», «Апрельские тезисы Ленина» т. ыт. те çук;*

б) *сăмахсене ăнлантарнинче принциплăх çитмест;*

в) *инфинитив форминчи вырăс глаголĕсем хыççăн чăваш глаголĕсене хушу форминче панă: «изменить — улăштар, урăх майлă ту, тăшман майлă ĕçле, тăшмана сутăн»..., çакă юрăхсăр тата политика тĕлĕшĕнчен килĕшӳсĕр ăнлантарусен йышне ӳстерет»*[36].

«Суд ĕçĕ такана çинчи шыв пекех» тесе халăхра ахальтен каламан: пĕринче тӳресен йышăнăвĕ Н.А. Резюков майлă пулнă, тепринче — институт директорне юравлă. Çавăнпа тавăçсене тĕпчев институчĕ те, Николай Андреевич та пуçарнă. 1939—1941 çулсенче çак ĕçе хула, республика, Раççей шайĕнчи суд органĕсем темиçе хутчен те пăхса тухнă. Хускатнă ыйтусем те вăл хушăра урăхланнă, институт директорĕсем те улшăнма ĕлкĕрнĕ (И.Я. Яковлев хыççăн пуçлăх тивĕçне М.Я. Сироткин пурнăçланă, унтан ку вырăна П.Г. Григорьев ларнă). Институт пуçлăхĕсемпе чĕлхеçĕ хушшинчи тавлă ыйтусем татăлса пĕтмен...

## Вĕрентӳпе кĕрешӳ çулĕсем

Тĕпчев институтĕнчен кăларса янă хыççăн Н.А. Резюков Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ураковăри тулли мар вăтам шкула вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме кĕрĕшнĕ. Çур çул ытларах иртсен, 1939 çулхи авăн уйăхĕнче, Шупашкара таврăнса Чăваш патшалăх педагогика институтне ĕçе вырнаçма май килнĕ (Николай Андреевич хăй каярах каланă тăрăх, ăна тӳрре тухма «Правда» хаçата янă çыру пулăшнă). Икĕ çул хушши вăл чĕлхепе литература факультечĕн декан çумĕ, чăваш чĕлхипе литература кафедрин ертӳçи пулса ĕçленĕ. 1941 çулта ку вырăна филологи

наукисен кандидатне С.П. Горские лартнӑ, Н.А. Резюков вара пединститут директорӗн куҫӑн мар вӗрентӳпе ӗҫлекен ҫумӗ пулса тӑнӑ.

1942 ҫулхи юпа уйӑхӗн 5-мӗшӗнче Николай Андреевичӑн вӑрҫа кайма черет ҫитет. Вӑл Сталинград, Кӑнтӑр, 4-мӗш Украина, 3-мӗш Балтика ҫум, 3-мӗш Белоруссии фрончӗсен йышӗсенче ҫапӑҫава хутшӑннӑ, полк штабӗн аслӑ ҫыруҫи (ҫыруҫӑ-старшина) тата дивизи артснабженийӗн хут ӗҫ тӑваканӗ пулса тӑрмашнӑ. 1944 ҫулхи пуш уйӑхӗнче коммунистсен партине кӗнӗ. Ӑна «Сталинграда хӳтӗленӗшӗн», «Кенигсберга илнӗшӗн», «Германие ҫӗнтернӗшӗн» тата «Тӑван ҫӗршывӑн 1941–1945 ҫҫ. Аслӑ вӑрҫи вӑхӑтӗнче хастар ӗҫленӗшӗн» медальсемпе чысланӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Н.А. Резюков Чӑваш патшалӑх педагогика институтне таврӑннӑ, чӑваш чӗлхипе литература кафедрин аслӑ преподавателӗ пулса ӗҫленӗ. Хӗрӗхмӗш ҫулсем Николай Андреевичшӑн ҫӑмӑл пулман, кил-йышӗ ҫухату хыҫҫӑн ҫухату тӳснӗ: ӑнӑҫсӑр операци хыҫҫӑн ашшӗ ҫӗре кӗнӗ, каярах амӑшӗ пурнӑҫран уйрӑлса кайнӑ, сакӑр ҫулхи ывӑлӗ сарӑмсӑр вилнӗ – ҫакӑ чӗлхеҫӗн ҫирӗпех мар сывлӑхне пушшех сарӑпланӑ. Ҫапах та вӑл тухӑҫлӑн ӗҫлеме хал тупнӑ. Студентсене вӗрентнисӗр пуҫне пуҫламӑш шкулӑн 4-мӗш класӗ валли учебник калӑпланӑ (I кӑларӑмӗ 1948 ҫулта пичетрен тухнӑ), «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекин» юлашки томне пичете хатӗрленӗ. Командировкӑсене ҫӳреме те ӗлкӗрнӗ. Тӗслӗхрен, 1950 ҫулхи ҫуркунне Белоруссии патшалӑх университетӗнче пулнӑ, пӗтӗмӗшле чӗлхе пӗлӗвӗпе вырӑс чӗлхи кафедрин йышне чӑваш чӗлхи вӗрентнӗ (документ тӑрӑх, 70 лекци сехечӗ ирттернӗ).

1952 ҫулхи чӳк уйӑхӗнче, пединститутра штата чакарнине пула, Николай Андреевичӑн Канашри Учительсен институтне куҫма тивет. Тепӗр икӗ ҫултан вӑл чӑваш чӗлхе пӗлӗвне кӑсӑклӑ ҫӗнӗлӗхпе пуянлатать – «Очерк сравнительной грамматики русского и чувашского языков» кӗнеке пичетрен тухать.

1954 ҫулхи юпа уйӑхӗнче Учительсен институчӗн канашӗ Николай Резюков аслӑ преподавателе диссертаци хӳтӗлемесӗрех тата ятарлӑ экзаменсем памасӑрах филологи ӑслӑхӗсен кандидачӗн степеньне тата доцент ятне пама Аслӑ аттестаци комиссийӗ умӗнче ыйту хускатать. Истори наукисен докторӗ Н.В. Никольский профессор, Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчи вырӑс чӗлхи кафедрин пуҫлӑхӗ М.М. Михайлов Николай Анд-

реевичăн ĕçĕ-хĕлĕ пирки ырă хаклавсем çырса параççĕ. Анчах ВАК вĕсен сĕнĕвĕсене шута хумасть, ыйтăва тивĕçтермест.

1954–1955 вĕренӳ çулĕ хыççăн Канашри Учительсен институтне пĕтереççĕ. Н.А. Резюков çулталăк ытларах Шупашкарти 6-мĕш шкулта ĕçлет, 1956 çулхи юпа уйăхĕнче музыка училищинче вĕрентме пуçлать. Çав вăхăтрах Чăваш учительсен пĕлĕвне ӳстерекен института вырнаçать: малтан чăваш чĕлхипе литературин методисчĕ пулса тăрăшать, унтан (1957 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче) ăна вырăс тата чăваш чĕлхипе литературин кабинетне ертсе пыма хушаççĕ. Çак тапхăрта Николай Андреевичăн чи курăмлă тĕпчевĕсем пичетрен тухаççĕ: «К вопросу о сложноподчиненных предложениях в чувашском языке» ăслăлăх статйи (1956) тата «Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков» кĕнеки (1959). Вăл «Чăваш чĕлхине вĕрентекен учительсен опытĕнчен» (1956) тата «В помощь учителю русского языка и литературы» (1959) ятлă статья пуххисем хатĕрлесе редакцилет, вăтам шкул тата аслă шкул валли чăваш чĕлхи тата танлаштаруллă грамматика программисене калăплать.

Н.А. Резюков Чăваш наука тĕпчев институчĕпе те çыхăну çухатман. 1958 çулхи раштав уйăхĕнче ЧНТИ чĕлхеçе, утмăл çул тултарнă май, ЧАССР Аслă Совет Президиумĕн Хисеп грамотине илме тăратнă[37].

**Ашмарин эткерĕпе çыхăннă пăтăрмахсем**

1939 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Н.И. Ашмарин словарьне пичете хатĕрлес ĕçе А.Л. Лукин туса пынă. Авăнăн 29-мĕшĕнче Чăваш наука тĕпчев институчĕн чĕлхе уйрăмне А.И. Иванова илнĕ. Вăл «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» XV кăларăмне редакциленĕ.

Вăрçă-харçăллă 1941-мĕшĕнче, виçĕ çуллăха тăсăлнă тăхтав хыççăн, Ашмарин словарĕн икĕ кăларăмĕ умлă-хыçлă кун курнă. XV тома авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче пичете янă, XVI тома вара маларах – çу уйăхĕнчех – хатĕрлесе çитернĕ, унăн яваплă редакторĕ М.Я. Сироткин пулнă. Синкерлĕ вăрçа пула «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» юлашки томне калăпласа кăларасси чылайлăха чарăнса ларнă.

Ашмарин словарĕн тулли пуххине вулакан патне çитерес ыйту вăрçă хыççăн каллех кун йĕркине таврăнать. 1945 çулта А.И. Иванов словарь кăтартмăшне – кĕскетӳсен списокне –

хатӗрлет. 1946 ҫулта XVII томӑн А.Л. Лукин калӑпланӑ ал ҫырӑвне пӑхса тухаҫҫӗ. Н.А. Резюков ӑна тиркевлӗ хак парать, йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсене чылай кӑтартать[38]. Ӗҫе вӗҫлеме, ал ҫырӑва йӳнеҫӳллӗ хатӗрлесе ҫитерме 1947 ҫулта ӑна хушаҫҫӗ.

Николай Андреевич хӑйӗн вӗрентекенӗн, словарь авторӗн халалне асра тытнӑ: «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки (Thesaurus linguae tschuwaschorum)» – ахаль словарь кӑна мар, чӑвашӑн пурнӑҫӗпе тӗнче курӑмӗн энциклопедийӗ. Ҫавӑнпа та вӑл Н.И. Ашмарин пухнӑ пурлӑха словаре туллинрех кӗртме тӑрӑшнӑ. Анчах хӑй шутланӑ пек тума Н.А. Резюкова ҫӑмӑл пулман. Ҫакна архивра упранакан документсем ҫирӗплетеҫҫӗ. Тӗслӗхрен, 1949 ҫулхи ака уйӑхӗн 25-мӗшӗнче наука тӗпчев институчӗн директорӗ П.Г. Григорьев приказра ҫапла палӑртнӑ: «Н.А. Резюков юлташ» хӑйӗн тивӗҫӗсене юрӑхлӑ пурнӑҫлаймасть, словаре хальхи самана ыйтнӑ пек редакцилемест. Директор ӑна темиҫе те асӑрхаттарнӑ: агрономи ӑслӑлӑхне хирӗҫлекен, чӑвашсен авалхи тӗн-тӗшмӗшне ырлакан т. ыт. ҫавӑн пек тӗслӗхсене катертме хушнӑ. Анчах лешӗ ҫакна шута илмен – «пачах тӗрӗс мар», «кирлӗ мар» тӗслӗхсене словаре кӗртнӗ:

*Вилнӗ ҫын юрри: сирӗн патра пӗр уйӑх та пӗр хӗвел, итту ҫавах ҫути пур; пирӗн патра ҫичӗ уйӑх та ҫичӗ хӗвел, итту ҫавах ҫути ҫук.*

*Хӗвел аннӑ вӑхӑтра Турӑ телей валеҫет теҫҫӗ, ҫывӑрма хушмаҫҫӗ; ҫывӑрсан телейсӗр пулатӑн теҫҫӗ.*

*Хӗвелсӗр, пӗлӗтлӗ ҫанталӑкра юр кайсан, тырӑ хылчӑклӑ пулмасть* т. ыт. те.

Шел, ытлашши асӑрхануллӑ пуҫлӑхсем ҫавӑн пек илемлӗ тӗслӗхсене чылай путлантарнӑ, вӗсем словарь кӑларӑмӗсен тулашне юлнӑ. Н.А. Резюков вара ку хутӗнче хӑй йӗрне ҫирӗпрех тытса пынӑ пулас. 1949 ҫулхи авӑнӑн 8-мӗшӗнче институт директорӗ яваплӑ редактора каллех асӑрхаттарать: сӑмахсен ӑнлантарӑвӗсене кӗскетме хушнине шута илмен, *Хӗртсурт* пирки 5 страница ҫырса тултарнӑ, *Хӗрлӗ ҫыра* пуҫ ҫапнине сӑнлакан тӗслӗхсене тӳрлетмен. Хушу вӗҫӗнче директор Николай Андреевича ҫапла хӑратса илет: каланӑ пек тумасан, вӑхӑтра юсамасан, ҫӗнӗ набор хакӗсене редакторӑн хӑйӗн саплаштарма тивет.

Кун хыҫҫӑн та Н.А. Резюков «кивелнӗ тӗслӗхсене» словарьтен кӑларма килӗшмест. Вара директор коллективран пулӑшу ыйтать – наука тӗпчев институтӗнче ӗҫлекенсен ларӑвне

ирттерет. Иртнĕ ĕмĕрти хĕрĕхмĕш çулсен вĕçĕ 30-мĕшсен пĕтмĕшĕнчи пекех урăм-сурăм пулман-тăр (тен, ку П.Г. Григорьев директорăн ĕç стилĕнчен килнĕ), ăсчахсем «ăнланусăр» редактора пĕр кăмăллăн сивлеме васкаман. Чăн та, ăслăлăх çыруçи В.В. Чебухов тĕн терминĕсемпе çыхăннă текста кĕскетессине ырлать, Н.Р. Романов та ун майлă: «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» — ăнлантару словарĕ, этнографи монографийĕ мар, çавăнпа *Хĕртсурт* словарь статйине 3 страница чухлĕ кĕскетмелле. В.Д. Димитриев асăрханулла: пĕр евĕрлĕ тата пĕлтерĕшлех мар тĕслĕхсене çеç кăларма сĕнет. Филологи ăсчахĕсем А.И. Васильев, Н.Ф. Данилов, М.Я. Сироткин, Р.И. Цаплина вара Ашмарин профессор пухнă мула вулакан патне тулли çитерме ыйтаççĕ, иккĕмĕш хут тĕл пулакан тĕслĕхсене çеç катертме сĕнеççĕ.

1950 çулта «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин 17-мĕш томĕ аранах кун çути курать, ку кăларăма Чăваш Республики 30 çул тултарнине халалласçĕ. Юлашки кăларăм «Хыç сăмахпа» тата словарьти кĕскетӳсен тупсăмĕпе вĕçленет. «Хыç сăмах» текен пайăн та историйĕ вăрăм. Вăрçă умĕн ăна çырма А.И. Иванов чĕлхеçе шăпа тухнă. Тăрăшулла та çураçулла Алексей Иванович ĕçе йӳнеçӳллĕ пурнăçлас тесе чылай тăрăшнă: «Хыç сăмаха» апла та, капла та хатĕрлесе пăхнă, 4 вариант сĕннĕ:

1) «Словарь чувашского языка» ятлă пысăк ал çыру (198 с.);

2) вăта калăплисем: 38 тата 30 страницăллисем;

3) кĕске вариант (5 с.)[39].

Тĕрлĕ сăлтавсене пула вĕсенчен пĕри те Ашмарин словарĕн юлашки томне кĕреймен, Н.А. Резюков вăрçă хыççăн хайланă вариант пичетленнĕ (çапах та унта А.И. Иванов ал çырăвĕсен витĕмĕ сисĕнет).

Архивра ку «Хыç сăмах» пирки Н.Р. Романовпа В.Д. Димитриевăн тиркевлĕ хаклавĕ упранать (ăна вĕсем словарь пичетленсе тухсан тин çырнă пулас). Асăннă ăсчахсем Чăваш наука тĕпчев институчĕн директорне П.Г. Григорьева адресланă ĕçлĕ çырура çакăн пек асăрхаттарусем тунă:

1. Архивра Н.И. Ашмаринăн «Мое жизнеописание» ятлă автобиографи ал çырăвĕ пур. Н.А. Резюков çавăнти хăш-пĕр пайсене «Хыç сăмаха» кĕртсе лартнă, анчах кавычкăламан тата ăçтан илнине кăтартман.

2. Çав пайсене кăшт-кашт улăштаранçи тунă, анчах та улăштарнисем тепĕр чухне Н.И. Ашмарин шухăшне пăсаççĕ çеç.

Николай Иванович хӑй аслашшӗ пирки «Владимир кӗпӗрнинчен тухнӑ хресчен» тенӗ пулнӑ, Н.А. Резюков вара «Ярославль кӗпӗрнинчен» тесе пӑснӑ.

3. Кӑларӑм редакторӗ кӗскетӳсен тупсӑмне хатӗрленӗ чухне хӑй вӑхӑтӗнче А.И. Иванов ҫырнӑ кӑтарткӑҫпа (указательпе) усӑ курнӑ тата йӑнӑшсем янӑ:

а) *Бай.*, *Байг.* текен кӗскетӳсем Ҫӗрпӳ районӗнчи Старак (Байгеево) ялне пӗлтермеҫҫӗ, хальхи Елчӗк районне кӗрекен Кивӗ Эйпеҫ (Байглычево) ялне палӑртаҫҫӗ;

ӑ) *П. Сормово*, *Пизин. Сорм.* тенисем Элӗк районӗнчи Пиҫенерпе мар, Писӗп ялӗпе тӳр килеҫҫӗ;

б) *Чув. Сормы* тенине Ашмарин словарӗнче «Чувашская Сорма» тесе мар, «Чувашский Сарыкамыш» (Тутар Республикинчи Пӑва р-нӗ) тесе вӑрӑмлатмалла т. ыт. те[40].

Н.И. Ашмарин тӗпчевӗсен пӗлтерӗшне ӑнланакан, вӗсене пичетлесе кӑларма вӑй хуракан ҫынсем чӑваш интеллигенцийӗ хушшинче яланах пулнӑ. Тӗслӗхрен, наука тӗпчев институчӗн дирекцийӗ 1936 ҫултах Николай Ивановичӑн икӗ пайран тӑракан «Опыт исследования чувашского синтаксиса» монографине (1903, 1923) кӗскетсе-ҫӗнетсе, автор палӑртнӑ тӳрлетӳсене тӗпе хурса, тепӗр хут пичетлесе кӑларма палӑртнӑ. Тӗпчевӗн 2-мӗш пайӗпе А.И. Иванов ӗҫленӗ, 1-мӗш пайне хатӗрлеме Н.А. Резюкова хушнӑ. Анчах ун чухне ку проект пурнӑҫа кӗреймен, тӗрлӗ сӑлтавсене пула килӗшӗве пӑрахӑҫланӑ[41].

1957 ҫулта ЧАССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи Наука тӗпчев институчӗ Н.И. Ашмарин профессорӑн ҫырнисен пуххине кӑларма шут тунӑ. Малтан 4 том пирки калаҫу пулнӑ, кайран тӗпчевсене 3 кӗнекене шӑнӑҫтарма йышӑннӑ (хаҫат урлӑ подписка та йӗркеленӗ)[42]. Ҫав ҫулах пӗрремӗш кӗнекене хатӗрлеме Н.А. Резюковпа килӗшӳ тӑваҫҫӗ: ум сӑмах (2 автор листи) тата Ашмарин ӗҫӗсемпе ӑнлантарусен пайӗ (25 а. л.). 1958 ҫулхи кӑрлачра II том пирки те унпах килӗшсе татӑлаҫҫӗ. Авӑн уйӑхӗнче Николай Андреевич тӗпчев институтне I том ал ҫырӑвне ҫитерет. Унта Н.И. Ашмаринӑн икӗ тӗпчевӗ кӗнӗ: «Материалы для исследования чувашского языка» тата «Заметки по грамматике чувашского языка». Анчах та редколлеги Н.А. Резюков хатӗрленӗ ӗҫе ку хальлӗн пичете юрӑхсӑр тесе йышӑннӑ. 1959 ҫулхи ҫӗртмере II тома та ҫаплах хакланӑ.

Унтан ҫулталӑк ытла ҫав кӗнекесен ал ҫырӑвӗсемпе И.А. Андреев ӗҫленӗ, Н.А. Резюковӑн ум сӑмахне Гордлевский статйипе[43]

улăштарнă. Н.И. Ашмарин çырнисен пуххи Чăвашгизра тухмалла пулнă: I томĕ 1960 çулта, иккĕмĕшĕ – 1961-мĕшĕнче. Анчах çĕршыври пичет политики улшăннă пирки (наука ĕçĕсене кун пек издательствăсенче кăларма чарнă) РСФСР культура министрĕ вĕсене приказпах планран кăларнă. Çакăн хыççăн паллă профессорăн çырнисен пуххине СССР Ăслăлăх академийĕ урлă кăларма палăртнă, плана та кĕртнĕ (1963). Анчах та тĕрлĕ сăлтавсене пула унта та ĕç-пуç ăнăçлă вĕçленмен[44]. Шел, Н.И. Ашмаринăн паха тĕпчевĕсем вулакан патне çитеймен...

**Чĕлхеçĕн юлашки каçалăкĕ**

Николай Андреевичăн кил-йышĕ пысăк пулнă, тапхăр-тапхăр йывăра лекнĕ тăванĕсене те пулăшма тивнĕ. Çакă та хистенĕ пуль – вăл ĕмĕр тăршшĕпех харăсах темиçе ĕç туса пыма тăрăшнă. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» хĕрсе ĕçленĕ çулсенче те вĕрентме çӳренĕ: Чăваш ял хуçалăх институтне (1933–1936), Чăваш облпрофсоветăн профсоюз шкулне (1936–1937), Чăваш коммунизмла ял хуçалăх аслă шкулне (1937–1938).

60-мĕш çулсен малтанхи çурринче те Н.А. Резюков пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ палăрнă. 1961-мĕшĕнче Ют çĕршыв тата наци словарĕсен патшалăх издательстви 26 пин сăмахлă «Чăвашла-вырăсла словарь» пичетлесе кăларнă. Ун авторĕсен йышĕнче Николай Андреевич та пулнă, вăл хăй пĕччен С, Ç, Э, Ю пайсене хатĕрленĕ, Н.П. Петровпа пĕрле К тата Х сас паллисемпе пуçланакан сăмахсене куçарса панă. 60-мĕш çулсен варринче Н.А. Резюков чăваш чĕлхи вĕренмелли кĕнекесем иккĕ тан ăсталанă: 3-мĕш класс валли (Г.В. Лукояновпа пĕрле) тата 4-мĕш класс валли (А.П. Кокоревăпа пĕрле). Çав вăхăтрах вак-тĕвек ĕçсем те пулнă: ЧАССР писательсен союзĕ ыйтнипе йĕркепĕрлĕхсем хатĕрленĕ (тĕслĕхрен, Василий Алентей хайлавĕсене 5 автор листине яхăн куçарса панă).

Утмăлмĕш çулсен вĕçнелле Николай Андреевичăн сахалрах та сахалрах ĕçлеме тивнĕ – сывлăхĕ май паман.

1968 çулуншăн черетлĕ çулталăк кăна пулман, вăл чĕлхеçе тек-текех иртнине асилтернĕ: çуралнăранпа – 70 çул, педагогика ĕçне хутшăнма пуçлани – çур ĕмĕр. Хĕрĕх çул каялла Н.И. Ашмаринпа пĕрле словарь калăплама пуçланă, Шупашкара куçса килни 35 çул çитет...

Хĕллехи пĕр еверлĕ кунсене Николай Андреевич килтех ирттернĕ, урама та тухсах çӳремен: сывлăш пӳлĕннипе аптăранă.

Тус-тăванĕ патне çыру сăрмакласа тата кун кĕнекипе кăшт аппаланса йăпанăç тупнă. Çав хутсенчен пĕр пайĕ халь Чăваш патшалăх гуманитари ăслăхĕсен институчĕн наука архивĕнче упранать. Çитмĕле пуснă Н.А. Резюков мĕн шухăшланине çавсенчен пĕлме пулать.

Пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнче вăл хăйĕн юлташĕ патне çапла çырать (пурне те вырăсларан куçарса пичетлетпĕр): *«Акă манăн пурнăç кĕрĕ çитрĕ... Кăçал çитмĕл тултаратăп. Кам та пулин çакна аса илет тетĕр-и Эсир? Çук, çывăх çынсемсĕр пуçне никам та асилмест»*[45].

Çав уйăхăн 25-мĕш кунĕнче тăванне çакăн пек çырса пĕлтерет: *«Акă çулсем сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕç, вĕсене ырăпа асăнмалли нимех те çук... Пурнăç пит пулăхлă пулаймарĕ. Эпĕ хам хыççăн палăрмаллах йĕр хăварасларччĕ, анчах хастарлăхăм та пурнăçăм çитмерĕ... Ытлашши йывăр çăк туртса пытăм, вăйăма кура мар...»*. Ачисене те юрăхлă пăхса ӳстерейменпек туйăнать ăна. Куншăн хăйне ӳпкелет, темиçе тапхăр (1938–1939, 1942–1945, 1952–1955) кил-йышран уйрăм пурăнма тивнине асилет.

Çырусенче çакăн пек каларăшсемпе усă курать: «Çăтмаха лекесчĕ те, çылăхсем ямаççĕ çав», «Ĕмĕтленни пысăк çылăхах мар-çке». Влаçра ларакансем пирки хăй мĕн шутланине уçăмлăн палăртать: «Эпĕ вĕсене хисеплемен те, хисеплессĕм те çук. Хăйсем те мана картман». Парти обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă С.М. Ислюкова та сăмах тивет: *«Мана мĕнле асап кăтартнине пăхса çеç ларчĕ, ... «репрессиленĕ çыннăн ачи» пулнине кăна астăватчĕ вăл ман пирки... Хăй вара ман аппан Елизавета Андреевнăн вĕренекенĕ пулнă»*[46]. Тӳре-шаран пархатарлăх туйăмĕ çуккишĕн пăшăрханни Н.А. Резюковăн ытти çырăвĕсенче те палăрать: *«Эпĕ хатĕрленĕ кĕнекесемпе 20 çул хушши çирĕмшер пин ача, пин-пин студент, чăвашпа вырăс учителĕсем усă курчĕç, çапах мана шута хумаççĕ»*.

Çу пуçламăшĕнче ватă чĕлхеçĕн кăмăлĕ улшăнать – сывлăш пӳлĕннине ирттерсе яракан витĕмлĕ эмел тупăнать. Халĕ ĕнтĕ вăл ачисемпе те кăмăллă: аслă ывăлĕ Глеб юхăннă совхоза çĕклеме пуçăннă, вăталăххи Евгений (инженер-металлург) заводра хисепре – ун çинчен «Молодой коммунист» хаçат очерк пичетленĕ, кĕçĕнни Александр «Орленок» лагере кайма тивĕç пулнă, хĕрĕ Татьяна пединститутри ют чĕлхесен факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

Хăйĕн 70 çулхи юбилейне малтан чĕлхеçĕ пысăк йышпа паллă тума шутламан, çывăх тус-йышпа кăна кăшт палăртма

тӗв тунӑ. Хӗл вӗҫӗнче Николай Андреевич ҫапла ҫырнӑ: «Ҫӑннипе вӑл – юбилей мар, авалхи туссемпе ҫӗр ҫинче юлашки хут тӗл пулни». Ҫапах та ӑна хисеп тӑвакансем сахал пулман, ватӑ чӗлхеҫе вӗсем пысӑк уяв туса панӑ: 1968 ҫулхи раштавӑн 4-мӗшӗнче (ҫуралнӑ кунӗ ҫитиччен кӑшт маларах) Н.А. Резюкова Учительсен пӗлӗвне ӳстерекен институтра халӑхпа пӗрле чысланӑ. Педагогика наукисен кандидачӗ Д. Филиппова Николай Андреевичӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тишкерсе тухнӑ, Чӑваш Республикин Ҫутӗҫ министерстви Хисеп хучӗ панӑ, саламлакансем йышлӑ пулнӑ: институт директорӗ Ф. Рекеев, педагогика наукисен докторӗ Г. Волков, Чӑваш халӑх поэчӗ П. Хусанкай, филологи наукисен кандидачӗ А. Канюкова, В. Ухли прозаик т. ыт[47].

Ҫавра ҫулне чыслӑн паллӑ туни ватӑ чӗлхеҫӗн кӑмӑлне ҫӗкленӗ, хавалне ӳстернӗ – ҫакӑ тус-тӑванӗ патне янӑ ҫырусенчен те курӑнать: «*Юбилей хыҫҫӑн хама чылай лайӑхрах туйма пуҫларӑм... Пурнӑҫ вӗҫленменнине ӗненме тытӑнтӑм... Ҫитмӗл хыҫҫӑнхи ҫулсем – шӑпа парни, вӗсем малтанхисенчен те пахарах... Эпӗ юлашки вӑй юлмиччен, ҫӗре кӗриччен ӗҫлеме хатӗр: ҫынсем манран паттӑрлӑх кӗтеҫҫӗ*»[48]. Н.А. Резюков тахҫанах палӑртса хунӑ шухӑшне пурнӑҫа кӗртесшӗн пулнӑ – Ашмарин ҫинчен, наци культурин аталанӑвӗ пирки асаилӳ ҫырса хӑварма авӑрланнӑ. Анчах шелсӗр вилӗм Николай Андреевичӑн ӗмӗт-шухӑшне татнӑ, 1969 ҫулхи юпа уйӑхӗн 28-мӗш кунӗнче чӗлхеҫӗ чӗри тапма чарӑннӑ...

Малтанхи ҫулне, ҫӗртме уйӑхӗн 7-мӗшӗнче Н.А. Резюков кун кӗнекинче ҫапла ҫырса хӑварнӑ: «Внуки ... относятся ко мне, как к деду, хорошо, и я стараюсь оставить в их памяти только хорошее: они ведь дольше всех будут помнить обо мне». Эпир те ӑна асра тытар, пархатарлӑ пултарӑвне тивӗҫлӗ хак парар. Халӑх асӗнче юлмалӑх ырӑ ӗҫ чылай тума ӗлкӗрнӗ вӑл, наци культурине хӑй тӳпине хывнӑ.

### Асӑрхаттарусем

[1] Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн наука архивӗ (ЧПГӐИ НА). I уйр. 317 т. 77 с.

[2] *Гаген-Торн Н.* Женская одежда народов Поволжья (материалы к этногенезу). Чебоксары. 1960. С. 200.

[3] Канаш. 1927. Ҫӗртмен 29-мӗшӗ.

[4] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 371 т. 739 №. 1 л.

[5] Çавăнтах. 3 л.

[6] Первый всечувашский краеведческий съезд (15–21.06.1928, Чебоксары). Тезисы докладов и резолюций. Чебоксары: Издание О-ва изучения Чув. края, 1929. С. 24.

[7] Çавăнтах. 19 с., 90 с.

[8] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 46 упр. ед. 36 л.

[9] Çавăнтах. 84 л.

[10] ЧПГĂИ НА. I уйр. 317 т. 75 с.

[11] ЧПГĂИ НА. I уйр. 806 т. 85–86 л.; IV уйр. 371 т. 737 №.

[12] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 46 упр. ед. 97–100 л.

[13] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 146 упр. ед. 62 л.

[14] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 149 упр. ед. 6–7 л.

[15] Çавăнтах. 9 л.

[16] Ефимов И.Е. Научно-исследовательская работа в Чувашии. Чебоксары, 1933. С. 45.

[17] Чăваш Республикин патшалăх истори архивĕ (ЧР ПИА). 1515 ф. 1 оп. 87 ĕç. 49 л.

[18] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 96 упр. ед. 170 №. 2 л.

[19] ЧР ПИА. 1515 ф. 1 оп. 33 ĕç. 27 л.

[20] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 68 упр. ед. 125 №. 13 л.

[21] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 96 упр. ед. 170 №. 1–2 л.

[22] Чăваш наука тĕпчев институчĕн приказсен кĕнеки (Чăваш патшалăх гуманитари ăслăхĕсен институтĕнче упранать). 1934 çул. Юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ.

[23] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 453 упр. ед. 1 л.

[24] Çавăнтах. 2–3 л.

[25] Чăваш наука тĕпчев институчĕн приказсен кĕнеки. 1935 çул. Пуш уйăхĕн 23-мĕшĕ.

[26] Çавăнтах. 1937 çул. Кăрлачăн 17-мĕшĕ.

[27] ЧР ПИА. 1515 ф. 1 оп. 87 ĕç. 53 л.

[28] ЧР ПИА. 1515 ф. 1 оп. 83 ĕç. 15 – 22 л.

[29] Наука тĕпчев институчĕн приказсен кĕнеки. 1937 çул. Раштавăн 10-мĕшĕ (танл.: ЧПГĂИ НА. IV уйр. 371 упр. ед. 4 л.).

[30] Çавăнтах.

[31] ЧР ПИА. 1515 ф. 1 оп. 91 ĕç. 15 л.

[32] Наука тĕпчев институчĕн приказсен кĕнеки. 1938 çул. Чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕ.

[33] Н.А. Резюковпа çыхăннă суд хучĕсем (Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче ĕçлĕ хутсемпе пĕрле упранакан «Судебное дело на Резюкова Н.А.» ятлă папкăран илнĕ). 5–6 л.

[34] Çавăнтах. 34–37 л.

[35] Çавăнтах. 25–26 л.

[36] Çавăнтах. 54–59 л.

[37] ЧР ПИА. 1515 ф. 12 оп. 28 ĕç. 475 л.

[38] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 68 упр. ед. 12–14 л.

[39] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 22 упр. ед. 64 л.

[40] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 68 упр. ед. 2–4 л.

[41] ЧР ПИА. 1515 ф. 1 оп. 83 ĕç. 35 л.

[42] Советская Чувашия. 1958. 22 авг.

[43] *Гордлевский В.А.* Памяти Н.И. Ашмарина (К 85-летию со дня рождения) //Учен. зап. /ЧНИИ. Чебоксары, 1956. Вып. 14. С. 268—278.

[44] ЧПГĂИ НА. IV уйр. 442 упр. ед. 267 л.

[45] ЧПГĂИ НА. I уйр. 806 упр. ед. 19 л.

[46] Çавăнтах. 51 л., 56—57 л.

[47] Коммунизм ялавĕ. 1968. Раштавăн 8-мĕшĕ.

[48] ЧПГĂИ НА. I уйр. 806 упр. ед. 13 л., 46 л.

*В.А.Андреев, Е.В. Андреева*

# Н.А. РЕЗЮКОВ – ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ШАЙЛАШТАРУЛЛĂ ТĔПЧЕВĔСЕН НИКĔСНЕ ХЫВАКАНĔ

Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕнче çирĕпленнĕ шухăшпа килĕшӳллĕн, шайлаштаруллă тĕпчевсем *танлаштарупа истори меслечĕ* ятпа çӳрекен анлă ăнлавпа тачă çыхăнса тăраççĕ, *шайлаштару* (сопоставление) *танлаштару* (сравнение) меслечĕн пĕр тĕсĕ шутланать [1 : 481, 485–490]. Çавăнпа тепĕр чухне ятарлă ĕçсенче çак икĕ термина синонимсем вырăнне хурса усă курни те тĕл пулать. Анчах юлашки çулсенче *танлаштару* тата *шайлаштару* ăнлавсен содержанийĕ вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма хистекен сĕмсемпе чылай пуянланчĕ – шайлаштару, чĕлхе пĕлĕвĕн танлаштарулла тĕпчев меслечĕпе танах, хăйне тивĕçекен вырăнне тупрĕ.

XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа çĕнĕ вăй-хăватпа аталанма тытăннă типологи тĕпчевĕсем шайлаштару меслетне тата çӳллĕрех пусăма çĕклерĕç. Объекчĕ тĕлĕшĕнчен шайлаштару тата типологи тĕпчевĕсем хушшинче пысăк уйрăмлăхсем çук пулин те, вĕсем хăйсен умĕнче тăракан тĕп тĕллевĕпе тата задачисемпе пĕр-пĕринчен раснарах пулни курăнать. Шайлаштару тата типологи меслечĕ çĕр чăмăрĕ çинчи пур чĕлхене те, вĕсен генезис (хурăнташлăх) паллисене шута илмесĕрех, тухăçлă тĕпчеме май парать. Пĕр иккĕленмесĕрех çакнашкал пĕтĕмлетӳ тума май пур: хальхи вăхăтра шайлаштарулла тĕпчевсене пурнăçлама кирлĕ ĕçлевсемпе тĕп ăнлавсем çирĕпленсе çитнĕ, вĕсем çине таянса шайлаштарулла меслетпе кирек хăш чĕлхене те чи çӳллĕ шайра тĕпчеме пулать. Шайлаштарулла тĕпчевсен чи курăмлă хăй евĕрлĕхĕ вăл – харпăр чĕлхесене уйрăм система вырăнне хурса çав системăна йĕркелекен шайсене синхронлă шайра комплекслă çутатасси, пĕр чĕлхе системи тепринчен еплерех уйрăлса тăнине (контраст) тупса палăртасси. Çавăнпа шайлаштарулла тĕпчевсенче яланах чĕлхе шайĕсем (уровни языка) текен ăнлава куç умĕнче тытса

тăни кирлĕ. Чĕлхесен харпăр пайрăмĕсем çав чĕлхесен системинче çеç уçăмланаççĕ, тĕрĕсрех каласан – система тăвакан чĕлхе шайĕсенче. Тĕслĕхрен, *ă* тата *ĕ* сасăсем фонемăсем шутланма тивĕç пулнине чăваш чĕлхин фонологи шайĕ лайăх кăтартса парать, анчах çав сасăсемех вырăс чĕлхин фонемисем хушшинче ятарлă вырăн йышăнаймаççĕ, аллофонсем çеç пулаççĕ. Пирке, çуклăх тата пĕрлелĕх формисем ытти тĕрĕк чĕлхисенче е хыç сăмахсен шутне, е сăмах тăвакан аффикссен ретне кĕреççĕ пулсан, чăваш чĕлхин морфологи шайĕнче вĕсем падеж категорине йĕркелекен пайрăмсем пулни иккĕленӳсĕр. Анчах вырăс чĕлхинче пирке тата çуклăх пĕлтерĕшĕсене палăртмалли морфологи мелĕсем пачах урăхла, пĕрлелĕх пĕлтерĕшĕ çеç чăваш чĕлхинчи евĕрех – падеж аффиксĕсем урлă палăрать. Чĕлхе шайĕсем хушшинче тĕл пулакан çакнашкал контрастсене чĕлхе пĕлĕвĕнче *диафон* (фонологи уйрăмлăхĕсем), *диаморф* (морфологи уйрăмлăхĕсем), *диатакс* (синтаксис уйрăмлăхĕсем), *диалекс* (лексикологи уйрăмлăхĕсем), *диасема* (семасиологи уйрăмлăхĕсем) теме йышăннă [1 : 481].

Маларах каланисене шута илсен, хальхи вăхăтра *танлаштару* ăнлавпа юнашар *шайлаштару* термина «ĕçлеттерни» вырăнлă пек туйăнать: пĕр енчен – вĕсен тĕпчев объекчĕсем, тĕллевĕ тата задачисем тĕрлĕрен пулнине кăтартма пулăшать, тепĕр енчен – *шайлаштару* термин хăех чĕлхесен шайĕсем хушшинчи уйрăмлăхсене тĕпчемеллине систерет.

Çакна палăртса хăварни кăсăклă: Н.А. Резюков чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхине шайлаштарса тĕпченĕ пĕрремĕш пысăк ĕçне «Очерки сравнительной грамматики русского и чувашского языков» (Чебоксары, 1954) ятпа пичетлесе кăларнă. Эппин, асăннă кĕнеке ятĕнче автор *танлаштару* (сравнение) анлă терминпа усă курать. Анчах çав кĕнекен анлăлатнă иккĕмĕш кăларăмĕнче Н.А. Резюков «танлаштару» вырăнне *шайлаштару* (сопоставление) терминпа усă курать. Ку, пирĕн шутпа, ăнсăртран мар. Вăл шăпах «танлаштарупа» «шайлаштару» ăнлавсен содержанийĕнчи уйрăмлăхсене шута хунă пулас, анчах кун пирки ятарлă ăнлантарса çырни унăн икĕ кĕнекинче те тĕл пулмасть. Тӳрех каламалла, Н.А. Резюковăн «Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков» (Чебоксары, 1959) ятлă кĕнекине вулакансем – уйрăмах вĕрентекенсемпе чĕлхе ăсчахĕсем – питĕ кăсăкланса, хапăл туса йышăннă. М.Р. Федотовăн «Советская Чувашия» (1960 ç. мартăн 26-мĕшĕ) хаçатра

тĕплĕ рецензийĕ çапăнса тухнă, унта вăл çак ĕçе пур енлĕн те тарăн тишкернĕ. Хăш-пĕр çитменлĕхсене тупса палăртнă пулин те, Н.А. Резюковăн ĕçĕ чăваш чĕлхи пĕлĕвĕпе вĕрентĕвĕшĕн çав тери усăллă пулнине палăртса хăварнă. Çакă пире асăннă кĕнекене тата тепĕр хут тишкерессинчен хăтарать. Эпир, пĕтĕмĕшле илсен, М.Р. Федотовăн шухăшĕсемпе тата асăрхаттарăвĕсемпе килĕшетпĕр. М.Р. Федотов каланă пĕр шухăша çеç пĕтĕмпех йышăнма пултараймастпăр. Рецензент шучĕпе, Н.А. Резюков ĕçĕ вĕрентӳ кĕнекисен ретĕнче тăрать имĕш. Авторĕ хăй те «Кӳртĕм» пайра, ĕçĕ пирки пĕтĕмĕшле ăнлантарнă чухне, çак шухăшах çирĕплетет темелле. Анчах пĕр вырăнта кăшт урăхларах çырни те пур: «Для правильного построения занятий по русскому языку учитель национальной школы должен знать курс сопоставительной грамматики во всех деталях и в систематическом изложении» [2 : 5]. Апла пулсан, кĕнеке авторĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене вĕрентӳ кĕнеки шайĕнче çеç мар, тата анлăрах курнă. Çак тезиса М.Р. Федотовăн рецензийĕ те çирĕплетет. Вăл асăрханă тăрăх, Н.А. Резюков хăйĕн ĕçĕнче чăваш чĕлхин морфологийĕшĕн çĕнĕлĕхсем те кĕртнĕ: вырăс чĕлхинчи вид категорине чăвашла аналитикăлла конструкцисемпе палăртнине, местоименисен шкул учебникĕсенче кăтартнă çичĕ ушкăнĕ çумне таврăну-сăпат местоименийĕсен ушкăнне хушма май пуррине, глаголăн вăхăт формисем улттă пулнине ĕнентерӳллĕ çырса кăтартнă. Çавăн пекех синтаксисри кăткăс ыйтусене çĕнĕлле пăхма сĕнни те тĕл пулать ку ĕçре. Паллах, кĕнеке авторĕ чăваш тата вырăс чĕлхисенчи тавлашуллă чылай ыйтăва çутатнă чухне маларах тухнă ĕçсем çине таяннă. Ку тĕлĕшпе уншăн Н.И. Ашмарин, В.Г. Егоров профессорсен шухăшĕсемпе теорийĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çапах та Н.А. Резюков хускатнă тема – вырăс тата чăваш чĕлхисене шайлаштарса тĕпчесси – чылай енчен çĕнĕ ĕç шутланнă. Çавăнпа Николай Андреевичăн çак ĕçне вырăсла-чăвашла шайлаштару грамматикин пĕрремĕш системăллă курсĕ тесе хакласан та йăнăш пулмĕ.

Чĕлхесене шайлаштаруллă тĕпчеме хистекен факторсенчен пĕри вăл – икĕ чĕлхепе калаçакан обществăсенче вĕрентӳ ĕçне ăнăçлă пурнăçласси, унпа çыхăннă теорипе практика ыйтăвĕсене татса парасси. Чăвашсене çутта кăларакан И.Я. Яковлев хăйĕн вĕрентӳ системине шăпах танлаштарупа шайлаштару мелĕсем çине таянса никĕсленĕ. «Первоначальный учебник русского языка для чуваш», «Первоначальные уроки русского языка», «Уроки

сравнительного изучения предметов» ятлă вĕрентӳ кĕнекисенче И.Я. Яковлев тата унăн вĕренекенĕсем асăннă мелсемпе питĕ тухăçлă усă курнă. Каярах та, чăвашсем хушшинче вĕренӳ ĕçĕ анлă сарăлнă тапхăрта, шайлаштару меслечĕсен пĕлтерĕшĕ чакмасть, ӳссе пырать.

Юлашкинчен çапла каласа хăварăпăр. Н.А. Резюковăн 1959 çулта кун çути курнă кĕнеки паянхи кунччен ку облаçра тунă пĕртен-пĕр системăллă курс пулса тăрать. Аслă шкулсенче филолог-студентсене «Чăваш тата вырăс чĕлхисен шайлаштару грамматики» ятлă дисциплинăна çулсерен вĕрентетпĕр пулин те, хальлĕхе унашкал ятарлă ĕçсем пичетленсе тухаймарĕç-ха пирĕн. Усăллă та пархатарлă ĕçе малалла аталантарни кирлех.

### Литература

1. Лингвистический энциклопедический словарь /Гл. ред. В.Н. Ярцева. М.: Сов. энциклопедия, 1990. – 685 с.

2. *Резюков Н.А.* Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков. Чебоксары, 1959. – 328 с.

*Г.Н. Семенова*

## Н.А. РЕЗЮКОВ – ШКУЛ КĔНЕКИСЕН АВТОРĔ

Шкул учебникĕ – вĕренӳ содержанийĕпе йĕркине палăртакан, вĕрентекенпе вĕренекенĕн ĕçне йĕркелекен тĕп хатĕр. Хальхи саманари тĕпчевçĕсем шутласа пăхнă тăрăх, шкул учебникĕн функцийĕсем хĕрĕхрен те иртсе каяççĕ иккен. Информаци (пĕлӳ çăлкуçĕ пулни) тата координаци (йĕркелӳ) тайăнĕсем пĕтĕм ăрури учебниксемшĕн тĕп функцисем шутланаççĕ.

Тăван чĕлхене вĕренмелли чи малтанхи кĕнекесем Тимухха Хĕветĕрĕпе Т.М. Матвеев хатĕрленĕ учебниксем пулнă. Чĕмпĕр хулинче 1919 çулта «Грамматика чувашского языка» ятпа пичетленсе тухнă пĕрремĕш учебника Н.И. Ашмаринăн «Материалы для исследования чувашского языка» тĕпчевне тĕпе хурса çырнă, васкамалла пулнипе кĕнекене вырăслах пичетлесе кăларнă.

Çакăн хыççăн чăваш чĕлхипе шкул учебникĕсем кăларасси çултан-çул вăй илсе, аталанса пынă. Ку ĕçре Н.А. Резюков тĕпчевçĕ-педагогăн кĕнекисем те тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Унăн учебникĕсемпе (вĕсене пуçламăш шкулăн виççĕмĕш тата тăваттăмĕш класĕсем валли хатĕрленĕ пулнă) ачасене çирĕм çул ытла (тĕпрен илсен, 60–70 çулсенче) тăван чĕлхене вĕрентнĕ. Вăл вĕсене пĕччен те, ытти авторсемпе пĕрле те хатĕрлесе кăларнă.

Акă унăн виççĕмĕш класс валли хатĕрленĕ учебникне (ăна Г.В. Лукояновпа пĕрле çырнă) алла тытса пăхар-ха. Вĕренӳ материалĕ çак комплекссене пĕрлештерсе тăрать: «II класра вĕреннине аса илесси», «Сăмах тытăмĕ», «Япала ячĕ», «Глагол». Теори материалне ăнлантарасси ытларах индукцилле шухăшлава пăхăнса йĕркеленет. Çĕнĕ материала сăнав-тишкерӳ çине таянса ăнлантарни вĕрентӳ ĕçĕ-хĕлĕнче курăмлăрах пулнине вырăссен паллă ăсчахĕ тата педагогĕ Ф.И. Буслаев «О преподавании отечественного языка» тĕпчевĕнче иртнĕ ĕмĕртех (асăннă кĕнеке 1844 çулта пичетленсе тухнă) пысăка хурса хакланă. Чĕлхене

вĕрентнĕ чухне сăнав-тĕпчев мелĕсемпе усă курса ĕçлени ачасен ăс-тăнне çивĕчлетме, чĕлхе шухăшлавне тата тавракурăмне аталантарма пулăшнине палăртнă.

Н.А. Резюков учебникра пĕтĕмлетĕвĕсене, определенисемпе правилăсене ăнланмалла, ансат чĕлхепе çырса кăтартнă, астуса юлмалли материала рамкăна илсе уйрăмлатнă, ытти ятарлă паллăсемпе те усă курнă. Вĕренекенсен пуплевне аталантарас тĕллевпе учебника çыхăнуллă текстсем кĕртсе панă, вĕсем хăнăхтару выранĕнче çӳреççĕ. Текстсен тематики анлă: 1) ĕçе юратма вĕрентекеннисем (Çамрăк ĕçченсем; Куузику; Пахча; Питомник; Усăллă ĕç; Тимуровецсем; Фермăра); 2) Тăван çĕршывпа, тăван тавралăхпа паллаштараканнисем (Пирĕн Шупашкар; Пирĕн ял; Чапай; Шуршăлта; Телей аллейи; Ирхи Атăл; Мускав); 3) çутçанталăка сăнлакан текстсем. Учебникра çавăн пекех сюжетлă картинăсем, ӳкерчĕксем тĕл пулаççĕ (Шупашкар урамĕ; Космонавтсем; Яланах хатĕр!). Паллах, курăмлăхпа усă курса хайланă сăнлавсемпе калавсем содержанийĕпе пуян, чĕлхипе сăнарлăрах пулаççĕ. Çакна учебник авторĕсем шута илнĕ.

Учебник усă курма меллĕ пулмалла, çав шутрах справка материалне те тĕрĕс вырнаçтармалла. Тишкерекен учебникра темăсем хыççăн «ыйтусемпе ĕçсем» панă, словаре кĕнеке вĕçне вырнаçтарнă, словарьте ытларах вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем тата çырма йывăр сăмахсем тĕл пулаççĕ. Тĕрлĕ йышши шрифтсемпе усă курни ачасене учебникри материалпа тĕрĕс тата тĕллевлĕ усă курма хăнăхтарать.

Н.А. Резюков хатĕрленĕ ытти учебниксене те çак йĕркепе тишкерсе тухма пулать. Пĕтĕмлетсе çакна каламалла: çав учебниксене пурнăç тата шкул ыйтăвĕсене тивĕçтерсе, шкул программисен принципĕсене тытса пырса хатĕрленĕ. Вĕсем меслетлĕх ăслăлăхĕн тĕп ыйтăвĕсем çине (ачасене мĕне вĕрентмелле? ачасене мĕнле вĕрентмелле?) тĕрĕс хурав тупма пулăшакан вĕренӳ пособийĕсем пулнă.

*И.Я. Тенюшев*

## НИКОЛАЙ РЕЗЮКОВ – КУÇАРУ ĂСТИ

Мана Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче 1951–1955 çулсенче вĕренме тиврĕ. Пĕр ырă кун тăлмачсен куржокне йĕркелесси, унăн ертӳçи Николай Андреевич Резюков ăсчах пуласси çинчен пĕлтерчĕç. Кружокăн пĕрремĕш занятийĕнче мана та чылаях сумлă чин пачĕç – кружок старости туса хучĕç. Унччен мана «Чăваш коммуни» хаçат валли темиçе статья вырăсларан чăвашла куçарса пама тивнĕччĕ, анчах куçару вăрттăнлăхĕсем çинчен ăс вĕрентсе каланине чи малтан Николай Андреевичран илтрĕм.

Вăлах – çамрăк тăлмачсене хăйсен çивĕчлĕхĕпе пултарулăхне тĕрĕслесе пăхма – йышпа пĕрле пĕр-пĕр кĕнеке куçарса кăларма сĕнчĕ. Хăех çав вăхăтра кăсăклантарнă кĕнеке ятне те каларĕ. Ку вăл тутар писателĕн Кави Гибятович Наджмин «Весенние ветры» («Язгы ёиллер») романĕ пулчĕ. Ку романшăн ăна иккĕмĕш степеньлĕ Сталинла преми панăччĕ. Чăваш кĕнеке издательствин ун чухнехи ертӳçисем – директорĕ И.Н. Никифоров (Янташ), тĕп редакторĕ П.Т. Золотов – эпир куçарас кĕнекене тематика планне кĕртме килĕшрĕç. Кĕнекене чăвашла куçарассипе тăлмачсен кружокĕн членĕсем Л.И. Илларионова, А.Е. Горшков, А.А. Галкин, З.П. Митта тата К.П. Прокопьева ĕçлерĕç. Кĕнекен чылай пайне мана куçарма тиврĕ. 1953 çулта «Çурхи çилсем» çапăнса тухсан, Кави Наджми Шупашкара килсе кайрĕ.

Тĕрĕссипе каласан, пире, çамрăк тăлмачсене, тутар писателĕн романне, пичете юрăхлă куçарса хатĕрлеме Н.А. Резюков пулăшрĕ, пĕтĕм ĕçе вăл ертсе пычĕ. Малтанах вăл роман сыпăкĕсен ячĕсене епле куçарнине тишкерӳллĕн пăхса тухрĕ.

– Кирек мĕн калăр та, буквализм пирĕншĕн пачах юрăхсăр. Сăмахран сăмах куçарнипе килĕшме çуках, – татăклăн каларĕ Николай Андреевич пире. Вăл сĕннипе романăн хăш-пĕр сыпăкĕсен ячĕсене улăштарма тиврĕ. Тĕслĕхрен, юлашки сыпăк вырăсла «Дыхание весны» ятлăччĕ, ăна пĕрисем «Çуркунне сывлăшĕ», теприсем «Çуркунне сывлать» е «Çуркунне шăрши»

ят пама сĕнчĕç. Николай Андреевич юлашки сĕнĕве кăмăлларĕ, ку сыпăк кĕнекере «Çуркунне шăрши» ятпа пичетленчĕ. Çапла майпа ку чăвашларах пулса тухрĕ. «Кая юлма юрамасть» ята «Тăхтама юрамасть» тесе тӳрлетрĕ пирĕн ертӳçĕ. Капла юсани те çамрăк тăлмачсене килĕшрĕ.

Тепĕр тĕслĕх. «Весенние ветры» кĕнекере çавăн пек сыпăк пур: «Откуда летят «Искры». Кунта большевиксен «Искры» хаçачĕ çинчен сăмах пырать. Ку сыпăк ятне кружок членĕ «Хĕмсем» ăçтан вĕçсе килеççĕ» тесе куçарас кăмăллăччĕ. Николай Андреевич вара хаçат ятне сыпăк текстĕнче те, унăн пуçелĕкĕнче те куçармасăр хăварма хушрĕ. Ку хушу та тĕрĕс пулчĕ темелле, мĕншĕн тесен хаçат вырăсла тухнă, эппин унăн ячĕ те вырăслах пулмалла.

Роман ятне те вăл урăхларах куçарасшăнччĕ. «Çурхи çилсем» мар, «Çурхи çил» тесе хăварасшăнччĕ. «Чăваш чĕлхи пĕрреллĕ хисепе ытларах килĕштерет. *Хура куççемлĕ хĕр* мар, *хура куçлă хĕр* тесе калать, *кăтра çӳççемлĕ* пикене мар, кăтра çӳçлине кăмăллать. Кунта та «Çурхи çил» пултăр», — тенĕччĕ. Шел, кĕнеке редакторĕпе Владимир Леонтьевич Цырульниковпа (Садайпа) иксĕмĕр ку сĕнӳпе килĕшмерĕмĕр, романта икĕ революци çилĕсем çинчен сăмах пынăран малтанхи вариантах хăвартăмăр.

«Язгы ёиллер» романта тутарсен вилĕм кӳрекен Азраилĕ пирки калани пур. Студент-тăлмачсем ку сăмаха оригиналти пекех хăварасшăнччĕ. «Çын пуçне çавапа касса çӳрекен чăваш эсрелĕ Азраилтан мĕнпе кая?» — асăрхаттарчĕ пире Николай Андреевич. Çапла ăс пани вырăнлă пулчĕ. Куçарнă текста «Азраил» вырăнне «Эсрел» кĕрсе ларчĕ.

Паллах, тăлмач ĕçĕнче чи кăткăсси — халăх фразеологине (ирĕклĕ мар сăмах майлашăвĕсене) куçарасси. Эпир Кави Наджмин романне куçарнă вăхăтра ку енĕпе вĕренӳ пособийĕсем пачах çукчĕ. М.Ф. Чернов профессорăн «Краткий русско-чувашский словарь» кĕнеки 1975 çулта çеç тухрĕ.

Фразеологие калькăласа куçарассине студент-тăлмачсем те, куржок ертӳçи те питех ырламастчĕç. Халăх сăмахлăхĕпе пуян чăваш чĕлхинче тем тĕрлĕ эквивалент та тупăнать. Чĕлхене лайăххăн пĕлмелле кăна. Çапах ку меслетпе те усă курма тиврĕ пире. «— Урапа çумне çыхса ярсан, тикĕт лакăмĕ те Меккăна çитет... Пысăк ĕçех мар!» Галикай-хаджи мурза Меккăна çылăх каçарттарма кайнине Саубан тимĕрçĕ çавăн пек танлаштарать.

Тиганяли ялĕ выçлăх çул вилсе пĕтнине Ахтям-бай йĕрĕнчĕклĕн çапла хаклать: «Мулкач усси çур пуслăх, сиенĕ çĕр пуслăх». Илсе кăтартнă тĕслĕхе калькăласа – сăмахран сăмаха – куçарнине куратпăр. Ку меслетпе усă курасси вырăспа тутар чĕлхисен фразеологизмĕсене улăштарма чăваш чĕлхинче тивĕçлĕ эквивалент тупайманнинчен килчĕ.

Хуйхă çине суйхă чăтса ирттерме тивет Гимади тутарăн. Вырăсла: «Несчастье за несчастьем сваливаются на голову татарина Гимади. Беда одна не ходит». Кружок ертÿçи çакăнпа адекватлă (пĕр танлă) фразеологизмсем чăваш чĕлхинче шыраттарчĕ. Пур иккен. Темиçе те тупрăмăр. Пĕрне куçару текстне вырнаçтартăмăр. Акă вăл: «Гимади телейĕ вăраха пырайман. Арăмĕ малтанхи хут çăмăлланнă чухнех, Саимăна çуратсанах, вилсе кайнă. Саима çитĕнсе çитсе чипер хĕр пулса тăрсан, *йĕпе çине сапа* тенĕ пек, пуç çине çĕнĕ инкек йăтăнса аннă» (56 с.).

Тăван чĕлхере ăнăçлă тÿркилÿсем шыранин тĕслĕхĕсене пайтах илсе кăтартма пулать:

Согнутую шею сабля не рубит. *Тайма пуçа хĕç витмест* (72 с.).

Бросившему в тебя камень отвечай угощением. *Чулпа перекене çăкăрпа пер.* (Çавăнтах.)

Студент-тăлмачсем «дело осложнилось» вырăнне *ĕç чĕрре кĕнĕ*, «постигла кара» вырăнне *шалчи тулнă*, «дурака валять» сăмах çаврăнăшне *ухмаха пер* тесе куçарнине «чăваш каланă пек пулса тухнă» тесе мухтарĕ Николай Андреевич. Тутарсен хăш-пĕр сăмахĕсене тÿрĕ пуплевре тата диалогра çаплипех хăварни те килĕшрĕ ăна.

«Çурхи çилсем» романăн чăвашла кăларăмĕнче *медресе* (мусульмансен шкулĕ), *шакирд* (çав шкулта вĕренекен), *хаджи* (Меккăна çитсе курнă мусульманăн хисеплĕ титулĕ) тата ытти çавăн йышши сăмахсем куçарăнмасăр сыхланса юлчĕç. Çапла тунине пирĕн кружок ертÿçи наци уйрăмлăхĕсемпе вăхăт паллисене упраса хăварма кирлипе ăнлантарчĕ.

Ялсемпе хуласен ячĕсем пирки Николай Андреевич çапла шутлатчĕ: вĕсен ячĕсем чăвашла пур пулсан – чăвашла кăтартмалла, чăвашла çук пулсан – оригиналти пек хăвармалла. Акă, Хусан кĕпĕрнинчи Бездна салинче Антон Петров пуçарăвĕпе хресченсен пăлхавĕ тапранать. Пире Николай Андреевич çак ялăн чăвашла ятне туптарчĕ: вăл *Пасна* иккен. Кĕнекене ку ялăн чăвашла ячĕ кĕрсе юлчĕ.

Мана «пословицăсем» тата «поговоркăсем» сăмахсене чăвашла епле каласси çинчен Н.А. Резюков шухăшне илтме тӳр килнĕччĕ. Вĕсене чăвашла епле куçарасси пирки пирĕн ăсчахсем ку таранччен тĕрлĕ шухăшлă пек туйăнать мана. Чăваш енĕн паллă этнографĕн тата фольклорисчĕн Н.Р. Романовăн 1960 çулта, хăй çĕре кĕрсен, тухнă кĕнекинче пословицăсене *ваттисен сăмахĕсем*, поговоркăсене *каларăшсем* тесе çырать. Тĕрĕсех-ши? Килĕшӳллĕ-ши? Поговоркăсем те ваттисен сăмахĕсемех-çке. В.Г. Егоров профессор çав çул кăларнă «Вырăсла-чăвашла словарĕнче» пословицăна *ваттисен сăмахĕ*, поговоркăна *халăх сăмахĕ*, *питĕ вырăнлă каланă сăмах çаврăнăшĕ* тесе палăртнă. Куратпăр, ку ăнлантарусем пословицăсемпе поговоркăсем хушшине уçăмлă чикĕсем лартмаççĕ. 1971 çулта Мускавра пичетленнĕ «Вырăсла-чăвашла словарьте» те ку чикĕ палăрайман.

Фразеологие куçарасси пирки ирттернĕ занятире Николай Андреевич çамрăк тăлмачсене çапла каланăччĕ:

– Пословицăсем те, поговоркăсем те халăх сăмахлăхĕ шутне кĕреççĕ. Урăхла каласан, ваттисенчен юлнă сăмахсем. Пословица – ăс вĕрентсе каланă сăмах. Тĕслĕхран: «Мĕн акатăн, çавна выратăн». Вăл логика енчен вĕçленнĕ. Поговорка та – халăх сăмахĕ, пĕр-пĕр пулăма çивĕччĕн хаклакан сăнарлă сăмах çаврăнăшĕ. Унăн тӳреммĕн ăс вĕрентес пĕлтерĕш çук. Çапла килĕшсе татăлар мар-и: пословицăсене – *ăсларăшсем*, поговоркăсене – *каларăшсем* теме пуçлар.

Тăлмачсен кружокĕн ертӳçин çак сĕнĕвĕ ман асра яланлăхах тăрса юлчĕ. Журналистикăпа лекцисем вуланă чухне эпĕ çак терминсемпе усă куратăп. Термин пĕлтерĕшлĕ çак сăмахсем И.А. Андреев профессора та килĕшнĕччĕ.

– Сăнарлă сăмах шырăр. Унашкал сăмахсемпе халăх чĕлхи пуян. Куçарма пĕлни кăна сахал, ăста куçарни кирлĕ, – тетчĕ чăвашсен паллă чĕлхеçи тата педагогĕ Николай Андреевич Резюков. Пире епле вĕрентнинчен çакă курăнать: хăй вăл чăнах та куçару ăсти пулнă.

*Б.Л. Тихонов (Борлен)*

## ПЕДАГОГ ТАТА ĂСЧАХ НИКОЛАЙ РЕЗЮКОВ

Кашни вĕрентекенĕнех вĕренекенсен асĕнче ĕмĕрлĕхех юлакан хăйне евĕрлĕ енĕсем пур. Николай Резюков пирки те çавнах калас килет.

Эпĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш чĕлхипе литература уйрăмĕнче 1951–1955 çулсенче вĕрентĕм (ун чухне институтра тăватă çул вĕренеттĕмĕр). Н.А. Резюков студентсене вырăс чĕлхин танлаштаруллă грамматикипе лекцисем вулатчĕ. Çӳллĕрех те хытканскер, малтанлăха ытлашши сăмах ваклама юратман пек те туйăнатчĕ. Николай Андреевич пирĕнпе лекци теминчен кăшт пăрăнса калаçнине те хальхи пекех астăватăп. Словарьсем пирки кала-кала панисем те асра. Н.И. Ашмарин словарĕн юлашки томĕсен тиражĕ ытла пĕчĕк пулни пирки тарăхатчĕ:

– Ĕмĕрте пĕрре тухать вĕт. Ашмарин словарьне тепĕр çирĕм-вăтăр çултанах ниçта тупса илейместĕн.

Н.А. Резюков мĕншĕн ман асăмра яланлăхах юлчĕ-ха? Вăл пире словарьсемпе ĕçлеме вĕрентетчĕ. Нихăш преподаватель те ку тĕлĕшпе пире ăс парса вĕрентнине астумастăп. Словарьсене, вĕсен авторĕсене асăнатчĕç, анчах мĕнле ĕçлемеллине, мĕн тата ăçта шырамалла пирки ăс панине астумастăп.

Н.И. Ашмарин словарĕпе те Николай Андреевич сĕннипех паллашрăм. Паллашрăм кăна та мар. Тепĕр чухне хăш-пĕр сăмахсем пирки чăркăшма та пăхаттăм пулас. Асра юлнă темиçе тĕслĕх кăна илсе кăтартатăп. *Ан* сăмах пирки «слово, встречающееся лишь в соединении *ан-пуççи*» тенĕ, унтан тĕслĕх илсе кăтартнă: «Вырăс пупа ан-пуççи çине хурса йăтса тухса кайнă çырманалла». Çак предложение çавăнтах вырăсла та куçарса панă: «Русский попа взвалил на плечи, вынес его и понес в овраг». Эпĕ ун чухне шутланипе, кунта *вырăс пупĕ* çинчен сăмах пырать. Вырăс пупне такам йăтса тухса çырмана кайса пăрахнă. Н.А. Резюков çакăн пек хирĕçлеве те тимлĕн итлетчĕ, ăнлантарса паратчĕ. Тепрехинче Н.И. Ашмарин словарĕнче *кулай* сăмаха

шыраса тупаймарӑм. Кулай — чӑваш ачисен вӑййи. Ҫерем ҫинче пилӗк-ултӑ метрлӑ ҫаврашка палӑртаҫҫӗ. Ҫаврашка хӗррипе пӗчӗк шӑтӑксем чавса тухаҫҫӗ. Варринче те пӗчӗк шӑтӑк пур. Ҫаврашкари кашни шӑтӑка патаксем чиксе ачасем тӑраҫҫӗ. Пӗри пӗчӗк пӳскепе варринелле талпӑнать. Унӑн пӳскене варринчи шӑтӑка кӗртмелле. Ыттисем ҫав пӳскене аяккалла ҫапа-ҫапа яраҫҫӗ. Ачан ун хыҫҫӑн чупма тивет. Пӳске варринчи шӑтӑка кӗрсен, выляканссем вырӑнӗсемпе ылмашӑнаҫҫӗ. Чупкӑн ача ҫав вӑхӑтра хӑйӗн патакне камӑн та пулин шӑтӑкне кӗртет. Шӑтӑксӑр юлни чупкӑна тухать. Хӑйне кура шавлӑ та интереслӗ вӑйӑ: ҫерем ҫинчи чӑваш хоккейӗ ӗнтӗ. Шел, авалхи вӑйӑсене манса пыратпӑр. Пӗлместӗп, тен, ҫак вӑйӑ анатри чӑвашсем патӗнче кӑна сарӑлнӑ пулӗ. Эпӗ Елчӗк районӗнчи Кивӗ Арланкасси текен пӗчӗк ялтан тухнӑ-ҫке. Тӗлӗнмелле, Н.А. Резюков та, анатри чӑваш, ача чухне кулайла та вылянӑ иккен. Ҫав сӑмаха эпӗ ун чухне словарьте шыраса тупаймарӑм. Аллӑ ҫул иртсен аса илтӗм те шыраса тупрӑм-тупрӑмах: словаре ӑна *кӑлай* тесе кӗртнӗ.

Н.А. Резюков пире словарьпе ӗҫлеме вӗрентетчӗ кӑна мар, словарьсем туянма та хистетчӗ. Хамӑн пурнӑҫӑмра ӑсчах халалне май килнӗ таран пурнӑҫлама тӑрӑшрӑм темелле. Манӑн килти библиотекӑра тӗрлӗрен словарьсем ҫӗр ытла. Пушкӑртстанри Стерлитамак хулинче, Шупашкарти чӑваш-тӗрӗк лицейӗнче словарьсен выставкине те йӗркеленӗччӗ. Питӗ шел, кашни курав хыҫҫӑн мӗнле те пулин кӗнеке каялла таврӑнмасть. Ҫухалать.

Николай Андреевич патӗнче те пӗрре кӑна пулман. Икӗ хутлӑ йывӑҫ ҫурт лартнӑччӗ вӑл. Иккӗмӗш хутне тӳрех (тӗп пӳртне кӗмесӗрех) хӑпарма пулатчӗ. Пӗр вӑхӑтра унта Н.Я. Любимов та пурӑнатчӗ. Астӑватӑп, пӗррехинче ҫуран утса хула варринелле анатпӑр. Типшӗмрех, ватлӑха пула пӗкӗрӗлме пуҫланӑ арҫынна тӗл пултӑмӑр. Саламласа сӑмах ылмаштарса илнӗ хыҫҫӑн малалла кайрӑмӑр. Ку вӑл Рзай ҫыравҫӑ пулнӑ иккен. Рзай ҫыравҫа хаҫат-журналта ун чухне пичетлеместчӗҫ, институтра вӗрентекенсем те асӑнмастчӗҫ.

— Манӑҫа тухса пырать, — терӗ пирӗнтен пӗри.

— Манӑҫа кӑлараҫҫӗ, — хушса хучӗ тепри.

Н.А. Резюков мана 1959 ҫулта пичетленнӗ «Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков» кӗнекине парнелерӗ. Унта «*Дорогому моему ученику, Борису Леонтьевичу Тихонову от учителя. 12.VI.1960 г. Н. Резюков*» тесе ҫырса

хунă. Çак кĕнеке маншăн тем пекех хаклă. Нумай-нумай çын аллинче пулса курчĕ вăл. Пушкăртстанра ăна пĕри илсе кайрĕ те çулталăк ытла тавăрса памарĕ. «Çухатрăм» тесе укçан тӳлеме те хăтланса пăхрĕ. Тарăхтарсах пĕтерчĕ. Каярахпа ăнлантăм: диссертаци çырма кирлĕ пулнă иккен. Аллă çул каярах тухнă кĕнеке паян та кивелмен, пĕлтерĕшне çухатман. Н.А. Резюков хăй вара, институтра вĕрентетчĕ пулин те, тĕпчев кĕнекине пичетлесе кăларнă пулин те наукăсен кандидачĕ марччĕ. Халĕ халăх поэчĕсемпе степеньлĕ çынсем кăткă пек ĕрчесе кайрĕç (тепĕр чухне, пахчари кăткăсем пек, чăваш чĕлхине, йăли-йĕркине сиен кăна кӳреççĕ).

Н.А. Резюков ăсчах, мана хăйĕн кĕнекине парнелесе, тен, эпĕ чĕлхе тĕпчевçи пуласса шанатчĕ пулĕ. Пулаймарăм. Манăн пурнăçăм хаçат-журнал ĕçĕнче иртсе кайрĕ. Шкулта та сахал мар ĕçлеме тиврĕ. Хаçатра ĕçленĕ вăхăтрах чăвашлăх çинчен те манман. Хĕрĕх çула яхăн республика тулашĕнче пурăнтăм: малтан Пушкăртстанра, унтан Хусанта, «Сăвар» хаçат редакцийĕнче ĕçлерĕм. Стерлитамакри интернатра чăваш ачисем валли педкурс йĕркелесе ятăм, педучилищĕре чăваш ачисен уйрăмне уçрăм, унти пединститутра чăваш чĕлхипе литературин уйрăмне йĕркелеме сахал мар вăй хума тиврĕ. Хусанти педуниверситетра та чăваш чĕлхипе литература уйрăмне уçнăччĕ. Шел, эпĕ пенсие тухса Шупашкара куçса килсен, çав уйрăма хупрĕç. Упраса, сыхласа хăварас текенсем те тупăнмарĕç.

Пушкăртстанри çамрăксене хам вĕренсе тухнă пединститута вĕренме илессине икĕ хутчен йĕркелеме тиврĕ. 1963 çулта Пушкăртстанри Стерлитамак хулине экзаменсем тыттарма С.П. Горский профессор пынăччĕ, 1993 çулта А.И. Мефодьев пычĕ. Шупашкартан вĕренсе тухнисем пурте ĕçе ăнăçлă вырнаçрĕç.

Вăхăт пĕр сисĕнмесĕр иртет. Хамăр та çитмĕл урлă каçрăмăр. Пире пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă вĕрентекенсем, Н.А. Резюков пек çынсем, нихăçан та асран тухмаççĕ.

*А.С. Канюкова*

## Н.А. РЕЗЮКОВ ТАТА ПЕДИНСТИТУТ

Эпĕ Николай Андреевич патĕнче 1939–1942-мĕш çулсенче пединститутра вĕрентĕм. Вăл пире чăваш чĕлхин лексикипе, фонетикипе, граматикипе лекцисем вулатчĕ, практика занятийĕсем ирттеретчĕ. Вăл уçă, ăнланмалла сасăпа калатчĕ, материала лайăх пĕлни сисĕнетчĕ. Хăй çамрăксене хисеплени, вĕсен пĕлĕвне хăвăртрах аталантарассишĕн тăрăшни палăратчĕ. Лекцисенче час-часах Н.И. Ашмарин вĕрентсе хăварнисем çинчен калатчĕ. Н.А. Резюков – ăсчахăн 17 томлă словарьне редакцилесе çитерсе пичете панисенчен пĕри. Халĕ çав словарьпе чăваш çыннисем анчах мар, урăх чĕлхепе калаçакан халăхсен ученăйĕсем те усă кураççĕ. Эпĕ Мускавра Чĕлхе институтĕнче вĕреннĕ чухне унăн словарĕпе азербайджан, узбек, казах, венгр, кăркăс тата ытти халăхсен чĕлхеçисем усă курнине питĕ нумай асăрханă.

Н.А. Резюков халăх сăмахлăхне, фольклора питĕ хисеплетчĕ. Лекцисенче вĕсемпе питĕ нумай усă куратчĕ.

1939–40-мĕш вĕренӳ çулĕнче пединститутра – вырăс чĕлхипе литература факультетне вĕренме кĕнĕ студентсенчен чăваш чĕлхипе экзаменсене лайăх тытнисене суйласа илсе (30 студент) – чăваш чĕлхи уйрăмне туса хунă. Унта тăван чĕлхепе Н. Резюков, С. Горский, методикăпа Н. Николаев преподавательсем лекцисем вуланă.

Эпир пĕр çул вĕренсен, вăрçă пуçланчĕ. Группăра арçын ачасем тăрса юлмарĕç – вăрçа тухса кайрĕç, хăш-пĕр студенткăсем те вĕренме пăрахрĕç. Пирĕн пединститута Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕн çуртне куçарчĕç. Хĕлле, декабрь уйăхĕнче, пире Аксарин ялĕ çывăхне окопсем чавма ячĕç. Н. Резюков, В. Шелегов, В. Алатырцев тата ыттисем те фронта тухса кайрĕç. 1943 çулта эпир чăваш уйрăмĕнчен пилĕк студентка вĕренсе тухрăмăр: эпĕ, Павлова Елена, Богданова Анастасия, Демидова Вера, Петрова Лидия. Ыттисене – шкулсене, мана – Калинино педучилищине, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме ячĕç. Чăваш

çутěç комиссариачě мана Мускаври аспирантурăна кайма сěнчě. Эпě унтан вěренсе тухса кандидат диссертацине хӳтěлерěм, тăван пединститута ěçлеме килтěм.

Н.А. Резюковпа С.П. Горский тăрăшнипе вăрçă хыççăн чăваш уйрăмне 25 – 50-шар студент илсе вěрентме тытăнчěç. Вěсем ěçлени, тăрăшни, кěнекесем çырни сая каймарě. Чăваш уйрăмěнчен вěренсе тухнă студентсем шкулсенче тăван чěлхепе литературăна вěрентеççě. Хăш-пěрисем паллă çыравçăсем пулса тăчěç: Юхма Мишши, Юрий Скворцов, Александр Волков, Александр Галкин, Владимир Канюков т. ыт. те. Наука ěçченěсем пулса институтсенче, университетра вăй хуракансем те чылай пулчěç, хăшě-пěри – халě те унтах.

Çапла вара, Н.А. Резюков хатěрленě ăстасем, вěсен вěренекенěсем унăн ěмěчěсене пурнăçа кěртеççě, ěçне-хěлне малалла аталантараççě. Николай Андреевич ятне яланах асăнмалла пулě.

*Е.П. Погодин*

## НИКОЛАЙ РЕЗЮКОВ: ХАРАКТЕР И СУДЬБА

Наш научный анализ психоаналитической характеристики Николая Андреевича Резюкова в основном строится на синтезе извлечений из опубликованной литературы, архивных материалов, ономастики, персонологии и космобиологии. Конечно, попытка постичь внутренний мир человека может быть осуществлена лишь частично, но никогда полностью. Трудно дать точный психологический портрет человека, но мы попытаемся сделать это. Настоящая статья — это потребность донести до окружающих наше видение ментального мира одного из известных деятелей науки и культуры Чувашской Республики.

Сущность внутреннего мира Николая Андреевича Резюкова можно выразить одним словом — Инициатор. Это зрелая личность, свободолюбивые порывы которой прокладывали путь индивидуальной форме самовыражения. Он как никто другой обладал глубинным пониманием свободы, которое воплощалось в инициировании свежих проектов и разработке оригинальных методов их осуществления. 2 октября 1937 г. именно Н.А. Резюков подал в Совнарком Чувашской АССР докладную записку о положении в Чувашском научно-исследовательском институте (ЧНИИ). В тот же день заместитель председателя Совнаркома А.Я. Яковлев возложил на него временное исполнение обязанностей директора ЧНИИ. 15 января 1938 г. Н.А. Резюков обратился в бюро обкома ВКП(б) с докладной запиской, в которой выступал за сохранение ЧНИИ как самостоятельного учреждения.

Зрелый индивидуум мужественно следовал избранным курсом и одновременно выражал твердую решимость оставаться самим собой. Типичными чертами его личности являлись одержимость, самоуверенность и минимальная стыдливость. Особенно нельзя забывать о смелости — иначе проблематично было оставаться открытым для окружающих.

Очень трудно обобщить характеристику этого человека, поскольку Николай Андреевич являлся в высшей степени уникальной личностью. Зачастую он сам отвергал установленные

правила поведения и общественные устои. И дело тут вовсе не в его мятежности и бунтарстве, просто он всегда предпочитал действовать по собственному сценарию. В самом деле, иногда создается впечатление, будто Николай Резюков не способен был ни к чему, кроме как к тому, что при любых обстоятельствах оставаться самим собой. И уж если своими действиями он заметно осложнял жизнь другим, то это происходило отнюдь не из-за его дурных помыслов.

С таким оригиналом ужиться было очень трудно. Однако сам он всегда рассчитывал на понимание со стороны окружающих замысловатого хода его мыслей или нетрадиционного поведения. Он зачастую заставлял «нормальных» людей испытывать просто неистребимый зуд неудобства. Будучи нерасположенным ко всякого рода компромиссам и уступкам в ущерб собственной позиции, Н.А. Резюков мог провоцировать конфликтные ситуации, осложняющие не только его личные взаимоотношения с людьми, но и продвижение по службе.

Ключом к успеху для Н.А. Резюкова стал правильный выбор друзей и любимых, а также научно-педагогическая деятельность, которая наиболее подходила к его яркой натуре. Николай Андреевич, как правило, не имел привычки приносить извинения за те трудности, которые невольно создавал своими убеждениями, стилем жизни или персональными решениями.

Характерной чертой личности Николая Андреевича Резюкова являлось умение с головой окунаться в собственные начинания. Это касалось не только его профессиональной деятельности, но и личной жизни. Дружбе и любви он отдавался целиком, без остатка. Однажды сделав свой выбор, он уже навсегда становился его пленником. Достаточно вспомнить преданность Николая Андреевича делу издания 17-титомного Словаря чувашского языка Н.И. Ашмарина, ставшему основным в его жизни.

Проблемы возникали в отношении глубины его обязательств и ответственности. Когда обстоятельства сложились так, что он вынужден был оставить коллектив, Николай Андреевич долго и мучительно переживал чувство вины, даже твердо зная, что ситуация ему не подконтрольна. Однако опыт разочарований, который приходил с годами, научил его оставлять кое-что в резерве (при этом не ущемляя свое великодушие).

Этот человек был заряжен огромной энергией, которую не всегда ему удавалось направлять в нужное русло. Очень часто он посвящал себя заведомо проигрышным проектам. В личной

жизни его, словно магнитом, тянуло к деструктивным личностям, а потом он долгие годы приходил в себя после разочарований. И все-таки его редко удовлетворяли «нормальные» отношения, он словно искал самых экстравагантных людей, которые забирали у него всю энергию. В этом смысле Николай Андреевич отличался сильной привязанностью. Он был одержим такими порывами в попытке уйти от собственных проблем, страхов и беспокойства.

Резюков давал выход своей избыточной энергии, целиком отдаваясь работе. Его необузданный нрав иногда приводил к совершенно фантастическим результатам, и это при том, что он вел вполне почтенную и добропорядочную жизнь.

Поскольку Николаю Андреевичу удалось найти объект, достойный его внимания и энергии, его просто можно считать счастливчиком. Но все-таки стоит отметить, что друзья, любимые и близкие не всегда были способны вернуть ему то, что так щедро дарил он сам. Таким образом, для Н.А. Резюкова важно было наметить реалистические ориентиры и стремиться к объективности в отношениях, чтобы сохранить и упрочить их.

В характере Николая Андреевича удивительным образом сочетались ответственность, осторожность и чувство меры, с одной стороны, и совершенно противоположные тенденции к экспансивности и оптимизму, с другой; отсюда проистекала весьма актуальная опасность грандиозного конфликта. Он мог оказаться в эпицентре противоречий и поэтому шарахаться из стороны в сторону. В целом Н.А. Резюков медленно и тщательно выстраивал свою жизнь и карьеру, но не всегда это удавалось. При всей своей добросердечности он обладал холодной и недоступной внешностью. Положительные стороны его личности включали в себя харизму, общительность, энергичность, любознательность и стремление к успеху; к негативным качествам относились нервозность, нерешительность, непостоянство, самодовольство и злоупотребление властью.

Николай Андреевич Резюков придерживался философского взгляда на вещи, для него были характерны широта и пренебрежение мелочами. Одним словом, он обладал даром масштабного видения. Это мудрый философ, способный послать стрелу в самое сердце проблем. Он стремился облагородить человеческую сущность, его идеи могли увлечь. Н.А. Резюков мог заблуждаться, впадая в крайность, но он призывал окружающих не опускаться до мелочности и дрязг. Энергетика этого человека внушала и самому Николаю Андреевичу, и окружающим чувство оптимизма.



**Николай Андреевич Резюков тата мăшăрĕ Наталья Федоровна.** 1930 çулхи çĕртмен 29-мĕшĕ.



**Н.А. Резюков Илле Тукташпа тата Н.Я. Любимовпа пĕрле.** 1950 çулсен пуçламăшĕ.



**Чăваш чĕлхеçисем (В.А. Андреев, Г.А. Дегтярев, В.И. Сергеев, А.А. Сосаева) тата Н.А. Резюковăн çывăх тăванĕсем Николай Андреевичăн çĕр çулхи юбилейне палăртнă кун.** 1998 çулхи раштавăн 8-мĕшĕ.

*В.И. Сергеев*

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧИ *-ла(-ле), -лла (-лле)* АФФИКСĂН ФУНКЦИЙĔПЕ ПĔЛТЕРĔШĔСЕМ

XIX ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа XX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсемччен чăваш чĕлхе наукинче *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикса сăмах тăвакан формант тесе пăхас туртăм пысăк пулнă, анчах та тĕпчевçĕсен ку ыйтупа пĕр шухăшлăх çукки палăрать. Пĕрисем: В.Г. Егоров, И.П. Павлов, Л.П. Сергеев – *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикс наречи тăвать тесе ĕнентереççĕ, Н.П. Петровпа М.Ф. Чернов шучĕпе, ку аффикс паллă ячĕ тăвать, виççĕмĕшĕсем: Н.А. Андреев, М.И. Скворцов – ăна наречи те, паллă ячĕ те тăвакан аффикс тесе шутлаççĕ.

Çакăн пек пăтрашу Н.И. Ашмаринтанах пырать. Хăйĕн «Материалы для исследования чувашского языка» ĕçĕнче пĕр çĕрте вăл çапла çирĕплетет: «Аффикс "*-ла, -ле*" служит для образования прилагательных, обозначающих образ, подобие: *хĕрарăмла арçын* "мужчина, похожий на женщину", "гермафродит" *чăвашла кĕнеке* "чувашская книга"» [2 : 154].

Çав ĕçрех тепĕр çĕрте *-ла (-ле)* аффикса «окончание» тесе ят парать те çапла ĕнентерет: «Окончание "*-ла, -ле*", после гласных "*-лла, -лле*", ... образует различные наречия: *чăвашла* "по-чувашски"» [2 : 229]. Малтанхи тĕслĕхре, *чăвашла кĕнеке* тенĕ чухне, *чăвашла* сăмах паллă ячĕ пулнине палăртнă, иккĕмĕшĕнче вăл наречи пулса тăнă. Н.И. Ашмарин ку аффикс тутар чĕлхинчи *-лай (-лей)* аффикспа тӳр килнине каланă та, вăл наречи тăвакан аффикс пулнине палăртса çакăн пек тĕслĕхсем панă: *чăвашла* – по-чувашски; *вырăсла* – по-русски; *çармăсла* – по-черемисски; *ирçелле* – по-мордовски; *çĕрле* – ночью; *кăнтăрла* – днем; *çулла* – летом; *хĕлле* – зимою; *укçалла (çăмарталла) вылять* – играет в деньги (в яйца); *сохăмла* – по холодку (т.е. пока не печет солнце); *пĕрле* – вместе, заодно; *лашайа вĕрилла шăварма йорамасть* – поить лошадь, когда она разгорячена, не годится; *çормалла* – пополам; *çамрăкла* – в молодое время; *çаралла* – на босу ногу; *икĕ пăт çăнăхла* – в

обмен на 2 пуда муки. Снояскăра *кăнтăрла* сăмах япала ячĕ те пулма пултарнине палăртнă. Асăрхăр: Н.И. Ашмарин ĕçĕнче тĕслĕхсен хисепĕ 16–17-рен мала мар.

1924, 1928 çулсенче тухнă «Чăваш чĕлхийĕн крамматтикĕ» кĕнекере Тимухха Хĕветĕрĕ (Ф.Т. Тимофеев) ятсем çумне *ла, ле* сыпăк хушăнсан çакăн пек ĕçхĕлçумĕсем (наречисем) пулнине ĕнентерет: *çĕр – çĕрле, çу – çулла, хĕл – хĕлле, кăнтăрла, месерле.* Урăх тĕслĕхсем паман. Темĕншĕн автор малтанхи тĕслĕхсен схемипе усă курса *кăнтăр – кăнтăрла, месер – месерле* тенисене икĕ пая уйăрса паман, ахăртнех, месер сăмах хăй тĕллĕн çӳременнине асăрханă пулмалла. *Çĕр çĕрле* «ночь ночевать», *çу çулла* «лето провести» (букв. лето летовать), *хĕл хĕлле* «зиму зимовать» тĕслĕхсене дефиссăр панă, апла пулсан *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикс глагол (ĕçхĕл) тăвакан формант пулнине палăртнă автор [8].

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Н.А. Андреев *-ла (-ле)* аффикс пĕр харăсах наречи те, паллă ячĕ те тума пултарнине палăртса çапла çырнă: «С помощью аффикса *-ла (-ле)* ... образуются имена прилагательные-наречия, выражающие образ (чего), подобие, форму от имен существительных и прилагательных: *кулăшла* «смешной, смешно». . . , *арçынла* «подобный мужчине...» [1:169]. Ку ĕçре пире тĕлĕнтерекенни «имена прилагательные-наречия» текен термин. Кун пек термин çĕнĕрен йĕркеленнĕ пуплев пайне палăртмалла, анчах ун пек пуплев пайĕ тума май çук, мĕншĕн тесен наречи ят сăмахсен ретĕнче тăмасть.

Н.А. Андреев чăваш чĕлхинче *-ла (-ле)* аффикс питех те тухăçлине палăртать, вăл сăмах тăвакан аффикс та, сăмаха улăштараканни те иккен. Анчах та автор сăмаха улăштаракан функцисене тĕрĕс мар ăнлантарать: ун шучĕпе, *вăрманалла* тенĕ чухне *-лла* аффикс пару падежĕн *-а* аффиксĕ çумне çыпçăнать; тĕрĕссипе кунта морфсен пайланăвĕ урăхла: вăрман + *-алл* + *-а* (*ал* «ен» пĕлтерĕшпе тутар чĕлхинче çӳрет, тулли пĕлтерĕшлĕ сăмах аффикса куçать те ун хыççăн тин *-а* пару аффиксĕ хушăнать; *тĕпелелле* сăмахра *-ел* (*тĕп* + *ел*) – сăмах тăвакан аффикс; *-елл* + *-е* аффикссем — сăмаха улăштараканнисем: *хирелле, килелле, хуланалла* йышши сăмахсенче *-алл (-елл)* хăй тĕллĕн çӳремест: *хирел, килел, хуланал* тени çук чĕлхере; *шал, мал* сăмахсен тытăмĕ ансатланнă, малтан *ăш* + *-ал*, *ум* + *-ал* пулнă, танл.: *хыç* + *-ал.*

Н.А. Андреев *-ла (-ле)* аффикс пĕрлелĕх падежĕн тытăмĕнче пуррине те ĕнентерет: *-па + -ла*; *-пе + -ле*: *урампала, хирпеле.* Истори тĕлĕшĕнчен пăхсан, *-пала (-пеле)* аффикс тытăмĕнче *-ла (-ле)* аффикс пулма пултарнă: *бир + -ле(н) > пĕрле(н) < -пала(н) / -пелен(н) > -пала (-пеле).*

Н.А. Андреев хыççăн В.Г. Егоров *-ла (-ле)* формант сăмах тăвакан тухăçлă аффикс пулнине палăртнă: «С помощью аффикса *-ла(-ле)* образуется весьма многочисленная группа наречий со значением "по направлению к тому предмету", что выражено основой слова без данного аффикса: *каялла* "назад", *малалла* "вперед"». Иккĕленӳллĕ пулин те, автор çапла çырнă: «Вероятно, можно считать также наречиями все существительные формы дательно-винительного падежа с аффиксом *-ла (-ле)*: *пахчаналла* "по направлению к саду"». Вăйă ячĕсем пулакан *футболла, шахматла, шашкăлла* сăмахсене кăна мар, *-малла (-мелле)* аффикслă пулмалли причасти формисене те В.Г. Егоров наречи теме сĕнет, анчах пĕр тĕслĕх кăна илсе парать: *куç хупмалла* "в жмурки" [3 : 284].

М.И. Скворцов палăртнă тăрăх, *-ла (-ле)* аффикс паллă ячĕ те, наречи те тума пултаракан аффикс иккен: «... *-ла (-ле), -лла(-лле)* весьма продуктивный аффикс, образует: 1) от именных основ, причастий и инфинитивов на *-ма (-ме)* – прилагательные и наречия с относительным и уподобительным значением: *вырăс* "русский" (прилаг. и сущ.) – *вырăсла* "русский"; "по-русски, как русские" [7 : 663].

М.Р. Федотов *-ла (-ле)* аффикслă вăхăт наречийĕсен шутне *çĕрле, кăнтăрла, хĕлле* йышши сăмахсене кăна кĕртет [9, II : 114]. «Чувашский язык в семье алтайских языков» кĕнекен пĕрремĕш кăларăмĕнче [9, I : 62–65] чăваш тата мари чĕлхисенчи *-ла* аффикс мĕнле пулса кайнине çырса кăтартать.

Н.П. Петров дискусси тата сӳтсе-яву шайĕнче çырнă «Образование прилагательных на *-лă (-лĕ)* и некоторые тенденции его развития» статйинче *-ла (-ле)* аффикслă паллă ячĕсем пирки сăмах хускатать те çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне пырса тухать: «Таким образом, перевод с русского на чувашский язык научной и политической литературы дал новую волну словообразования имен прилагательных от заимствованных из русского языка основ при помощи чувашских аффиксов *-лă (-лĕ) и -ла (-ле)*» [5 : 368]. 1920 çулта В.И. Ленинăн «Халăхсем хушшинчи лару-тăру тата Коммунистла Интернационалăн тĕп

задачисем» брошюрине чăвашла куçарнă чух *-ла (-ле)* аффикслă формăсемпе ытларах усă курнине палăртать автор; тĕслĕхрен: ***коммунистла интернационал, капиталисмла монополи, револьутсилле теори*** т.ыт.те. Асăрхăр: автор *-лă (-лĕ)* тата *-ла (-ле)* аффикслă сăмахсем мĕншĕн паллă ячĕсем пулнине ăнлантарман.

М.Ф. Чернов «Хальхи чăваш литература чĕлхи: Сăмах майлашăвĕн синтаксисĕ» кĕнекере «*-ла (-ле)* аффикслă паллă ячĕ + япала ячĕ схемăпа йĕркеленекен япала ячĕ сăмах майлашăвĕсем» пирки çырать, анчах та тĕслĕхсене тишкерсен тата автор хăй çырнине вуласан, кунта нимĕнле паллă ячĕ те çуккине ăнланма пулать: «Паллă ячĕллĕ япала ячĕ сăмах майлашăвĕсен ку ушкăнĕ тĕп компоненчĕ палăртнă япала пăхăнаканни ят панă япалапа пĕр евĕрлĕ пулнине кăтартать. Вĕсен грамматика пĕлтерĕшĕ: япалапа унпа пĕр евĕрлĕ япалан çыхăнăвĕ» [10 : 196]. Мефодий Федорович юлашки предложенире çырнине тӳреммĕн çапла ăнланмалла: япала ячĕ тепĕр япала ячĕпе *-ла (-ле)* аффикспа çыхăннă. Паллах, автор хăй шухăшне тытса пырас пулнă пулсан, кунта япалапа унăн паллин çыхăнăвĕ пирки каламалла пулнă, анчах та вăл çук. Темшĕн М.Ф. Чернов «Япала ячĕллĕ сăмах майлашăвĕсен 1-мĕш тĕсĕ» сыпăкра: *сăран атă, тимĕр кĕреçе, ылтăн çĕрĕ, Иван пичче, тимĕрçĕ Иван, ылтăн кĕркунне* тĕслĕхсене илсе панă та вĕсен пĕтĕмĕшле грамматика пĕлтерĕшне «япалапа унăн паллин çыхăнăвĕ» тесе палăртнă [10 : 177]. Капла калани пăхăнакан компонент паллă ячĕ пулнине пĕлтерет, *-лă (-лĕ)* аффикслă çыхăну паллă ячĕллĕ япала ячĕ сăмах майлашăвĕсене çырса кăтартнă май (***кĕнекеллĕ ача, орденлă салтак*** т.ыт.те) автор вĕсен грамматика пĕлтерĕшне «япалапа вăл тепĕр япалаллă пулнин çыхăнăвĕ» тесе палăртать [10 : 191]. Капла калани пĕр япала ячĕ тепĕр япала ячĕпе *-лă (-лĕ)* аффикспа çыхăнать тенине пĕлтерет, мĕншĕн тесен паллă ячĕ япалан (ĕçĕн е тепĕр паллăн) паллине пĕлтермелле-çке-ха.

И.П. Павлов, Л.С. Левитская, Л.П. Сергеев ĕçĕсенче *-ла (-ле)*, *-лла (-лле)* аффикса «наречи тăвакан аффикс» тесе палăртнă, анчах мĕнле сăлтавсене пула вăл сăмах тăвакан аффикс пулнине ăнлантарман.

Пирĕн шутпа, тĕпчевçĕсем ку аффиксăн анлă шалаш валентлăхне шута илмен. Н.И. Ашмарин хăйĕн ĕçĕнче *-ла (-ле)* аффикслă наречисене çаксене кăна панă: ***чăвашла, вырăсла,***

*çармăсла, ирçелле, çĕрле, кăнтăрла, çулла, хĕлле, укçалла, çăмарталла, сохăмла, пĕрле, вĕрилле, çормалла, çамрăкла, çаралла, çăнăхла* [2 : 229]. Тимухха Хĕветĕрĕ пĕтĕмпе те пилĕк сăмах илсе кăтартнă: *çĕрле, çулла, хĕлле, кăнтăрла, месерле* [8 : 114].

Ку аффиксăн шалаш валентлăхĕ анлă пулнине малтанласа В.Г. Егоров профессор асăрханă: «... многочисленную группу составляют в чувашском языке наречия с аффиксом *-ла (-ле), -лла (-лле)*; «аффикс *-ла (-ле)* является весьма продуктивным в области образования качественных наречий» [3 : 282]. И.П. Павлов шухăшĕпе те, «*-ла (-ле)* аффикс хушăннипе наречисем питĕ çăмăллăн, ирĕклĕн пулаççĕ» [4 : 299]. И.П. Павлов "ку аффикс падеж аффиксĕ еннелле" туртăннине те асăрханă. Çак шухăш питех те тухăçлă пулнине палăртмалла, анчах та автор ăна малалла аталантарман. Енчен те ку шухăша тĕпе хурсан, *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикс, падеж аффиксĕсем пекех, сăмахсен хушшинчи синтаксис çыхăнăвне кăтартса сăмаха улăштараканнисен ретне кĕме тивĕç, ят тата глагол синтагмăсенчи сăмахсене çыхăнтаракан аффикс шутланмалла. Ку тĕлĕшпе вăл, чăнах та, падеж аффиксĕн функцийĕсене пурнăçлать. Пĕлтерĕшне тĕпе хурас пулсан, ăна **евĕрлĕх падежĕ** (вырăсла: уподобительный падеж) темелле. Падежсен системине кĕртменнине шута хурса эпир ăна **евĕрлĕх форми** теме сĕнесшĕн.

Ку аффиксăн анлă валентлăхне кăтартас тĕллевпе эпир шухăшласа ăнкармалли тĕслĕхсем (хăнăхтарусем) паратпăр.

**А.** I. Аяларах панă сăмахсене тишкерĕр, чăваш чĕлхинче *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикса сăмах тăвакан чи тухăçлă аффикс теме пулать-и? Е вăл сăмаха улăштаракан аффикс кăна?

Тырăлла: *ырашла, тулăлла, сĕлĕлле, урпалла, пăрçалла, вирле, кукурузăлла, соялла, вăрăлла, викăлла, пăрилле, рисла, кантăрла, урпалла, ясмăкла...*

Пулăлла: *çăрттанла, çупахла, кăртăшла, ăркайла, йăпăлтакла, карасла, кăртăшла, партасла, сасанла, çĕкĕлле, шĕшлўкле, хăçахла, шывçилле...*

Выльăхла: *сысналла, сурăхла, ĕнелле, пăрулла, путекле, ăйăрла, лашалла, качакалла, куянла, ашакла, анчăкла, упалла, пакшалла, йыталла, вăкăрла...*

Кайăкла: *çăханла, попугайла, чакакла, çерçилле, шăпчăкла, тăрналла, саркайăкла, тăрилле, тăманалла, куракла, куккукла, кăсăялла, путенелле, çăханла, тăрналла, уйăпла, ўхĕлле, хурчăкалла...*

Вăйăлла: *çĕрĕлле, гандболла, кункалла, хоккейла, лапталла, маткăлла, шашкăлла, чушкăлла, лотолла, тункăсла, теннисла, футболла, волейболла...*

Салтакла: *офицерла, прапорщикла, сержантла, капитанла, майорла, лейтенантла, генералла, генерал-лейтенантла, генерал-майорла...*

II. Чĕлхесем çĕр çинче 3 (хăшĕсем каланă тăрăх, 7) пин ытла, вĕсен ячĕсем çумне пур чухне те *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикс хушма пулать: *грузинла, эрменле, чăвашла, вырăсла, тутарла, пушкăртла, нухайла, французла, полякла, чехла, акăлчанла, нимĕçле* т.ыт.те.

III. Çĕр чăмăрĕ çинче пурнакан темиçе миллиард çыннăн кашнинех ячĕ (хушамачĕ, ашшĕ ячĕ, хăшĕсен псевдонимĕ) пур. Çав ятсем пурте *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикс йышăнма пултараççĕ: *Петĕрле, Димитриевла, Петр Егоровичла, Петр Егорович Димитриевла, Эйзинла* т.ыт.те.

IV. Çынсем мĕнле профессипе пурăнаççĕ, çав ятсем (вĕсем пинрен иртеççĕ) çумне *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикс ирĕклĕнех çыпçăнма пултарать: *колхозникла, шоферла, фрезеровщикла, каскалаканла, рабочилле, летчикла, механикла, монтерла, электрикла, çыравçăлла, куçараканла* т.ыт.те.

V. Çынна палăртакан сăмахсем те *-ла (-ле), -лла (-лле)* аффикса ирĕккĕнех йышăнаççĕ (вĕсен хисепĕ 700 ытла): *арçынла, хĕрарăмла, ачалла, кумалла, хулиганла, сăтăрçăлла, бандитла, вăрăлла, хĕрле, каччăлла, хусахла, бизнесменла* т.ыт.те.

VI. Паллă ячĕсем те ку аффикспа çӳреме пултараççĕ: *çамрăкла, ăшăлла, сивĕлле, кăмăлсăрла, намăссăрла, симĕсле, пысăкла, усалла, урăлла, пушăлла, айванла, çăткăнла, халсăрла, чăрсăрла, чыссăрла, сусăрла* т.ыт.те.

VII. Хисеп ячĕсем те хăшĕсем ку аффикса йышăнаççĕ: *пĕрремĕшле, иккĕмĕшле, иккĕлле, виççĕлле, çиччĕлле, саккăрла, тăххăрла, вуннăлла, çĕрле.*

VIII. Пулас причастин пур форми çумне те çак аффикса хушма пулать: *акасла, асăрхамасла, пулмасла, парăнасла, çĕнтересле, уйăрасла, уйăрăласла, пырасла, вуласла, çырасла, çыварасла, ларасла, тапранасла* т.ыт.те.

IX. Иртнĕ причастин хăш-пĕр формисем çумне: *курманла (çиет), тăранманла, пĕлменле, сисменле, пĕлнĕлле* т.ыт.те.

**Ă.** Чăваш чĕлхинче сăмах тăвакан чи тухăçлă аффикссен шутне чĕлхеçĕсем хăшсене кĕртеççĕ? Вĕсен хушшинче *-ла (-ле),*

*-лла (-лле)* аффикс тухăçлă пулнине тĕпчевçĕсенчен кам та пулин асăннă-и?

**Б.** Çӳлерехри пунктсенче илсе кăтартнă тĕслĕхсене тĕпе хурса *-ла (-ле)*, *-лла (-лле)* аффикса наречи тăвакан аффикс вырăнне шутлас пулсан, чăваш чĕлхинче миçе миллион (е миллиард) наречи пулнине кам тĕшмĕртме пултарать?

### Литература


1. *Андреев Н.А.* Аффиксы чувашского языка // Записки / ЧНИИ. Вып. VI. Чебоксары, 1952. С. 167–172.

2. *Ашмарин Н.И.* Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 154–229.

3. *Егоров В.Г.* Наречия // Материалы по грамматике современного чувашского языка. Ч. I. Морфология. Чебоксары, 1957. С. 273–284.

4. *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 298–302 с.

5. *Петров Н.П.* Образование прилагательных на *-лă (-лĕ)* и некоторые тенденции его развития // Чувашский язык, литература и фольклор. Вып. 2. Чебоксары, 1973. С. 366–368.

6. *Сергеев Л.П., Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. Шупашкар, 1993. – 327 с.

7. *Скворцов М.И.* Словообразовательные аффиксы чувашского языка // Чăвашла-вырăсла словарь: Чувашско-русский словарь. М.: Русский язык, 1982 (1985). С. 661–664.

8. *Тимухха Хĕветĕрĕ.* Чăваш чĕлхийĕн крамматтикĕ. Шупашкар, 1924. – 114 с.

9. *Федотов М.Р.* Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. I. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1980. С. 62–65; Ч. II. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1983. С. 114.

10. *Чернов М.Ф.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: Сăмах майлашăвĕн синтаксисĕ. Шупашкар, 2005. – 282 с.

*Е.И. Батченко*

# СРАВНИТЕЛЬНЫЙ АНАЛИЗ НЕКОТОРЫХ ЛЕКСЕМ ГЕНЕРАЛЬНОЙ СЛОВАРНОЙ КАРТОТЕКИ ЧГИГН И ИХ ПОДАЧИ В ЧУВАШСКО-РУССКИХ СЛОВАРЯХ

Начало регулярной работы по сбору материала для Генеральной словарной картотеки чувашского литературного языка (ГСК ЧЛЯ) Чувашского государственного института гуманитарных наук (ЧГИГН) относится к 1964 г. Рассматриваемую картотеку, по объему содержащегося в ней лексического богатства чувашского языка, можно считать значительным достижением чувашской лексикографии. В пополнении картотеки участвовали учителя, пенсионеры, студенты, научные сотрудники и лаборанты отдела языкознания ЧГИГН — люди с филологическим образованием. Она представляет собой первую успешную попытку создания необходимой лексикографической базы для работы над составлением толкового и других словарей чувашского языка.

При написании данной статьи мы ставили следующие задачи:

1) просмотреть лексемы в ГСК ЧЛЯ и в академических словарях: «Чувашско-русском словаре» (далее ЧРС, 1961) под редакцией М.Я. Сироткина, изданном в Москве в 1961 г. (25 тыс. слов); «Чувашско-русском словаре» (ЧРС, 1982, 1985) под редакцией М.И. Скворцова, изданном также в Москве в 1982, 1985 годах (40 тыс. слов).

2) описать отдельные лексемы Генеральной словарной картотеки чувашского литературного языка, подсчитать их количество и определить порядок расположения.

На сегодняшний день в ГСК ЧЛЯ хранится около двух миллионов карточек-цитат (1008 ящиков). Каждая карточка-цитата составлена на определенное слово, которое сопровождается в картотеке множеством примеров, показывающих функционирование лексемы в том или ином значении. Они раскрывают неисчерпаемый семантический потенциал,

заключенный в лексической единице. Примеры для подтверждения значений той или иной лексемы взяты:

1) из произведений чувашских писателей и поэтов (проиллюстрируем некоторые из них): *Пуçĕ арçыннăн така хуранĕнче шăратса хытарнă тăхлан* ***купташки*** *евĕр курăнать.* В. Енĕш. «Çулçă айĕнчи çырла», 1986. С. 89; *Кăчăр-кăчăр çурхи юр, Сӳсленет* ***куплак.*** *Ăшăмра сăмахсем пур, Ах, чĕлхем пуклак.* Ю. Семенов. «Çĕр çаврăнать», 1974. С. 60;

2) из журналов «Тăван Атăл», «Ялав», «Капкăн»: *Мĕншĕн юсамалла? Хӳмесене те çамрăк хурăнсен шăпиех кĕтет —* ***арасланса*** *пыракан çырма пĕрех хыпса çăтать.* А. Дурасов. « Çĕр суранĕсем» // Ялав, 1960. №1; — *Эпĕ тĕкĕнмен. Йывăçсем хăйсем хăрса тӳннĕ пулĕ, малтанхи пекех* ***юптарчĕ*** *лесник.* Капкăн, 1978. № 24;

3) из публицистических текстов газет «Коммунизм ялавĕ», «Хыпар» (1906–1907): *Çамрăк выльăхсене упраса хăвармалла, пушмак пăрусене, ĕнесене, сыснасене вăхăтра* ***пĕтĕлентермелле.*** Коммунизм ялавĕ, 1982. № 87. *Ялсенче столовăйсем уçса, çăнăх илсе çăкăр, яшка* ***пĕçерсе*** *пит аптăранă çынсене тăрантараççĕ.* «Хыпар», 1907. С. 29;

4) из архивных материалов: *Пĕр пĕчĕк ача патне тепĕр ача пырсассăн ашшĕсем калаççĕ: вăн* ***папа*** *килнĕ теççĕ;* ***папапа*** *иксĕр выльăр теççĕ.* НА ЧГИГН, I отд. Т. 21. С. 250;

5) из сборников устного народного творчества: песен, пословиц, поговорок: *Пĕчĕкçĕ кинĕм пур, алăкăн-тĕпелĕн* ***кускалать*** *(шăпăр).* «Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем». 1960. С. 230;

6) из чувашских переводов российских и зарубежных писателей (Ю. Збанацкий, И. Гончаров, М. Горький, А. Чехов, И. Гете, Я. Гашек и др.): *Йĕкехӳре кĕрет те нӳхрепе, Çиет сив çу, ăш çу* ***пайтах.*** И. Гете. «Фауст», 1979. С. 102; *Тавралăх шăпланать. Шăрчăксем* ***пĕр-пĕринпе*** *ăмăртса хытăрах чăрăклатаççĕ.* И. Гончаров. «Обломов», 1956. С. 114.

7) из учебной, научно-популярной и справочной литературы: *Час-часах амперметрăн пĕр клемми çумне плюс (+): теприн çумне* ***минус*** *(-) палли лартаççĕ.* А. Перышкин, Г. Фалеев, В. Крауклис. Физика, 1959. 7-мĕш класс валли. С. 97. ***Мамăка*** *е тĕке çуллахи ăшă та хĕвеллĕ кунсенче çумалла.* «Чăваш календарĕ», 1964. С. 119.

Нужно сразу же оговориться, что для словарных статей Толкового словаря чувашского языка более приемлемы примеры из художественных произведений чувашских писателей, т.к. «...наиболее полно богатства литературного языка проявляются в художественной литературе, художественные произведения служат центральным источником формирования картотеки» [12: 5]. Конечно, нельзя исключить использование произведений и других жанров.

Лексемы ГСК ЧЛЯ написаны на отдельных карточках (карточки-цитаты), расставлены по алфавиту, отделены разделителями, это облегчает работу пользователя картотекой. В этих карточках-цитатах широко представлены и слова, заимствованные из русского языка или через его посредство, общественно-политические и научно-технические термины, устаревшие лексемы, диалектная лексика.

В свое время научный сотрудник отдела языкознания ЧГИГН А.А. Алексеев составил два списка слов (записаны в машинописном варианте в амбарных книгах):

1. Список слов, имеющихся в генеральной словарной картотеке, но не представленных в «Чувашско-русском словаре» 1961 г. Зафиксировано 8272 слова с указанием количества карточек на каждую лексему.

2. Список слов, имеющихся в «Чувашско-русском словаре» 1961 г., но не представленных в генеральной словарной картотеке. 418 маш. стр. Лексемы расположены по алфавиту.

По этим спискам можно выявить, систематизировать и проследить лексемы при составлении словника для Толкового словаря чувашского языка.

Имеются также список слов, не подлежащих выборке при составлении генеральной словарной картотеки, и инструкция для раскладки карточек.

Анализ лексем ГСК ЧЛЯ и их подачи чувашско-русскими словарями нами проведен на примере слов на букву «М». В ЧРС (1961) зафиксировано 1136 лексем на эту букву, в ЧРС (1982, 1985) — 1296, а в ГСК ЧЛЯ — 1567 лексем. Каждая лексема объясняется примерами из разных источников, которые в той или иной мере позволяют определить объем значений данного слова. Например, обратимся к лексеме *мамăк*. На эту лексему составлено 140 карточек. Нами просмотрены и изучены все карточки на это слово. В ЧРС (1961) у него определены 3

значения: 1) «пух, пушок»: *хур мамăкĕ, мамăк тӳшек*; 2) «вата»: *мамăк утиял*; 3) «частицы, оседающие на пол во время тканья». В ЧРС (1982, 1985) их 5: 1) «пух, пушок»: *качака мамăкĕ;* 2) «хлопок»: *çĕр мамăкĕ,* 3) «вата»: *мамăк минтер*; 4) «ворс»: *пустав мамăкĕ;* 5) «хлопья», «пушинки». А в ГСК ЧЛЯ 6 значений: 1) «пух», «пушок»: *Вара виççĕшĕ те акăш* ***мамăкĕ*** *пек таса та кăпка юр çинче йăваланма тытăнаççĕ.* М. Кибек. «Хитре хĕрарăм», 1966. С. 50; 2) «хлопок»: *Чĕрĕлĕх шывĕ юхакан канавсем хушшинче виноград, çĕр* ***мамăкĕ****, табак уйĕсем ешереççĕ.* С. Элкер. «Çырнисене пухса кăларни», 1964. Т. 5. С. 319; 3) «вата»: *Вăл йĕтĕн хăлхаллă çĕлĕкне те хывман,* ***мамăк*** *утиял витĕннĕ те, çаплипех выртать.* С. Шавлы. «Кĕсле тытрăм аллăма», 1968. С. 62; 4) «ворс»: *Халь акă Уруков* ***мамăк*** *пустарса çĕлетнĕ кĕске пиншак тăхăннă.* А. Эсхель. «Хĕвеллĕ çумăр», 1965. С. 195; 5) «хлопья», «пушинки»: ***мамăк*** *çӳппи*; 6) «паутинки», «пушинки гусениц, растений»: *Симĕс çĕмĕрт сапакисене хурт* ***мамăкĕсем*** *явала-явала илнĕ.* Ю. Скворцов. «Гипотеза», 1963. С. 13.

На лексему *марка* собрано 39 карточек. В ЧРС (1961) зафиксировано 3 значения: 1) «почтовая марка»: *тăвататă тенкĕллĕ марка*; 2) «клеймо на товарах»: *завод марки*; 3) «денежная единица»: *Германи марки.* В ЧРС (1982, 1985) — 4 значения: 1) «почтовая марка»: *виçĕ пуслăх марка*; 2) «клеймо»: *фабрика марки*; 3) «сорт, качество»: *цемент марки, хурçă марки,* 4) «денежная единица некоторых стран»: *Финлянди марки.* А на основе ГСК ЧЛЯ устанавливаются 5 значений: 1) «почтовая марка»: *Ман бандероль çине кирлĕ* ***марка*** *çыпăçтарчĕç.* Капкăн, 1976. № 2. С. 4; 2) «клеймо»: *Таймырти нумай пуянлăх Дудинка алли витĕр тухать, ун* ***маркипе*** *çӳрет.* Х. Уяр. «Илем кӳрекен» // Ялав, 1977. № 8. С. 23; 3) «сорт», «качество»: *Киле каяс чух вĕсене вăл çак тĕрлĕ* ***маркăллă*** *пирус-сигаретсене илсе кайса парнелет ак.* А. Емельянов. «Хура кăрăç», 1981. С. 34; 4) «денежная единица некоторых стран»: *Кунта ăна уйăхра вăтăр нимĕç* ***марки*** *тата типĕ паек парса пыма тытăнчĕç.* И. Григорьев. «Çĕлен сăнни», 1979. С. 30; 5) «доброе имя», «авторитет»: *Коллектив хăй* ***маркине****, хăй ятне çӳллĕ шайра тытма тăрăшать.* Л. Степанов, М. Ишбаев. «Çамрăксен хастарлăхĕ вĕри» // Ялав, 1968. № 11. С. 26.

Лексема *мачча* зафиксирована на двухстах карточках. Этому слову в ЧРС (1961) приписываются 2 значения: 1) «потолок, перекрытие»: *мачча кашти*; 2) «чердак»: *мачча çинче.* В ЧРС

(1982) их 3: 1) «потолок» *пăрăслă мачча*; 2) «чердак»: *мачча чӳречи;* 3) «зенит, небесный свод»: *тӳпе мачч*и. В ГСК ЧЛЯ — 4: 1) «потолок»: *Ара, **мачча** каштинчен иртсе ларсах калаҫас терĕм-ха,эпĕ,— ăнлантарчĕ Ҫерахви.* В.Алендей.«Тăрисем ҫӳлте юрлаҫҫĕ», 1962. С. 50; 2) «чердак»: *Ванюш, арăмĕ таврăннине илтсен, **мачча** ҫинчен тӳрех сиксе анчĕ.* В. Ухли. «Шуркелсем», 1966. 2-мĕш кĕн. С. 128; 3) «зенит, небесный свод»: *Башня тӳпе **маччине** шăтарса тухнăн, ҫăлтăрсем патне ҫитнĕн туйăнать.* И. Григорьев. «Тӳпери хунарсен вăчăри» // Ялав, 1967. № 5. С. 25; 4) «предел, предельная высота»: *Пенси вăл пыл калакки мар, унăн **маччи** пур.* Капкăн, 1987. № 3. С. 10.

Лексема *май* в ЧРС (1961) г. выявляется в девяти значениях, в ЧРС (1982) дается 15 значений, а в ГСК ЧЛЯ — 17 значений. У лексемы *макăр* в ЧРС (1961) — 9 значений, в ЧРС (1982) — 3 значения, а в ГСК ЧЛЯ — 4 значения. Примеры можно умножить.

При сравнении спектра этих значений можно сказать, что в рассматриваемых нами академических словарях учтены не все значения. Нужно еще подчеркнуть, что в ГСК ЧЛЯ зафиксированы и такие лексемы, которые не включены в академический словарь чувашского языка 1961 года. Это объясняется тем, что «во время создания ЧРС (1961) не велась работа над словарной картотекой» [13:127]. М.Ф. Чернов, анализируя следующий академический словарь (1982) считает, что «в значительном улучшении, по сравнению с другими словарями, лексикографической разработки слов чувашского языка составителям словаря очень большую помощь оказала словарная картотека Чувашского научно-исследовательского института, в которой в период работы над словарем (ЧРС, 1982) насчитывалось 600 тыс. карточек. Впервые при составлении чувашско-русского словаря широко использована словарная картотека. Она, несомненно, помогла поднять на более высокий уровень теорию и практику чувашской лексикографии. С помощью этой картотеки оказалось возможным не только заметно пополнить словник словаря, но и полнее, глубже и точнее характеризовать семантическую структуру слов и их системные связи, а также сочетаемостные возможности» [22 : 41].

Далее в таблицах проследим несколько лексем на букву «М», которые зафиксированы или не зафиксированы в ЧРС (1961, 1982):

*Таблица № 1*

| лексема | ЧРС, 1961 | ЧРС, 1985 | ГСК |
|---|---|---|---|
| ***магистральлĕ*** | – | – | + |
| ***магистратура*** | + | – | + |
| ***магнитлăх*** | – | – | + |
| ***майĕ-майĕпелен*** | – | – | + |
| ***май-алай*** | – | – | + |
| ***майлакалан*** | – | – | + |
| ***майраслу*** | – | – | + |
| ***макăрашуллă*** | – | + | + |
| ***макротĕнче*** | – | – | + |
| ***максималист*** | – | + | + |
| ***малай*** | – | + | + |
| ***малка*** | – | – | + |
| ***маляр*** | – | + | + |
| ***мальва*** | – | + | + |
| ***мамайлăк*** | – | – | + |
| ***мамакка*** | – | – | + |
| ***мамас*** | – | – | + |
| ***мамăлтăк*** | – | + | + |
| ***мамук*** | – | – | + |
| ***манашка*** | – | + | + |
| ***манашкăлла*** | – | + | + |
| ***манго*** | – | + | + |
| ***маникюрша*** | – | – | + |
| ***маниловка*** | – | – | + |
| ***маниока*** | – | – | + |
| ***манипури*** | – | – | + |
| ***манирсĕр*** | – | – | + |
| ***манкалина*** | – | – | + |
| ***манкăлтак*** | – | – | + |
| ***манкуртлăх*** | – | – | + |
| ***манмаслăх*** | – | – | + |
| ***маршла*** | – | – | + |
| ***маслап*** | – | – | + |
| ***материалист*** | – | + | + |
| ***мăй-май*** | – | + | + |
| ***мăкăллă*** | – | – | + |
| ***мăкăльлен*** | – | + | + |
| ***мăкăл-мăкăл*** | – | – | + |
| ***мăклака*** | – | + | + |
| ***мăнтăрккалан*** | – | + | + |
| ***мăчăлти*** | – | + | + |
| ***мăшăрăн*** | – | – | + |
| ***мăшкăлавлă*** | – | + | + |
| ***мăшкăлчаххăн*** | – | – | + |
| ***мăян-суран*** | – | + | + |
| ***мемме*** | – | – | + |

| | | | |
|---|---|---|---|
| *менеджер* | – | – | + |
| *мертте* | – | – | + |
| *мерченлĕ* | – | – | + |
| *мешехет* | – | – | + |
| *мĕтĕлтет* | – | – | + |
| *минкрев* | – | + | + |
| *мирлĕ* | – | + | + |
| *моçкă* | – | – | + |
| *мошенник* | – | + | + |
| *муза* | – | + | + |
| *муклат* | – | + | + |
| *мулçă* | – | + | + |
| *мулюк* | – | – | + |
| *мурккаллă* | – | – | + |
| *мурлăх* | – | + | + |
| *мухтанчăклă* | – | + | + |
| *мучар* | – | – | + |
| *мучук* | – | – | + |

Этот список можно продолжить.

В следующей таблице приведены лексемы, вынесенные в словник, и речения к ним, зафиксированные в чувашско-русских словарях и в ГСК ЧЛЯ.

*Таблица № 2*

| лексема | ЧРС, 1961 | ЧРС, 1982 | ГСК ЧЛЯ |
|---|---|---|---|
| *майра* | *майра йĕппи*<br>*майра кĕпçи*<br>*майра кайăкĕ*<br>*майра пуçĕ*<br>*майра çĕмелĕ*<br>*майра çухи*<br>*майра çырли*<br>*майра хупĕ* | *майра аппа*<br>*майра йĕппи*<br>*майра кайăкĕ*<br>*майра кăмпи*<br>*майра кĕпçи*<br>*майра çухи*<br>*майра хупĕ* | *майра йĕппи*<br>*майра кĕпçи*<br>*майра кайăкĕ*<br>*майра кăмпи*<br>*майра çĕмелĕ*<br>*майра çĕрри*<br>*майра çухи*<br>*майра пăрчканĕ*<br>*майра таши*<br>*майра тĕрри*<br>*майра хупĕ*<br>*майра шăрçи* |
| *май* | *кĕвĕ май*<br>*май мар*<br>*мая çавăрăн*<br>*май çаптар*<br>*сăмах май* | *ал май мар*<br>*май мар*<br>*сăмах май*<br>*çула май* | *алă май*<br>*май кил*<br>*май ўк*<br>*мая яр*<br>*сăмах май* |
| *майăн* | *ачи майăн килнĕ* | *ачи майăн килнĕ* | *майăн шăл* |
| | *çапла майан* | | *сăмах майăн*<br>*тĕк майăн сăтăр* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| *маншăн* | | *маншăн пулсан хут купăс*<br>*маншăн пурĕ пĕрех* | *маншăн пулсан хут купăс*<br>*маншăн пурĕ пĕрех* |
| *мачча* | *çăвар маччи* | *маччана сурса вырт*<br>*çăвар маччи* | *маччана сурса вырт*<br>*çăвар маччи*<br>*тӳпе маччи* |
| *мăй* | *мăй пăран*<br>*мăй пăран авăтать*<br>*мăй юхни* | *мăй касси*<br>*мăй таран*<br>*мăй юхни*<br>*мăйна пăрса татăп*<br>*мăйран çакăн* | *мăй касси*<br>*мăй çыххи*<br>*мăй таран*<br>*мăй тутри*<br>*мăй юхни*<br>*мăйна пăрса татăп*<br>*мăйран çакăн* |
| *мăн* | *мăн кайăк*<br>*мăн сăмах*<br>*мăн çăкăр*<br>*мăн пăрçа*<br>*мăн тӳрт*<br>*мăн хăяр*<br>*мăн хăях*<br>*мăн хырăмлăх*<br>*мăн шатра*<br>*мăн шăрчăк*<br>*мăн шăши* | *мăн кĕрӳ*<br>*мăн кăрлач*<br>*мăн мăран*<br>*мăн пăта*<br>*мăн пыршă*<br>*мăн сăвăр*<br>*мăн сăмах*<br>*мăн тӳрт*<br>*мăн хăях*<br>*мăн хурчка*<br>*мăн шăрчăк*<br>*мăнна хур* | *мăн кăрлач*<br>*мăн кĕрӳ*<br>*мăн мăран*<br>*мăн пăта*<br>*мăн пыршă*<br>*сăн сăвăр*<br>*мăн сăмах*<br>*мăн тӳрт*<br>*мăн хăях*<br>*мăн хырăмлăх*<br>*мăн шатра*<br>*мăн шăрчăк*<br>*мăн çăкăр*<br>*мăн пăрçа* |

К сожалению, с 90-х годов прошлого века картотека не пополняется, поэтому ГСК ЧЛЯ, включающая значительный лексический материал, не может претендовать на полный охват всего богатства чувашского литературного языка. По мнению теоретиков и практиков современной лексикографии, «очень важно, чтобы картотека была полной во всех ее частях, чтобы она адекватно отражала лексико-фразеологический состав языка в данный временной период, чтобы регистрировались и наиболее употребительные, и редкие (устарелые и устаревающие), и вновь появляющиеся слова. Она должна отвечать требованиям полного охвата лексических единиц, а также достаточности материалов на каждый факт нового употребления, будь то лексическая единица, морфологическое или синтаксическое явление. Исследователю, лексикографу необходимо такое количество материалов, чтобы выводы его не были случайными,

чтобы они находили подтверждение в языковой практике» [15 : 20–21].

Несмотря на это, материал данной картотеки, хранящейся в отделе языкознания, мог бы быть хорошим подспорьем при составлении в дальнейшем переводных, тематических, терминологических, синонимических, антонимических, отраслевых словарей, а также может служить основой для выполнения других лингвистических работ. Собранный материал представляет огромную научную ценность, так как подобной картотеки по чувашскому языку нет во всем мире. Думается, что Генеральная словарная картотека заработает в полную силу только тогда, когда мы будем иметь ее электронную версию и электронную публикацию. Нами в какой-то мере эта работа уже начата: в алфавитном порядке введено в компьютер около 4 тысяч карточек со всевозможными значениями. Надо учесть и то обстоятельство, что ГСК ЧЛЯ будет более совершенной, если уже сейчас она будет пополняться и в электронном варианте. Конечно же, мы должны иметь в виду и «Неологический словарь чувашского языка» Г.А. Дегтярева, где зафиксированы новые значения затемненных слов и новые слова, которые в нынешнее время появляются в нашем словоупотреблении как на базе чувашского языка, так и в виде заимствований из других языков. Последние являются важным источником пополнения и обновления активного словарного запаса у носителей чувашского языка.

## Литература

1. *Андреев Н.А.* Ядро основного словарного фонда чувашского языка // Записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1953. Вып. 8. С. 149–167.

2. *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Словарь чувашского языка. Вып. VIII. «Л». «М». Чебоксары: Чувашское книжное изд-во, 1935. – 355 с.

4. *Гузеев Ж.М.* Проблематика словника толковых словарей тюркских языков. Нальчик, 1984. – 156 с.

5. *Гузеев Ж.М.* Семантическая разработка слова в толковых словарях тюркских языков. Нальчик, 1985. – 193 с.

6. *Дегтярев Г.А.* Чăваш чĕлхин ҫĕнĕлĕх словарĕ. 1 том. А–П. ЧПГĂИ. Шупашкар, 2003. – 228 с.

7. *Долгова А.П.* Ҫынна палăртакан япала ячĕсене словарьте ăнлантарасси // Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕ. ЧПГĂИ статьясен пуххи. Шупашкар, 1999. С. 94–123.

8. *Егоров В.Г.* Словарный состав современного чувашского литературного языка // Записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1953. Вып. 8. С. 81–148.

9. *Ефимов Ю.Ф.* На подступах к толковому словарю (Насущные задачи чувашской лексикографии) // Советская Чувашия, 1993. 26 августа.

10. *Ефимов Ю.Ф.* Проблемы лексикографии // Вестник Чувашской национальной академии / Чăваш наци академийĕн ăслăлăх хыпарĕсем. Чебоксары, 1994. № 2. С. 191–195.

11. *Ефимов Ю. Ф.* Ăнлантару словарĕнчи пулăшу сăмахĕсем // Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕ. ЧПГĂИ статьясен пуххи. Шупашкар, 1999. С. 85–93.

12. *Левашова Е.А., Рогожникова Р.П.* Принципы отбора источников для картотеки словаря современного русского литературного языка // Теория и практика современной лексикографии. Л.: Наука, 1984. С. 3–9.

13. *Медведкова Т.Ф.* Работа над русско-чувашским и чувашско-русским словарями // Н.И. Ашмарин — основоположник чувашского языкознания: Сб.ст. / ЧНИИ. Чебоксары, 1971. С. 126–130.

14. *Ожегов С.И.* Словарь русского языка. М.: Русский язык, 1990. — 921 с.

*15. Рогожникова Р.П., Чернышева Л.В.* Организация словарной картотеки на базе автоматизированной системы // Теория и практика современной лексикографии. Л.: Наука, 1984. С. 20–27.

*16.Сергеев В.И.* Чувашско-русский толковый словарь названий лиц. ЧГУ. Чебоксары, 2004. — 232 с.

17. *Сосаева А.А.* Хальхи чăваш чĕлхинчи вариантлă сăмахсем // Тăван чĕлхе икчĕлхелĕх тапхăрĕнче. ЧПГĂИ статьясен пуххи. Шупашкар, 1991. С. 95–120.

18. Список слов, имеющихся в Генеральной картотеке чувашского языка, но не представленных в «Чувашско-русском словаре» 1961 г.

19. Список слов, имеющихся в «Чувашско-русском словаре» 1961 г., но не представленных в Генеральной словарной картотеке.

20. Чăвашла-вырăсла словарь. Чувашско-русский словарь / Под ред. М.И. Скворцова. М., 1982. — 712 с.; издание второе, стереотипное. М., 1985. — 712 с.

21. Чăвашла-вырăсла словарь. Чувашско-русский словарь / Под ред. М.Я. Сироткина. М., 1961. — 630 с.

22. *Чернов М.Ф.* Чувашские словари. Учебное пособие для студентов. ЧГПИ. Чебоксары, 1992. — 63 с.

*О.Р. Студенцов*

# ХАЛЬХИ ЛЕКСИКОГРАФИРЕ БИБЛИ КУÇАРĂВĔСЕМПЕ УСĂ КУРАССИ

30-мĕш çулсемччен хуçаланнă атеизм политикине пула функциллĕ стильсенчен пĕри – тĕн литератури – чĕлхеçĕсемшĕн уçман çеремпе танах пулнă. Паянхи лексикографишĕн çак хутлăхра пĕлмелли-тĕпчемелли чылай тесен те йăнăш пулмĕ. Çакăн йышши «тĕксĕм вырăнсенчен» пĕри вăл — куçарнă тĕн тексчĕсенчи сăмахсен çĕнĕ е палăртман пĕлтерĕшĕсем.

Асăрхаттарас пулать, калаçу кунта ытларах вырăсларан чăвашла куçарнă текстсем пирки пырать. Канонланă Библи кĕнекисене, тĕпрен илсен, авалхи еврей тата грек чĕлхипе çырнă пулин те, чăваш куçаруçисемшĕн оригинал чĕлхи вырăнне ытларах вырăс чĕлхи пулнă (пĕрремĕш кĕнекесене Н.И. Ильминский ертсе пынипе тутарларан куçарни паллă, анчах вĕсен никĕсĕнче те Синодăн 1876 çулхи вырăсла кăларăмĕ). Сăмах май каласан, тĕн куçарăвĕсенче çак таранччене çӳлерех асăннă йăла пуç пулса тăрать. Каланине çирĕплетме пĕр цитата илсе парăпăр. Дэвид Кларк (Швецири Библи куçарăвĕ институчĕн тытăмĕнчи Пĕрлешӳллĕ Библи обществисен консультанчĕ) хальхи куçарусем пирки çапла çырать: «Перед библейским переводчиком встает множество проблем. Во-первых, с какого языка переводить? Далеко не все переводчики владеют древнееврейским и древнегреческим и вместо оригинального библейского текста они вынуждены использовать труды своих предшественников. Так, ... при переводе на языки народов СНГ – русский Синодальный перевод» [3]. Ятарлă литература ку проблемăна ăнланма май пур таран çутатнă, çавăнпа та эпир ку ыйту çинче нумайлăха чарăнса тăмăпăр.

Çапла вара, чăвашла текстсенчи çĕнĕ е ку таранччен уйăрман пĕлтерĕшсене хальлĕхе вырăсла палăртма тивет. Тен, вĕсене пурне те словарьсен пулас кăларăмĕсене кĕртме май килмĕ, анчах çак ĕçре аяларах илсе панă хăш-пĕр тĕслĕх усăллă пуласса шанас килет.

Малтанах Псалтирьти [4] тĕслĕхсене тишкерĕпĕр (пĕрремĕш число – псалом номерĕ, иккĕмĕшĕ – псаломри йĕрке хисепĕ).

Пс.*31:4. ... *Свежесть моя исчезла, как в летнюю **засуху**.* – ...Çуллахи **шăрăхпа** типсе кайнă пек, сăн-сăпатăм пĕтсе ларчĕ.

ВЧС: засуха уяр çанталăк, типĕ çанталăк.

ЧВС: шăрăх жара, зной, жар; пекло (*разг.*)...

Словарьсенчи статьясене çак пĕлтерĕше хушсан вырăнлă-тăр. Тĕн куçарăвĕсенче çеç мар, кулленхи калаçура та асăннă пĕлтерĕшпе анлă усă кураççĕ.

Пс. 17 : 5. *Объяли меня **муки** смертные.* Мана вилĕм **чирĕсем** ерчĕç.

ВЧС: мука асап, терт, хĕн.

ЧВС: чир 1. болезнь, заболевание; недуг (*книжн.*), хворь (*прост.*);... 2. эпидемия.

Куратпăр ĕнтĕ, нихăш словарьте те пĕрне-пĕри тивĕçлĕ пĕлтерĕш çук. *Асап, терт, хĕн* тата *чир* сăмахсен пĕлтерĕшĕсем, паллах, çывăх. Еврей оригиналне, унти шухăша тĕпчемесĕр чăвашла мĕншĕн çапла куçарнине ăнлантарма йывăр. Тепĕр енчен, шăп çак контекстра *асап, терт* тата *хĕн* сăмахсемпе усă курма чăннипех те май килмен пулас, мĕншĕн тесен вĕсем *ерчĕç* глаголпа шухăш тĕлĕшĕнчен çыхăнсах каймаççĕ.

Пс. 1 : 1. *Блажен муж, который... не сидит в **собрании** развратителей.* – ... Астаракан çынсенĕн **ушкăнĕнче** ларман çын телейлĕ.

ВЧС: собрание 1. (*коллекция*) пухă;... 2. (*общее заседание*) пуху;... 3. (*название выборных учреждений*) пуху;... 4. (*встреча людей*) пухă.

ЧВС: ушкăн 1. толпа, группа, партия, коллектив, компания, артель... 2. группировка, объединение. 3. стая; вереница; косяк. 4. часть селения, околоток. 5. группа, семья. 6. *диал.* род, родня. 7. пучок, связка. 8. *диал.* раз.

Вырăсла-чăвашла словарьти 4-мĕш пунктра **ушкăн** сăмаха хушмалли куç кĕрет. Чăвашла-вырăсла словарьте **собрание** тенине 1-мĕш пунктра палăртмалла.

Пс. 18 : 6. *И оно [солнце]... радуется, как **исполин**, пробежать поприще.* — Хĕвелĕ... хăй çулĕпе чупакан **паттăр** пек савăнса пырать.

---

* Кĕскетӳсем: Пс. – Псалтирь [4]; ВЧС – вырăсла-чăвашла словарь [5]; ЧВС – чăвашла-вырăсла словарь [6].

ВЧС: исполин 1. улăп; 2. *перен.* пысăк çын, улăп.

ЧВС: паттăр 1. герой, богатырь;... 2. крепкий, мощный, могучий;...

*Исполин* сăмахăн **паттăр** пĕлтерĕш, *паттăр* сăмахăн **исполин** пĕлтерĕш словарьсенче сăнланман. Пулас ĕçре çаксене шута илмеллех тесе шутлатпăр, унсăрăн словарь статйисенчи пĕлтерĕш речĕ тулли мар пулĕ.

Çакăн йышши тӳркилĕве сахалтан тата икĕ вырăнта асăрхама пулать:

*Не спасется царь множеством воинства;* ***исполина*** *не защитит великая сила.* — Патша çарĕ нумайййипе çăлăнас çук, **паттăра** та вăйĕ нумайҫи хăтарас çук (Пс. 32 : 6). *Но, как бы от сна, воспрянул Господь, как бы* ***исполин****, побежденный вином...* - Анчах Турă, ăйхăран вăранса тăнă пек, эрех ĕçсе вăйран кайнă **паттăр** пек... (Пс. 77 : 65).

Апла пулсан, Псалтирьте çак пĕлтерĕш тӳркилĕвĕсем çирĕпленнĕ теме сăлтав пур.

Пс. 15 : 5. ...*Ты держишь* ***жребий*** *мой.* — Манăн **телее** Эсĕ тытса тăратăн.

ВЧС: жребий 1. шăпа; ... 2. (*судьба, участь*) шăпа, малашнехи кун-çул; пӳрни, çырни.

ЧВС: телей счастье, удача;...

Асăннă сăмахсене икĕ словарьте те палăртман, вĕсем вара (*шăпа*, *малашнехи кун-çул*, *пӳрни*, *çырни* тата *телей*; *счастье*, *удача*, *судьба*, *участь* тата *жребий*) питĕ çывăх пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа та вĕсем словарьте хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнсан ытлашши пулас çук.

Пс. 22 : 3. ... *Направляет меня на* ***стези*** *правды ради имени Своего.* — ... Мана Хăй ячĕшĕн тӳрĕлĕх **çулĕпе** ярать.

Вырăсла-чăвашла словарьте **стезя** сăмаха статья туса кĕртмен, çавăнпа пулас çак варианта чăвашла-вырăсла словарьте те шута илмен: **çул** 1. дорога, путь; трасса... 2. путь, дорога, путешествие;... Ытти пĕлтерĕш хушшинче те çӳлерех асăннă тӳркилӳ палăрмасть. Пирĕн шутпа, малаллахи лексикографи ĕçĕсенче ăна шута илмеллех.

Вырăн перекетлес тĕллевпе ытти тĕслĕхсене [туп.:2] чăвашла контекстра çеç, словарьсенчи пĕлтерĕшсемсĕр тата комментарисĕр илсе парăпăр:

Пĕлĕмçĕ — **прорицатель**. *Израиль ывăлĕсем тата Веор ывăлĕ Валаам пĕлĕмçе вăрçăра хĕçпе касса вĕлернĕ.*

Ăслăлăхлă — **загадочный**. *Санăн чуну пĕтĕм çĕре витсе тăнă, пĕтĕм тĕнчене эсĕ ăслăлăхлă юмах-сăмахпа тултарнă.*

Пĕлĕмлĕх — **учение**. *Çакă кĕнекери ăслăлăха, пĕлĕмлĕхе эпĕ çырса хутăм.*

(Мул) усравлăх(ĕ) — **сокровищница**. *Турă сăмахĕпе мул усравлăхĕсем уçăлса каяççĕ.* Н.И. Ашмарин хăй словарĕнче ку сăмаха «хранилище» тесе палăртнă, контексчĕ вара çӳлерех илсе паниех. Пирĕн шутпа, çак пысăках мар уйрăмлăха Ашмаринăн алă айĕнче вырăсла оригинал пулманнипе çеç ăнлантармалла.

Киревсĕрлĕх — 1. **бесславие**. *Наян çын вараланчăк чул евĕрлĕ, унăн киревсĕрлĕхĕнчен кирек кам та йĕрĕнет;*
2. **невежество**. *Çӳлти Турă халалланă сăмаха ăшăнта тыт та киревсĕрлĕхрен сыхланса тăр.*

Ырăлăх — 1. **любезность**. *Арăм ырăлăхĕ арне савăнтарать;*
2. **благоволение**. *Мĕн пур ырлăх пурте Турă хушнипе пулать;*
3. **дар**. *Хăват паракан ырăлăх, ăс паракан ырăлăх, ăн паракан ырăлăх;*
4. **достоинство**. *Хăйсемпе пĕрле вĕсенĕн ырлăхĕсем те пĕтсе лармаççĕ-и?*

Çӳлерех асăннă тăвату ăнлава палăртма тивĕçлĕ сăмах (е сăмах майлашăвĕ) шыраса тупма йывăр пулни куçаруçăна ирĕксĕрех ырăлăх сăмаха универсаллă тума хистенĕ. Ик чĕлхеллĕ словарьсенче çак пĕлтерĕшсем пĕри те сăнланман.

Аслăлăх — 1. **власть**. *Турăран аслăлăх ан тилмĕр.*
2. **достоинство**. *...Княçсенĕн аслăлăхне çухатать* [2].
3. **слава**. Ку пĕлтерĕше аслăлăх сăмахпа «Матфей çырнă Евангелин» 1873 тата 1879 çулхи кăларăмĕсенче çеç палăртнă. Малаллахисенче мухтав тӳр килӳпе усă курнă.

Аслăлăх чăвашла-вырăсла словаре статья пулса кĕреймен, пулас кăларăмра вăл хăйне тивĕçлĕ вырăн тупасса шанас килет.

Юлашкинчен çакна каласа хăвармалла. Библи куçарăвĕсем пĕрмай аталанса пыраççĕ. Çĕнĕ куçарусем çĕнĕ пĕлтерĕшсем, çĕнĕ сăмахсем т. ыт. те илсе килеççĕ. Анчах иртнине шута илмесĕр пулассине йĕркелеме йывăр.

Кашни çĕнĕ сăмах, çĕнĕ пĕлтерĕш, çĕнĕ фразеологизм сăмах ăстишĕн ахах пĕрчи вырăннех пулмалла. Çав ахах пĕрчине, вăл пĕртен-пĕр пулсан та, сыхласа хăварасси — пирĕн тĕллевсенчен пĕри.

**Литература**

1. Библия. Книги Священного Писания Ветхого и Нового Завета / Российское Библейское Общество. М., 1993.

2. Книги Иисуса Сирахова, Иова, Иисуса Навина, Товита, Руфь и первая Маккавейская / Православ. миссионер. о-во. Симбирск: Тип. А.Т. Токарева, 1889.

3. Новости библейского перевода / Институт перевода Библии. 2000. № 2(9).

4. Новый завет Господа нашего Иисуса Христа. Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă çĕнĕ сăмах. Симбирск: Типо-литогр. Губерн. правления, 1911.

5. Русско-чувашский словарь / Под ред. И.А. Андреева и Н.П. Петрова. М.: Сов. Энциклопедия, 1971 [ВЧС].

6. Чувашско-русский словарь / Под. ред. М.И. Скворцова. 2-е изд., стереотип. М.: Рус. яз., 1985 [ЧВС].

*Е.Н. Лисина*

## БИБЛИН ЧӐВАШЛА КУҪАРӐВӖ ПИРКИ

Библи куҫаракансене нумай вӗрентеҫҫӗ. Вӗсем валли тӑтӑшах семинарсем ирттереҫҫӗ: сӑваплӑ кӗнекесенчи тӗп сӑмахсене, кӑткӑс вырӑнсене мӗнлерех куҫармаллине ӑнлантараҫҫӗ. Ҫавӑн пек семинар хыҫҫӑн, килсене саланас умӗн, ялан тенӗ пекех уйрӑлу каҫӗ ирттереҫҫӗ. Пӗррехинче тӑлмачӑсенчен хӑйсен ҫӗршывӗ ҫинчен каласа пама ыйтрӗҫ. Акӑ пӗрин хыҫҫӑн тепри сцена ҫине тухать. «Пирӗн ҫӗршыв питӗ пуян, пирӗн нефть пур», — тет пӗри. Теприсен газ пур иккен, тата теприсем ҫӗр айӗнчен кӑларакан хаклӑ йышши чулӗпе хӑпартланаҫҫӗ («пирӗн алмаз пур!», «пирӗн изумруд пур!»). Манӑн черет ҫывхарсах пырать-ха... Ҫавӑн чухне эпӗ темӗншӗн Франци ҫӗршывне аса илтӗм, вуланӑччӗ тахӑҫан: ҫав чаплӑ патшалӑхӑн ҫӗрӗ «чухӑн» иккен — унта нефть те, газ та, ылтӑн-кӗмӗл те ҫук. Акӑ мана та черет ҫитрӗ. «Хӗссе» лартсассӑн, чӑн сӑмах тупӑнатех ҫав! Сцена ҫине тӑн-тӑнах утса тухрӑм. Манӑн та каламалли пур: «Пирӗн нефть ҫук. Пирӗн газ та ҫук. Пирӗн ылтӑн-кӗмӗл те ҫук». Умра шӑкӑрин кӑна ларакан тӑлмачӑсем ҫине пӑхса илетӗп те — сӑнӗ-пичӗсем салхулансах пыраҫҫӗ: хӗрхенеҫҫӗ пулӗ ҫав (туссем-ҫке эпир!), «шалккӑ Ева Николаевнӑна» теҫҫӗ пуль. Эпӗ самант шӑп тӑтӑм та каларӑм чӑн сӑмаха: «Пирӗн хаклӑран та хаклӑ ӗмӗрлӗх мул пур, вӑл *чӑваш чӗлхи* ятлӑ. Библи куҫарма мӗн кирлӗ, ҫавӑ пурте пур ҫак чӗлхере!». Ша-а-ав! — алӑ ҫупса ячӗҫ. Унта хӑйне евӗрлӗ халӑх — Библи куҫарнӑ чухне кирлӗ сӑмах шыраса тертленекен халӑх — ларатчӗ ҫав. Кайран мана капӑр сырса илчӗҫ: «Эсир ҫав сӑмаха мӗнле куҫаратӑр?», «Ҫав сӑмаха мӗнлерех куҫармалла-ши?» теҫҫӗ.

Чӑнах, 16-мӗш ҫул Библи куҫарас тӗлӗшпе ӗҫлесе, эпӗ кашни кун чӗлхемӗрӗн пуянлӑхӗнчен тӗлӗнетӗп. Тен, ҫак пуянлӑх Библире — Пысӑк Кӗнекере — уҫӑмлӑрах курӑнать? Шӑпах ҫакӑн ҫинчен каланӑччӗ те ӗнтӗ аслӑ сӑвӑҫӑмӑр Геннадий Айхи. Ҫак сӑмах питӗ пӗлтерӗшлӗ пулнӑран эпӗ ӑна ҫырсах хунӑ, ун чухне хамӑр хушшӑмӑрта вырӑс ҫынни ларнипе Айхи

ăна вырăсла каланăччĕ, çавăн пекех кăтартатăп та: «До этого наш язык не был затребован вот так, разом, всеобъемлюще, во всем объеме, во всей мощи и красоте, как при переводе Библии. А так язык требуется «частично», прозаик пишет роман, поэт — поэму, в Библию же входит весь корпус языка, и чувашский язык там предстает просто величественно! Я прочел статью Комы Иванова (Вячеслав Всеволодович Иванов тĕпчевçе туссем хушшинче çапла калаççĕ. — *Е.Л.*), он пишет, что сейчас в мире 1600 языков, а через... (хăш çулне эпĕ çырмасăр сиктерсе хăварнă иккен. — *Е.Л.*) лет останется 600 языков. Среди них будет и чувашский язык — благодаря Библии».

Çыравçăсем хушшинче пирĕн куçарăва чи тĕплĕн вулаканни Айхи пулчĕ пулмалла. Эпир *Господь* сăмаха *Çӳлхуçа* тесе куçарма сĕннине пĕлсессĕн те вăл савăнмаллипех савăннăччĕ. «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ статйинче (2001 çул, кăрлач, 20) вăл çапла çырать: «*Господь* сăмаха чăвашла *Çӳлхуçа* теме сĕнни, ман шутпа, питĕ ĕнентерӳллĕ, чăваш Библийĕшĕн (Турăшăн та, тенĕ пек) сулăмлă, тĕрĕс те вырăнлă. Çак сăмах хăйне уйрăм, пĕртен-пĕр пулни — питĕ ăнăçлă, çапла вăл Турăшăн çеç пулĕ. Анчах çакна кайран «*Çӳл хуçа*» туса пăсса ан яччăрччĕ. Пирĕн хăш-пĕр «чĕлхе реформаторĕсем» каллех, утмăлмĕш çулсенчи пек, *тунти кун, юн кун, хĕр арăм, хĕр ача, çăл куç, хĕвел анăç* т. ыт. те тесе аташнисем часах иртсе кайĕç... *Чăвашьен* те унчченхи пекех пулĕ — авă белоруссем «Бело Руссия» темеççĕ хăйсен çĕршывне, *Финлянди* те финсемшĕн «Фин ляндия» мар. Куçаруçăсем пирки калас пулсассăн, Библин пĕр пайне — Пророксен кĕнекисене — куçарса кăларнă чухне вĕсем Турă Çырăвне «татăк-кĕсĕк» сăмахсем кĕртмесĕр питĕ тĕрĕс турĕç. Пĕтĕм Библие кăларнă чухне те çак çич-сакăр çуллăх «реформăран» асăрханасчĕ, йĕркеллĕ, илемлĕ тăвасчĕ аслă Ĕçе».

Тĕлĕнмелле: *Çӳлхуçа* сăмаха çав тери савăнăçлăн йышăннăскер, Айхи 2006 çулхи нарăс уйăхĕн 7-мĕшĕнче (пурăнасси шăпах икĕ эрне юлнă!) тумалли ĕçсем çинчен калаçнă чухне мана хăйĕн итальянларан куçарнă кĕнекине (Ассизи Францискĕ. Хĕвел пиччене халалланă мухтав юрри. Шупашкар, 2000) пăхса тухса, унта *Çӳлхуçа* сăмаха кĕртсе çĕнĕрен пичетлесе кăларма ыйтрĕ. Нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕнче вара Мускава çитсе ун патне кĕтĕм çеç, ун умне пырса тăтăм кăна, вăл (тепĕр кунне пирĕнтен уйрăлас çын) тӳрех: «Библи мĕнле?» тесе ыйтрĕ. Эпĕ: «Авалхи халала куçарса пĕтертĕмĕр», — терĕм те, вăл

йăвашшăн-йăвашшăн кулса: «Тавах Турра!» тесе сăхсăхса илчĕ. Чунĕ çывăхĕнчех пулнă иккен çак Кĕнеке...

Паллах, сăваплă кĕнекесене куçарма кăткăс та яваплă. Пĕр шутласан, хăраса каймалла: И. Яковлев çирĕп никĕс хывса хăварман пулсан, Библири хăш-хăш кĕнекене куçарса (Çĕнĕ Халалах мĕне тăрать!), еплерех ĕçлемеллине кăтартса хăварман пулсан, мĕнле пикенеттĕмĕр-ши çак ĕçе?.. Библире авалхи сăмахсем те, çĕнĕ сăмахсем те кирлĕ, мана хăш чухне çак Кĕнеке тăлмачăсене хăй ертсе пынă пек туйăнать, сăмахран, Авалхи Халал (Ветхий Завет) хистесех кивелнĕ сăмахсене шыраттарать. Ăна кирлĕ сăмахсем пирĕн чĕлхере пурте пур, вĕсем чĕлхе вĕçĕнче çук пулсассăн, айăпĕ пирĕнте — манса кайнă эпир. «Щит» сăмаха куçарнă чухне эпир ăна *ум хӳтлĕхĕ* терĕмĕр, ăнăçлă пулчĕ-ха тесе хĕпĕртенĕччĕ те, малалла ĕçленĕ май чăн сăмахĕ хăех тупăнчĕ, *хулкан* тенĕ иккен ăна пирĕн асаттесем. Сăмахĕ мĕнле сулмаклă тата! «Оружие» тенине *хĕçпăшал* тесе куçарнине те Авалхи Халал йышăнасшăн мар, *пăшал* сăмах килĕшмест-мĕн, «ун чухне пăшал пулман, урăх сăмах шырăр» тет. Мĕнех, пур ун пек сăмах — *кăрал* епле хăватлăн янăрать! «Çурта лартмалли вырăн» — чăнах, мĕншĕн-ха пĕр сăмахпа калама май пур чухне виçĕ сăмахпа усă курас, — çуталса ларччăр çуртасем *шантал* çинче! «Потоп» валли *талай* пур, питĕ нумаййине пĕлтерекен «тьма-тьмущая» валли — *тĕмен*, «наказани» валли *хаса* пур. Авалхи Халал *элеме* «ялавран» ытларах кăмăллать. Çавăн пек сăмахсем ĕçленĕ май аса килеççĕ те, Авалхи Халала аваллăх сĕмĕ кӳрсе, хăйсен вырăнне шăкăлт кăна кĕрсе лараççĕ. Пирĕн ĕçе Раççей Библи Обществи (РБО) ертсе пырать, унăн проекчĕ тăрăх пирĕн куçару классикăлла пулмалла. Пирĕн хамăр енчен хушма та, кĕскетме те юрамасть, пĕр сăмахпа каласан — мĕнле пур, çавăн пек куçармалла.

Çĕнĕ сăмахсем шутласа кăларни те пулкаланă пирĕн. Ку тĕлĕшпе ытла «хăюллă» пулма кирлĕ мар. Сăмахĕ чăнах та вырăнлă пулсассăн, вăл яланах пулнă пек туйăнать те чĕлхене çăмăллăнах кĕрсе каять. Ытлашшипех пуçран шутласа кăларнăскер пулсан, кирлĕ мар япала пек чăрмантарса тăрать те хăех тухса ӳкет.

Тата çакна каласа хăварас килет: чăнах, Айхи асăннă «татăк-кĕсĕк» сăмахсене Библи йышăнмасть. Сăлтавĕ çакă: Турă Çырăвĕнчи текст питĕ кăткăс (тата пуплевĕсем мĕнешкел вăрăм!), ун пек чухне мĕн чухлĕ çыпăçуллăрах калатăн, çавăн чухлĕ лайăхрах, уçăмлăрах — «татăк-кĕсĕк» сăмахсем вара чăлхантараççĕ çеç. Чăнах, ĕç тунă чухне «çиччĕ виç те пĕрре кас» тени тĕрĕсех çав.

*Г.Ф. Юмарт*

## УЙРĂМ ÇЫН ХАЙЛАНĂ СĂМАХСЕМ (Тĕпчевçĕ, çыравçă тата редактор ĕçĕнче йĕркеленнĕ çĕнĕ сăмахсем)

Тĕпчевçĕпе çыравçăн тивĕçĕсенчен пĕри вăл — чĕлхе тасалăхĕшĕн тимлесси. Çак тивĕç редактора та пырса тивет. 1970 çултанпа манăн ăслăлăх ĕçне пикенсех кӳлĕнме тиврĕ. Хальхи Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче вăтăр çул ытла вăй хутăм, ытларах редакторпа тĕпчевçĕ ĕçне туса пытăм. Çавна май çĕнĕ сăмахсем йĕркелесе усă курма та пайтах лекрĕ. Ку енĕпе чи малтан эпĕ чĕлхене «хăйĕн тымарĕ тăрăх ямалла» текен йĕркене пăхăнса пыма тăрăшрăм (илсе панă сăмахсене тăван чĕлхемĕр тутине лайăх пĕлнĕ Н.И. Шелепи «Хусанкай поэта» сăвăра каланă).

Çĕнĕ сăмахсем е ăнлавсем тумашкăн мана уйрăмах Митта Ваçлейĕн хастарлăхĕ хавхалантарса тăчĕ. Çĕнĕ сăмах е çаврăнăш ăнланмалла та янăравлă пулмасан, паллах, халăх хушшине сарăлмасть. Çакна яланах асра тытма тиветчĕ. Вулакана хăш-пĕр çĕнĕ сăмахăмсемпе паллаштарас тетĕп.

Ĕç-пуçăм çапла хускалса кайрĕ. 1970 çулта мана тĕпчев институтне ĕçлеме чĕнсе илчĕç те тӳрех Г.Т. Тимофеевăн «*Тăхăрьялне*» редакцилеме хушрĕç. Алçырăва пичете парас чухне хăш-пĕр пуçлăх кĕнеке ятне эпĕ сĕннĕ пек çырма килĕшмерĕ: М.Я. Сироткин «Тăхăр ял» тесе çырать, вырăсла «Девять деревень» тесе кăтартать терĕç. Кĕнеке ятне пĕр сăмах туса çырма кирли çинчен çине тăрса ăнлантарма тиврĕ. Ун йышши ăнлавсене (ял-хула, тĕрлĕрен вырăн ячĕсене) пĕрле çыратпăр-çке: Виçпӳрт, Тăватпӳрт т. ыт. те. Кĕнеке ячĕ тахçанах çирĕпленнĕ тăрăха пĕлтерет? Каярах унти ялсен шучĕ чакма та, ӳсме те пултарнă. Автор хăй те ку топонима пĕр сăмахпа çырма тата вулама кирлине палăртнă, икĕ сăмах хушшине дефис лартнă. Эппин, ăна вырăсла та чăвашла янăранă пек куçармалла. Эпĕ «Тахаръял» тесе те сĕннĕччĕ, редколлеги «Тхрьял» теме йышăнчĕ. Кунта эпĕ хам çĕнĕ сăмах туман, çĕнĕ ăнлав та шухăшласа

кăларман. Анчах та хутлăх ятне тĕрĕс çырса канона кĕртни çак тĕслĕхре çĕнĕ сăмах йĕркеленипе пĕрех тесе шутлатăп.

Кĕçех чăваш халăх сăмахлăхĕн ултăтомлăхĕпе тăван литература классикĕсен çырнисен пуххисене хатĕрлеме тата редакцилеме тиврĕ. Асăрхаттарусен пайĕсенче тĕрлĕрен ятсемпе ăнлавсене ăнлантарма лекрĕ. Вĕсен ярăмĕсене унччен вырăсла сăмахпа «указатель» тесе ят панă. Эпĕ унăн пĕлтерĕшне улăштармасăр *кăтартмăш* теме сĕнтĕм те, редколлеги членĕсем хирĕç пулмарĕç. Халĕ çапла каласси йăлана та кĕчĕ ĕнтĕ. Ку çĕнĕ сăмаха «йăпатмăш», «илĕртмĕш» тенисен калăпĕпе йĕркелени тӳрех курăнать. Унта та, кунта та хушу глаголĕ çумне *-мăш (-мĕш)* аффикс хушнă. Вăл сăмах тăвакан тухçăлă аффикс шутланать. Çавăн пек мелпе, анчах урăх аффикспа усă курса *хушăм* сăмаха кĕртсе ятăм. Çыравçăсен хăйлав пуххисемпе тĕпчев ĕçĕсем çумне хушса панă иккĕмĕшле материалсен пайне çапла ят пани перекетлĕ тесе шутларăм. Унччен ку сăмах пĕлтерĕшĕпе икĕ сăмахпа – «хушса пани» тесе палăртатчĕç. Çапла вара вăл «сăвăм», «астăвăм» текен çĕнĕ сăмахсен ретне кĕчĕ.

«Чăваш литературин чикĕ леш енчи çыхăнăвĕсен мелĕсем» тĕпчевĕмре («Чувашский язык, литература и фольклор» сб., III кăларăм, 1974) çакăн йышши тепĕр çĕнĕ сăмах *ăстăвăм* сĕнсе пăхрăм. Ăна чăваш пичетĕнче тăтăш усă куракан «произведени» вырăнне каларăм. «Произведени» тени çемçерех янăракан сăмахсен ĕретĕнче хăлхана çурса тăнăн илтĕнет, тутăх пăта пек туйăнать. Анчах «ăстăвăм» шăпи вăрăма пымарĕ, унпа ик-виçĕ çын кăна усă курма ĕлкĕрчĕ. Кĕçех ун вырăнне хамăрах çывăх юлташсемпе пĕрле *хайлав* теме тытăнтăмăр. Ку сăмахсем ăс-хакăл вăйĕпе тунă япалана пĕлтереççĕ, юлашки — кĕскерех те уçăмлăрах. «Шухăшласа кăлар», «ăстала» тесе калас вырăнне нумай çĕрте тахçантанпах «хайла» глаголпа усă курнă. Çавăнпа хальхи вăхăтра çĕнĕ сăмах тума тăтăш пулăшакан *-ав (-ев, -в)* аффикса хушса çĕнĕ ăнлав йĕркелени шăпах вырăнлă пулчĕ.

Асăннă тĕпчевĕмре *йĕркепĕрлĕх* термин малтанхи хут тĕл пулать. Мĕне пĕлтерет-ха вăл? Илемлĕ куçару çинчен калаçнă е çырнă чухне пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарма хатĕрленĕ пулăшу текстне пĕлтерекен ăнлавпа усă курма тивет. Вырăссем ăна «подстрочник» теççĕ. Вăл сăмахсерен куçарнă текста пĕлтерет. Унччен ку ăнлава палăртма эпир вырăс сăмахĕпе усă кураттăмăр е вăрăмраххăн ăнлантарса çыраттăмăр. Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» пăхрăм та унта «йĕркепĕрĕн» тесе каланине

асăрхарăм. Анчах та вăл япала ячĕ мар. «Подстрочник» сăмах пĕлтерĕшне палăртма *-лăх* аффикс ăнăçлă пек туйăнчĕ. Вара *йĕркепĕрлĕх* сăмаха йĕркелерĕм. Унпа Г. Айхи те, А. Хусанкай та çийĕнчех усă курма пуçларĕç. Контекстра ун пĕлтерĕшне вулакан çăмăллăнах ăнланса илет.

Халăх сăмахлăхĕн тексчĕсене пухса тата редакцилесе кăларнă чухне («Чăваш халăх сăмахлăхĕ» ултăтомлăхра, М.Г. Кондратьев хатĕрленĕ юрăсен пуххисенче, хам пичетленĕ «Халăх сăмахлăхĕ», «Халăх эпосĕ» кĕнекесенче) жанр тĕсĕсен ăнлантаруллă ячĕсене чылай ансатлатса пама тиврĕ. Сăмахран, пĕр-пĕр кĕнекере, архиври алçырура «вилнĕ çынна пытарнă чухне юрлакан юрă» тенĕ пулсан, çĕнĕ кĕнекере кĕскен кăна *пытару юрри* тесе кăтартрăм. Апла тунипе тĕп шухăш пĕртте улшăнмарĕ. *Асăну юрри* термин çинчен те çапларах каламалла. Ача-пăча сăмахлăхĕнчи жанр тĕсĕсене ят панă чухне çак мелпе уйрăмах чылай ĕçлеме тиврĕ. Сăмахран, ачасем пĕр-пĕр вăйă выляс умĕн шăпа яраççĕ, ун чухне ятарлă сăвăсем калаççĕ. «Шăпа янă чухне калакан сăвă» тени ăнлантаруллă çаврăнăш шутланать, ăслăлăх терминĕ вара кĕскелĕхе юратать, çакă вăл кулленхи пуплеве те çăмăллатать. Çавăнпа кĕскетсе *шăпа сăвви* тени вырăнлăрах. Йăпату, витлешӳ тата ытти йышши сăвă-юрăсене те халĕ çапла кĕскенрех ят парса усă куратпăр ĕнтĕ.

«Истори юррисем» вырăнне *кун-çул юррисем* тесе калани те ытлашши мар тесе шутларăм. Вĕсен пĕлтерĕшĕсем пĕр пекех. «Кун-çул» тенипе вара чĕлхемĕрте «истори» сăмахпа паллашиччене усă курнă ĕнтĕ. Ăнлава палăртма хамăр сăмах та юрăхлă чухне ют халăх терминĕсем иккĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ пулса юлаççĕ. Вĕсене синоним вырăнне калани те çителĕклĕ. Урăх чĕлхе сăмахĕсем ахаль те йышлă кĕрсе пынă тапхăрта çакна шута илни кирлех. Унсăр чĕлхемĕр янăравлăхĕ чакса, тĕп чăваш сăмахĕн йышĕ пĕчĕкленсе пырать. Çавна кура истори халапĕсене *кун-çул халапĕсем* теме те юрать.

«Халăх эпосĕ» кĕнекере (2004) *мифла пейĕтсем* текен ярăм пĕрремĕш хут пичетленчĕ. Чăвашсен прозăлла мифсем çеç мар, юрласа калаканнисем те пур иккен. Вĕсен тексчĕсем сăвăлла вуланаççĕ. Асăннă ярăм шăпах çавăн пек текстсене пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенче тăтăшах сюжет палăрать. Сюжетлă юрăсене юлашки вăхăтра *пейĕтсем* теме тытăнтăмăр. Ку термина В.Г. Родионов чĕртсе тăратрĕ. Унпа ĕлĕк Н. Охотников, Н. Ашмарин, В. Абрамов-Иревли усă курнă-мĕн. Халĕ ăна музыка тĕпчевçисем те

йышăнчĕç. Çапла икĕ сăмаха пĕрлештерсе çĕнĕ çаврăнăш йĕркелерĕм. Халăхра кун йышши юрăсене ятарласа ят пани тĕл пулмарĕ. Çĕнĕ терминăн пурнаслăхне малашлăх кăтартĕ. Асăннă кĕнекемре çавăн йышши *эпосла поэма* текен термин та пур. Ку вăл — вырăссем «эпическая поэма» тенине калькăласа куçарнăскер. Вăл халăх эпосĕн юмах йышши халапĕсене пĕлтерет, халăх кун-çулне сăнласа парать.

Юлашки вăхăтра хăш-пĕр статьяра мана *авалхи çырулла сăмахлăх* тесе калама тӳр килчĕ. «Авалхи» сăмах кунта XVIII ĕмĕрчченхи тăван сăмахлăх («словесность») еткерне пĕлтерет. Çав шута халăх сăмахлăхĕн тексчĕсем те, литература (уйрăм çын) хайлавĕсем те кĕреççĕ. «Çырулла» тени, паллах, çав асăннă пуянлăх çырăнса юлнине кăтартать. Чăнах та, тĕрлĕ сăлтава пула хамăрăн асаттесен сăмахĕсем хăйсен чĕлхипе питĕ сахал упранса юлнă. Вĕсене тĕрлĕ халăх (китай, араб, эрмен, латин, славян, венгр тата ытти) чĕлхипе çырса хăварнă. Апла пулин те унта чăваш аслашшĕсен сăмах-юмахĕ, кăмăлĕ-туртăмĕ, йăли-йĕрки упраннă.

Çул май поэзире усă курнă çĕнĕ сăмахăмсене те кăштах тĕллесе кăтартас килет. Вулавçă сăвă-юмахра çĕнĕлле илтĕнекен ятсене курма-илтме юратать. Çакă чăвашлăха палăртма та май парать. «Нарспи» евĕрлĕ ят халăхра уйрăмах анлă сарăлнă. Ятăн юлашки сыпăкĕ пикене пĕлтернине пурте туяççĕ, ун умĕнхи пайĕ те усăмлă пĕлтерĕшлĕ. Уйăх илнĕ хĕре *Уйăхпи* тесе ят патăм, сăмсана каçăртакан пуканене *Çиçтепи* тесе чĕнни вырăнлă пуль терĕм. Тутарсемпе пушкăрт халăхĕсен юмахĕсенче тĕл пулакан Пӳлер патши хĕрĕн ятне *Парспи* тени меллĕрех. Тутарсем ăна «Барсын-сулу», пушкăртсем «Барсын-хылу» теççĕ. Ытти чĕлхери хытă сасăсене чăваш чĕлхи-çăварĕ çемçерех калать. Эпĕ çавна та шута илтĕм. Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» *Сĕверпи (Северпи)* ята асăннă. Вăл Сăвар йăхĕн е хулин ятĕнчен пулса кайнă-тăр. Эпĕ вара ача-пăчасен шăпа сăввинче авалхи хуламăрсен ятĕнчен йĕркеленĕ ятсемпе усă куртăм, вĕсене паянхи пурнăçпа çыхăнтарма тăрăшрăм (“Мерекке» кĕнеке, 1991):

*Икĕ тантăш, икĕ хĕр —*
*Пӳлерпипе Сăварпи*
*Пĕр канашлă пулчĕç те*
*Тухрĕç Шурă Атăла.*
*Шур пăрахут килчĕ те—*
*Кайрĕç Шур Шупашкара...*

Çавăн пек тепĕр сăвăра *Пĕркке*, *Икеппи*, *Виçенкей*, *Пилтирек*, *Çичкеней*, *Сакарук*, *Тăхтапи* ятсемпе усă куртăм.

«Теремок» тенине чăвашла такам «пĕчĕк çурт» тесе куçарнăччĕ. Анчах ку пĕр енчен, икĕ сăмахлă, тепĕр енчен, унта хитрелĕх сĕмĕ сисĕнмест. Хитре çурта «кермен» тетпĕр. Çавна аса илтĕм те *-кке* аффикс хушса *керменкке* тесе çыртăм, ку ятпа кĕнеке те кăлартăм. Халĕ вăл сăмахпа «Тантăш» хаçатра та усă кураççĕ. Вăл чĕлхемĕрти тахçанхи сăмах пекех туйăнать.

Ача-пăча пĕлтерĕшсĕр сăмахсене те калама юратать. Ку вăл уйрăмах шăпа сăввисенче сисĕнет. Ачана кунта, сăмах пĕлтерĕшĕнчен ытла, шут-хисепе палăртни кирлĕ. Çавна асра тытса шăпа сăвви кĕвĕлерĕм, сăвă йĕркисене алфавит йĕркипе вырнаçтартăм. Евĕрлев сăмахĕ пек çăмăл илтĕнекен сыпăксене капла лайăхрах астуса юлма меллĕ («Мерекке» кĕнеке, 1991):

*Мак-мак Макмаккай,*
*Так-так Такмаккай,*
*Шак-шак Шакмаккай,*
*Чак-чак Чакмаккай,*
*Хак-хак Хакмаккай,*
*Куç хупмашкăн эсĕ кай!*

Илемлĕ те янăравлă диалектизмсене пуплевре синонимсем вырăнне усă куратпăр. Пушкăртстанри чăвашсем тĕлĕнтермĕше *мерекке* тесе калаççĕ. Самар чăвашĕсем хушшинче *хыткатмăш* тенине илтме пулать, вăл хыткукар çынна пĕлтерет. «Мерекке» кĕнекемре çавсен пĕлтерĕшне уçса паракан сюжетсене кĕртрĕм, ача-пăча куçĕпе сăвăласа патăм. Паллах, вĕсене ăс парас тĕллевпе çыхăнтарнă. Фольклорта «нар пек хĕрлĕ питлĕ хĕрсем» тенине тĕл пулатпăр. Анчах çакăнти «нар» сăмах мĕне пĕлтернине чылайăшĕ пĕлмест. Кăнтăрти тĕрĕк халăхĕсен чĕлхинче вăл гранат йывăççăн çимĕçне пĕлтерет иккен (монгол чĕлхинче — хĕвеле). Асăннă кĕнекене çак сăмах пĕлтерĕшне ăнкарма пулăшакан сюжетлă сăвă та кĕртрĕм (ача чирлĕ çын патне нар шерпечĕ илсе пырать, *нар* сăмах мĕне пĕлтернине ăнлантарса парать). Çавăн пек манăçнă ытти сăмахсене (*еткер*, *кĕтрет*, *пехет* т. ыт. те) чĕртсе тăратас тесе те ятарласа тимлерĕм.

Куçару ĕçĕнче те çĕнĕ сăмахсем тума тивет. Мана тĕрлĕ халăх поэзине, тĕрлĕ йышши проза хайлавĕсене тата тĕн литературине куçарма тӳр килчĕ. Тĕн кĕнекисенчи ăнлавсене тĕрĕс куçарасси уйрăмах кирлĕ. Эпĕ Библин хăш-пĕр кĕнекисене редакцилеме, тĕл-тĕл çĕнĕрен куçарма хутшăнтăм. Ун чухне

хам сěнне пěр-икě çěнě термин çинчен асăнса хăварасах килет. Калаçу «Авалхи халала» кěрекен «Кěçěн пророксем» (1998) тата «Моисейěн пилěк кěнеки» (2001) çинчен пырать.

Тÿрех çакна асăрхаттарам: «завет» сăмаха «халал» тесе куçарни вырăнлă мар иккен. Вăл эпир шутланă пек «завещание» пěлтерěшлě мар, оригиналта Турăпа çын килěшсе татăлнине пěлтерет. Халě чăвашла ăна *килěшÿ* тесе калама сěнеççě, хăш-пěр тěрěк чěлхипе ăна «мăкарич» тесе те куçараççě. И.Я. Яковлев «завет» тенине «сăмах» тесе куçарнă.

«Левит кěнекинче» чÿк парнисене хатěрлессине тěплě ăнлантарса панă. Иçěм çырлин сěткенне епле юхтарни çинчен те анлă çырса кăтартнă. Тарăн шăтăк айккине тата тěпне хăма таврашěпе тирпейленě. Унта иçěм çырли ярса темиçен анса таптанă-ирнě, сěткенне ятарлă пăрăхран юхтарса кăларнă. Çак пěтěм хатěре вырăсла текстра «точило» тесе каланă. Эпě ăна *юхтаркăч* тесе куçарни вырăнлă пуль терěм. Ку çěнě сăмах ытти çынсене тиркештермерě.

Библире кашни утăмра тенě пекех «Господь» сăмах тěл пулать. И.Я. Яковлев ăна «Турă» тесех каланă. «Хуçа» сăмах халě те хăш-пěр çынсене тивěçтермерě. Тěн литературинче (уйрăмах кěлěсенче) «Çÿлти Аттемěр» тенине кура *Çÿлти Хуçамăр* тесе куçарма сěнтěм. Анчах ытти тăлмачсем пěр сăмахпа куçарасшăн пулчěç те *Çÿлхуçа* сăмах йěркелерěç. «Моисей кěнекисенче» вăл çаплах пичетленчě. Ку термин тăван чěлхе йěркине пăхăнмасть. «Çÿлти Аттемěр» тесе каланă вăхăтра ун кÿлепин тытăмěпе килěшсе тăман сăмах аптăратса ÿкерет. Çитменнине вăл «çÿл ту», «çÿл кěлет», «çÿл тÿпе» сăмах çаврăнăшěсене аса илтерет, хăйěн пайěсене уйрăм çырмаллине систерет. «Çÿлхуçа» Турă çÿлте пулни çинчен мар, çÿллě пулни çинчен шухăшлаттарать. Çапла вара, «Çÿлхуçа» неологизм ăнăçлă марри курăнать. Чăнах та: «Çÿлти Хуçамăр» тесен текстри сăмах йышě ÿссе каять. Анчах çакăнтан хăтăлма та май пур-мěн: П.Я. Яковлев ăна пěр сăмахпа *Хуçамăр* тесе калама тытăнчě («Ырă хыпар», «Ача-пăча библийě» кěнекесем). Ку термин ăнăçлăрах та перекетлě.

Чěлхе саккунěсене пăхăнмасăр йěркеленě неологизмсен шăпи телейсěр. Вěсем вулакана йăнăш çулпа чуптарма та пултараççě. Н. Ытарай сăвăç сăпка юррисене *сăпкав*, йăпату такмакěсене *йăпав* теме тăрăшрě («Сăпка юррисем», «Кěçěннисен кěнеки» сборниксем). Кунта çěнě сăмах тунă чухне *-в (-ав, -ев)* аффикс глагол тěпě çумне хушăннине шута илмен,

ăна япала ячĕсем çумне хушнă. Çавăнпа ку терминсене фольклорçăсемпе педагогсем йышăнмарĕç, ача-пăча кĕнекисем хатĕрленĕ чухне вĕсемпе усă курмарĕç.

«Библиотекăна» *вулавăш* теме тытăнни те чылай тавлаштарать. Сăмахăн тĕпне те, аффиксне те тĕрĕс суйласа илмен. Ватăрах çынсене ку сăмах вулав çурчĕ çинчен шухăшлаттарма тытăнать (ĕлĕкрех чĕлхемĕрте «вулав çурчĕ» тени анлă сарăлнăччĕ). Çĕнĕ сăмахри аффиксăн пĕлтерĕшне те ăнкарса илме çук. Тĕрĕссипе «библиотека» кĕнекесем упранакан вырăна пĕлтерет, *кĕнекелĕх* тесе куçарма та май пулнă («арпалăх» тенĕ пек). В. Станьял хаçатра çырнă тăрăх, вăл хăй студентсене «библиотека» вырăнне «вулавăш» тесе калама сĕннĕ те, студентсем унпа килĕшнĕ имĕш. Çак хыпарта сăмах тĕпĕпе аффиксне мĕншĕн çапла суйласа илни çинчен ним те шарламан. Ун пек — ăнлантарусăр, тишкерӳсĕр, танлаштарусăр — ăнăçлă неологизм тума çук, паллах. Çавăн йышши тĕслĕхсене ятарлă тĕпчевçĕсен тапхăр-тапхăр пичет урлă ăнлантарса хак пани кирлĕ. Çакă вăл ăнăççăр терминсене тымар яма памĕ. Ку статьяра ĕçĕм-хĕлĕмри çĕнĕ сăмахăмсене пурне те шута илес тĕллев тытман, чĕлхе вĕçĕнчи тĕслĕхсене çеç илсе патăм. Вĕсем тăрăх çыравçă, тĕпчевçĕ тата редактор ĕçĕнчи çынсем тăван чĕлхене пуянлатас, ун илемне упрас енĕпе епле ĕçленине асăрхама пултараççĕ. Вулакана çакă чĕлхе тирпейлĕхĕшĕн тăрăшма хăюлăх кӳретех. Çĕнĕ сăмахсем епле çуралса сарăлни теуншăн кăсăк пулĕ.

Тĕрлĕ лару-тăрура тĕрлĕ тĕллевпе, тĕрлĕ мелпе çĕнĕ сăмахсем тума чĕлхемĕрĕн вăйĕ çителĕклĕ. Çав мелсемпе сăмах ăстисем те, вулакансем те ялан усă курни кирлĕ. Вара çепĕç чĕлхемĕр ытлашши çӳпĕленмĕ.

*Н.П. Петров*

# ПРИНЦИПЫ УПОРЯДОЧЕНИЯ И УНИФИКАЦИИ ЧУВАШСКОЙ ТЕРМИНОЛОГИИ И СПОСОБЫ ТЕРМИНООБРАЗОВАНИЯ

Объективным показателем степени развитости функциональных средств языка является прежде всего терминология. Отсутствие в национальном языке соответствующей терминологии серьезно препятствует ему свободно выполнять свои общественные обязанности в данной сфере коммуникации. Поэтому создание, упорядочение и кодификация терминов и терминологий являются актуальными задачами языкового строительства.

В зависимости от потребностей повседневной практики, сфер коммуникации представляется необходимым сосредоточить внимание прежде всего на разработке терминов и терминологий и подготовке терминологических словарей (русско-чувашских и с толкованием) по следующим отраслям: а) общественно-политической (включая экономическую, юридически-правовую и др.), б) технической, в) сельскохозяйственной, г) лингвистической, д) литературоведческой, е) основам наук, изучаемым в общеобразовательных школах, ё) медицинской и санитарно-гигиенической, ж) физкультурно-спортивной, з) искусствоведческой, и) педагогической. Необходимость создания и упорядочения терминологии по данным отраслям знаний диктуется насущными потребностями общества.

Преподавание в чувашских школах основ наук на русском языке не исключает важности терминологической работы по школьным предметам. Наоборот, наличие русско-чувашских терминологических словарей по основам школьных наук будет способствовать осознанному усвоению учебного материала.

Большим недостатком существующей терминологии является отсутствие систематичности и единообразия в наименованиях, несоблюдение лексикологической связи между терминами родственных понятий. Так, например, русский

химический термин *свободный азот* на чувашский язык переведен *ирĕклĕ азот*, а *связанный азот* – *пĕрлешнĕ азот*. Здесь между терминоэлементами *ирĕклĕ* «свободный» и *пĕрлешнĕ* «соединившийся» нет системной связи. Для сохранения этой связи правильнее было бы назвать эти химические элементы *пĕрлешнĕ азот* «связанный азот» и *пĕрлешмен азот* «свободный азот». В таком варианте *пĕрлешнĕ* и *пĕрлешмен* противопоставляются как в плане содержания, так и в плане выражения, налицо логическая и лексическая связь.

Несовершенством терминологических словарей нужно считать синонимию терминов. Синонимы засоряют терминологию и излишне загружают память. Однако не всякий синонимический ряд терминов или не всякая дублетная пара поддается сокращению. В условиях развивающегося двуязычия параллельное сосуществование собственных и иноязычных терминов вполне возможно. Оправданным является также появление дублетных пар, состоящих из одночленных (однокомпонентных) и двучленных (двухкомпонентных) терминов. Они возникают в результате словообразовательного процесса, направленного на устранение диалектического противоречия между единством понятия и двучленностью формы. При этом еще надо иметь в виду то обстоятельство, что в такой терминологии, как чувашской, имеющей сравнительно короткую историю и обслуживающей относительно ограниченный круг отраслей науки и производства, синонимичность есть неизбежное следствие поисков лучших терминов и проверки их жизнеспособности. Задача нормализаторов терминологии заключается в отборе и кодификации лучших терминов.

Весьма существенным минусом в терминологии является передача одним термином нескольких, подчас совершенно различных понятий. Например, в «Русско-чувашском словаре общественно-политических терминов» (1960) *тӳлев* имеет следующие значения: 1) плата (аккордная плата – *аккордлă тӳлев*), 2) платеж (долговой платеж – *парăм тӳлевĕ*), 3) сбор (акцизный сбор – *акциз тӳлевĕ*), 4) расчет (безналичный расчет – *укçасăр тӳлев*), 5) поставка (обязательные поставки – *тивĕçлĕ тӳлевсем*); термин *пурлăх* дан в значениях: 1) имущество (недвижимое имущество – *куçми пурлăх*), 2) собственность (общественная собственность – *общество пурлăхĕ*), 3) достояние

(народное достояние – *халăх пурлăхĕ*); термин *тăкак* – в значениях «расход», «издержки» (издержки производства – *производство тăкакĕсем*) и т.п.

Следующая недоработка терминов – это длиннота, многословность или объяснительный перевод их с русского языка, ср.: капиталистическое присвоение – *капитализмла пусмăрласа пурлăх пухни (çавăрса илни)*; капитальное вложение – *çĕнĕ строительствăна укçа хывни*; моральный износ техники – *машинăсем кивве юлни (техника çĕнелсе пынипе)*; периодическая печать – *вăхăчĕпе тухса тăракан пичет* и т.п.

Не менее существенным изъяном общественно-политической терминологии является искусственность, неудобопроизносимость терминологических новообразований, ср.: *наци хăйăнланăвĕ* – национальное самосознание, *хăйхӳтĕлев* – самооборона, *хире-хирĕç татăлу* – взаимный расчет, *пĕрлĕхпе нумай тĕслĕх* – единство и многообразие, *хӳтленчĕклĕх* – оборончество и т.п.

При создании новых терминов и отраслевых терминологий следует в полной мере использовать утвердившиеся в практике принципы терминообразования, достижения современной теории языкознания и лексикографии, тщательно учитывать реальное распределение сфер использования чувашского и русского языков в условиях прогрессирующего двуязычия. Определяющими принципами упорядочения и унификации терминов должны являться точность, краткость, систематичность наименований.

Точность термина предпологает не абсолютную точность, а лишь необходимую, ибо материальные объекты заключают в себе много признаков, точно отразить их сразу в одном наименовании невозможно. Точность термина – это наименование наиболее существенных признаков объекта, позволяющее безошибочно дифференцировать данный объект от всех других.

Краткость термина – одно из главных требований термина. Она диктуется общелингвистическим законом экономии речи и достигается либо путем эллипсиса, либо путем вытеснения одного наименования другим, более кратким.

Системность терминов – это, во-первых, система подбора однородных признаков, отражаемых составляющими элементами термина, и, во-вторых, система сочетания и располо-

жения элементов в термине. Понятия, связанные между собой известной системой по первичности и вторичности, роду и виду и т.п., должны иметь последовательно связанные наименования. Терминология той или иной дисциплины должна представлять собой систему терминов, соответствующую системе понятий этой дисциплины. Однако данный принцип, т.е. принцип системности, к сожалению, не является всеобъемлющим. Во многих областях специальной терминологии системные отношения между терминами установить не удается. Это объясняется разными причинами, прежде всего внеязыковыми, как-то: историей развития науки и техники, культуры и образования у данного народа, степенью применения родного языка в тех или иных сферах общения.

Лингвистический анализ терминологических словарей чувашского языка показывает, что термины в большинстве своем, как и обычные слова, образуются на базе существующих слов, но в отличие от обычного словообразования в терминообразовании допустимы специальные, ограниченные данной сферой, способы словообразования. Социальный характер терминологической работы, т.е. сознательное участие в ней специалистов, благоприятствует специализации и дифференциации моделей словообразования, стандартизации аффиксальных отношений, активизации непродуктивных моделей и дает возможность искусственно внедрять в отраслевые терминологии специализированные по значению словообразующие морфемы, которые позволяют связать определенную классификационную систему понятий с соответствующей системой языковых средств выражения этих понятий.

В чувашском языке можно выделить следующие способы образования терминов: семантический, морфологический, семантико-морфологический, синтаксический, лексико-морфолого-синтаксический, парного сложения, калькирования и неполного калькирования.

***Семантический способ*** состоит из следующих разновидностей:

1. Терминологизация общеупотребительных бытовых слов. В качестве термина используется существующее в языке общеупотребительное слово с сохранением его звукового состава, которое, выступая как термин, приобретает определенное содержание в данной системе терминов. Этот способ

широко применялся при образовании физической, математической, химической, технической и других отраслей терминологии, ср. физические термины: *ăшă* «теплота», *çутă* «свет», *пайăрка* «луч», *пусăм* «давление», *хăват* «мощность», *пысăкăш* «величина», *çӳллĕш* «высота», *шĕвек* «жидкость» и т.д.

2. Терминологизация диалектных слов. Этот способ активно применялся в начале 20-х годов XX в., его поддерживал Н.И. Ашмарин. Путем терминологизации диалектных слов много терминов создавалось в географии, ботанике, химии, агрономии и др., ср.: *хысак* «скала», *ката* «кустарник», *ăмăр* «пасмурный», *çеçен хир* «степь», *кĕтмел* «брусника», *сĕлтĕ* «щелочь», *ансат* «простой».

3. Терминологизация архаичных слов. В отличие от диалектизмов архаизмы в чувашском терминотворчестве особой привилегией не пользовались. Попытки Д. Петрова-Юмана использовать архаизмы в качестве терминов современного литературного языка произвели в обществе явно отрицательную реакцию. I Конференция чувашских писателей (1923 г.) рекомендовала не восстанавливать забытые архаизмы для обозначения современных культурных, научных, политических терминов, как, например, сум «*счет*» в значении «числительное»; *сăпат* «лицо», «облик» в значении «грамматическое лицо»; *пăлхавăр* «суматоха», «смута» в значении «мятеж». Однако восстановление архаизмов в качестве терминов вполне возможно.

4. Переосмысление значения бытовых слов. В процессе терминологизации слово приобретает новое значение, утрачивая старое. До революции слово *чĕлхеçĕ* бытовало со значениями «знаток наговоров и заговоров», «ворожей», «ворожея». В 1919 г. данному слову было приписано новое значение «языковед», «лингвист». С закреплением за словом *чĕлхеçĕ* значения «языковед» его первичное значение предалось забвению. Слово *сăвă* функционировало со значением «песенные слова». В начале 20-х годов XX в. оно было терминировано со значением «стих», «стихотворение», а значение «песенные слова» закрепилось за его синонимом *такмак* «частушка».

5. Перенос значения слов. На основе некоторого сходства название одного предмета переносится на другой, ср.: *шăрт* «щетина» – термин *ту шăрчĕ* «гребень горы»; *йăран* «межа», «грядка» – термин *ту йăранĕ* «горная гряда»; *мăй* «шея», «горло» – термин *çĕр мăйĕ* «перешеек».

6. Расширение значения слов. Частному значению слова приписывается обобщенное значение, в результате бытовое слово становится термином, выражающим политическое, культурное, философское или другое научное понятие, ср.: *юхăм* «течение воды» – в терминологии: «течение», «движение» (политическое, литературное или др.); *каç* «вечер» (время суток) – в терминологии: «вечер», «собрание»; *ăмăрту* «состязание на первенство» – в терминологии: «соревнование»; *кĕрешӳ* «рукопашная схватка» – в терминологии: «борьба» (классовая, политическая).

***Морфологический способ,*** или способ аффиксации, является наиболее продуктивным и гибким видом терминотворчества. В чувашском морфологическом терминообразовании применяется более десяти словообразовательных аффиксов. Они следуюшие:

1. *-çă (-çĕ)*, присоединяясь к именам существительным, образует новые имена со значением действующего лица, ср.: *калавçă* «рассказчик», *вĕçевçĕ* «летчик», *сăнавçă* «наблюдатель», *суйлавçă* «избиратель», *çӳревçĕ* «путешественник», *тĕпчевçĕ* «исследователь», *юптаруçă* «баснописец», *ялавçă* «знаменосец».

2. *-лăх (-лĕх)*, являясь наиболее продуктивным аффиксом, присоединяется к именам существительным, прилагательным и образует субстантивные термины как абстрактного, так и конкретно-предметного значения, ср.: *халăхлăх* «народность», *сăмахлăх* «словесность», *çырулăх* «письменность», *пăрлăх* «ледник», *юрлăх* «снежник», *пиçĕлĕх* «упругость», *ăслăлăх* «мудрость», «наука».

В советскую эпоху аффикс *-лăх (-лĕх)* в процессе терминотворчества приобрел новые свойства – стал присоединяться:

а) к причастиям прошедшего и будущего времен, ср.: *курайманлăх* «ненависть», *пăхăнманлăх* «независимость», *хутпĕлменлĕх* «неграмотность», *шăранаслăх* «плавкость», *шăтаслăх* «всхожесть», *туптанаслăх* «ковкость», *ирĕлеслĕх* «растворимость»;

б) спорадически к местоимениям и их падежным формам, ср.: *харпăрлăх* «собственность» от *харпăр* «каждый», *мĕнлелĕх* «определенность» от *мĕнле* «какой», *камăнлăх* «притяжательность» от *кам* «кто»;

в) к наречным формам, ср.: *вăрттăнлăх* «тайна», *тăтăшлăх* «частотность», *хăвăртлăх* «скорость», *юрилĕх*: *юрилĕх причастийĕ* «причастие притворного действия».

Аффикс *-лăх (-лĕх)* легко присоединяется к иноязычным основам, ср.: *активлăх* «активность», *абсурдлăх* «абсурдность», *валентлăх* «валентность», *ответсăрлăх* «безответственность», *правасăрлăх* «бесправие», *нацилĕх* «национальность».

3. *-у (-ÿ)*, присоединяясь к глагольным основам, образует термины с абстрактным значением, ср.: *лару* «заседание», *канашлу* «совещание», *шантару* «доверенность», *валеçÿ* «разделение», «разделительный», *кăтарту* «указание», «указательный», *танлаштару* «сравнение», «сравнительный», *çĕрйĕркелÿ* «землеустройство».

4. *-в*, являясь разновидностью аффикса *-у (-ÿ)*, присоединяется к глагольным основам, оканчивающимся на гласный, ср.: *калав* «рассказ», *пуплев* «речь», *вулав* «чтение», *пайлав* «деление», *суйлав* «выборы», *евĕрлев* «подражание», *тĕрĕслев* «контроль», *хирĕçлев*: *хирĕçлев союзĕ* «противительный союз».

Аффикс *-в* может присоединяться также к глагольным основам, оканчивающимся на согласный. В дореволюционном языке данным способом были созданы *йыхрав* «приглашение», *кĕтев* «в долг», «взаймы», *çăхав* «жалоба». В советские годы данным способом образованы: *вĕçев* «полет», *виçев* «измерение», *ишев* «плавание», *курав* «выставка».

5. *-ăм (-ĕм)*, присоединяясь к глагольным основам, образует имена со значением действия или результата действия, ср.: *кÿртĕм* «введение», *пулăм* «явление», *пусăм* «давление», «ударение», *тытăм* «структура», *куçăм* «движение», «переход», *витĕм* «влияние», *сăвăм* «доение».

6. *-кăч (-кĕч)*, присоединяясь к глагольным основам, образует субстантивные термины, обозначающие предмет, инструмент, ср.: *каскăч* «резец», *хытаркăч* «закрепитель», *пĕрĕхтеркĕч* «опрыскиватель».

7. *-кăç (-кĕç)*, являясь разновидностью аффикса *-кăч (-кĕч)*, по значению полностью совпадает с ним, ср.: *çуткăç* «включатель», *сÿнтеркĕç* «выключатель», *çитеркĕç* «кормушка», *ĕçтеркĕç* «поилка», *ÿстеркĕç* «брудер».

8. *-чăк (-чĕк)*, присоединяясь к глаголам возвратного залога, образует субстантивные термины со значением результата действия, ср.: *тĕрленчĕк* «эскиз», «зарисовка», *юхăнчăк* «запущенность», «разруха», *шăранчăк* «шлак», «расплавленная масса».

9. *-аш (-еш)* в современном языке не продуктивен, при его помощи образованы имена существительные от

существительных и прилагательных, ср.: *каяш* «отходы», «охвостье», *малаш* «будущность», *йӗкӗреш* «близнецы», «двойня». В терминологии при помощи данного аффикса создано *япалаш* «вещество».

10. *-таш (-теш)* в современном языке не продуктивен, в 20-х годах применялся для образования грамматических терминов, как-то: *тимӗрташ* «металл», *пайташ* «причастие», *ӗҫхӗлтеш* «деепричастие». При помощи данного аффикса в 60-х годах образовано *ентеш* «земляк».

11. *-лӑ (-лӗ)*, присоединяясь к именам существительным, образует адъективные термины, ср.: *калуллӑ* «повествовательный», *ыйтуллӑ* «вопросительный», *кӑшкӑруллӑ* «восклицательный», *хистевлӗ* «понудительный», *пӑхӑнуллӑ* «придаточный», «подчиненный», *активлӑ* «активный».

12. *-ла (-ле), -лла (-лле)*, присоединяясь к именам существительным, числительным, образует адъективные термины, ср.: *сӑвӑлла* «стихотворный», *социализмла* «социалистический», *колонилле* «колониальный», «являющийся колонией», *иккӗмӗшле* «вторичный», «производный».

13. омонимичный аффикс *-ла (-ле)*, присоединяясь к именам существительным, главным образом, заимствованным, образует глагольные термины, ср.: *автоматизациле* «автоматизировать», *аклиматизациле* «аклиматизировать», *аккомпанементла* «аккомпанировать», *аккумуляциле* «аккумулировать», *амальгамӑла* «амальгамировать», *амортизациле* «амортизировать», *анестезиле* «анестезировать», *аннексиле* «аннексировать».

***Семантико-морфологический способ.*** Сущность указанного терминообразования заключается в том, что имена прилагательные и причастия, присоединяя к себе аффикс выделения *-и* и аффикс множественного числа *-сем*, приобретают свойства специального слова, обозначающего наименования класса, разряда, подразделения и группы, ср.: *хӗрлисем* «красные», *шуррисем* «белые», *кӑшлаканнисем* «грызуны», *хоботлисем* «хоботные», *хордӑллисем* «хордовые», *хутаҫлисем* «сумчатые». Этим способом образованы двучленные термины *ансат ӳтпӳллисем* «простейшие», *ҫурӑм шӑммиллисем* «позвоночные», *шуса ҫӳрекеннисем* «пресмыкающиеся», *ал ҫунатлисем* «рукокрылые», *йӗкӗр чӗрнеллисем* «парнокопытные», *хӑрах чӗрнеллисем* «однокопытные», *пай ураллисем* «членистоногие», *ласт ураллисем* «ластоногие», *мамӑк тирлисем* «пушные» и т.п.

***Синтаксический способ.*** Данным способом термины образуются из двух или более лексических единиц. В зависимости от характера связи терминообразующих компонентов синтаксический способ подразделяется на следующие разновидности:

1. Собственно синтаксический способ – соединение лексических единиц в составной термин, или в термин-словосочетание. Этот весьма продуктивный способ терминообразования может иметь разнообразные структурные модели, из которых наиболее распространенными являются:

а) существительное + существительное, ср.: *асфальт çул* «асфальтная дорога», *хут патрон* «бумажный патрон», *тăхлан ангидричĕ* «оловянный ангидрид», *магнит тĕнĕлĕ* «магнитная ось»;

б) существительное + существительное + существительное, ср.: *хĕçтимĕр прокат станокĕ* «листопрокатный станок», *техника пулăшăвĕн автомобилĕ* «автомобиль технической помощи», *шлакпа цемент кирпичĕ* «шлакоцементный кирпич», *сывлăшпа шĕвек аккумуляторĕ* «воздушно-гидравлический аккумулятор»;

в) существительное + прилагательное + существительное, ср.: *шыва тӳсĕмлĕ сăрă* «водостойкая краска», *вĕрие тӳсĕмлĕ кирпĕч* «жароупорный кирпич»;

г) существительное + причастие + существительное, ср.: *пуля-снаряд тивмен вырăн* «мертвое пространство», *асфальт саракан машина* «асфальтоукладчик»;

д) прилагательное + существительное, ср.: *уçă сасă* «гласный», *хупă сасă* «согласный», *таса виçе* «чистый вес»;

е) прилагательное + существительное + существительное, ср.: *васкавлă пулăшу автомобилĕ* «автомобиль скорой помощи», *револьверлă токарь автомачĕ* «револьверно-токарный автомат»;

ж) прилагательное + прилагательное + существительное, ср.: *вăйлă уçă сасă* «напряженный гласный», *кӳкĕртлĕ хура тăхлан* «сернистый свинец»;

з) числительное + прилагательное + существительное, ср.: *икĕ кĕпçеллĕ пăшал* «двухствольное ружье», *виçĕ шăнăрлă шнур* «трехжильный шнур», *сакăр цилиндрлă двигатель* «восьмицилиндровый двигатель»;

и) причастие + существительное, ср.: *тутăхман хурçă* «нержавеющая сталь», *пĕрчĕлетнĕ удобрени* «гранулированное удобрение», *тӳрленми улшăну* «необратимая деформация»;

й) наречие + причастие + существительное, ср.: *час типекен сăрă* «быстросохнущая краска», *вăрах çурăлакан мина* «мина замедленного действия»;

к) наречие + прилагательное + прилагательное + существительное, ср.: *кăшт кӳкĕртлĕрех кислоталлă кали* «серноватистокислый калий», *кăшт азотлăрах кислоталлă натри* «азотноватистокислый натрий».

2. Лексико-синтаксический способ — простое соединение лексических единиц в составной термин без использования морфологических средств связи, ср.: *ум сăмах* «предисловие», *хыç сăмах* «послесловие», *тымар ура* «корненожка», *тымар çимĕç* «корнеплод», *çил çуна* «аэросани», *сăн ӳкерчĕк* «фотоснимок».

3. Морфолого-синтаксический способ – соединение лексических единиц в один термин при помощи:

а) аффикса притяжательности (графически аффикс может и не обозначаться), ср.: *сас палли* «буква», *ĕç кунĕ* «трудодень», *пахча çимĕç* «овощи», *ял хуçалăх* «сельское хозяйство», *ĕç халăх* «трудящиеся»;

б) причастного форманта *-ан (-ен)*, ср.: *пăр çĕмрен* «ледокол», *çĕр çĕмрен* «землевзрыватель», *кăткă çиен* «муравьед», *çулçă çиен* «листоед», *тĕк çиен* «пухоед»;

в) словообразовательных аффиксов *-лăх (-лĕх), -у (-ӳ), -в, -чăк (-чĕк), -ла (-ле), -лă (-лĕ)* и др., ср.: *виç кĕтеслĕх* «треугольник», *тăват кĕтеслĕх* «четырехугольник», *хут пĕлменлĕх* «неграмотность», *ал çыру* «рукопись», *çĕр йĕркелӳ* «землеустройство»; *çул çӳрев* «путешествие», *ик енлĕ* «двухсторонний», *тан аяклă* «равносторонний», *тан ураллă* «равнобедренный».

***Способ парного сложения***. В кругу составных терминов выделяются особые по способу образования термины — парные слова. Они создаются путем сложения пары слов собирательной, или суммарной, семантики, ср.: *сĕтел-пукан* «мебель» (букв. стол-стул), *хаçат-журнал* «периодическая печать» (букв. газета-журнал), *хут-кăранташ* «письменные принадлежности» (букв. бумага-карандаш), *кĕрпе-çăнăх* «мучно-крупяные продукты» (букв. крупа-мука).

***Способ калькирования***. В разработке и упорядочении чувашской терминологии широко применяется калькирование русских и интернациональных терминов – создание новых

наименований по лексико-фразеологическим и синтаксическим моделям другого языка. В сущности большинство из научных, технических и общественно-политических терминов чувашского языка создавалось по образцу и подобию русских и интернациональных терминов, и многие из них являются прямыми кальками, ср.: рус. народность — чув. *халăхлăх*, рус. словесность — чув. *сăмахлăх*, рус. рабство — чув. *чуралăх*, рус. чтение — чув. *вулав*, рус. мягкий звук — чув. *çемçе сасă*, рус. вольный стих — чув. *ирĕклĕ сăвă* и т.д.

Термины-кальки разделяются на простые, представляющие одно слово, и сложные, состоящие из двух или более слов. Среди них особое место занимают полукальки. Полукалька — это гибридное слово, составленное из разноязычных элементов, чаще всего из русской или интернациональной заимствованной основы и чувашского аффикса или аффиксов. Выделяются следующие способы образования полукалек:

1) Основа русского или интернационального термина, тождественная самостоятельно бытующему слову, заимствуется без перевода, а его суффиксально-префиксальные морфемы переводятся на чувашский язык, т.е. заменяются чувашскими аффиксами, ср.: рус. аполитичность — чув. *политикăсăрлăх*, рус. аполитичный — чув. *политикăсăр*, рус. плановость — чув. *планлăх*, рус. бесплановость — чув. *плансăрлăх*, рус. плановый — чув. *планлă*, рус. ответственность — чув. *ответлăх*, рус. безответственность — чув. *ответсăрлăх*, рус. ответственный — чув. *ответлă*, рус. законность — чув. *законлăх*, рус. законный — чув. *законлă*, рус. беззаконие — чув. *законсăрлăх* и т.п. Надо заметить, что в последние два десятилетия производящая основа *ответ* в средствах массовой информации стала вытесняться чувашским словом *явап* (*явап* «ответ», *явaплă* «ответственный», *явaплăх* «ответственность», *явапсăрлăх* «безответственность»), а слово *закон* стало уступать свое место старой форме *саккун* (*саккунлă* «законный», *саккунсăр* «незаконный», *саккунсăрлăх* «беззаконие»).

2. Основа русского или интернационального термина, нетождественная самостоятельно функционирующему слову, заимствуется как производящая основа, а суффиксально-преффиксальные морфемы переводятся на чувашский язык, ср.: рус. абстрактность — чув. *абстрактлăх*, рус. абстрактный — чув. *абстрактлă*, рус. оперативность — чув. *оперативлăх*, рус.

оперативный — чув. *оперативлă*, рус. регулярность — чув. *регулярлăх*, рус. регулярный — чув. *регулярлă*, рус. консервативность — чув. *консервативлăх*, рус. консервативный — чув. *консервативлă*, рус. сентиментальность — чув. *сентименталлăх*, рус. сентиментальный — чув. *сентименталлă.*

Русские сложные термины и термины, занимающие промежуточное положение между собственно-сложными и сложносокращенными словами, калькируются следующими способами:

1) если компоненты русского сложного термина переводимы на чувашский язык, то такой термин калькируется полностью, ср.: рус. себестоимость — чув. *хăйхаклăх*, рус. пятилетка — чув. *пилĕкçуллăх*, рус. двуязычие — чув. *икчĕлхелĕх*, рус. водосборник — чув. *шыв пухмачи*;

2) если один из компонентов русского сложного термина на чувашский язык не переводится, то этот компонент заимствуется, а другой компонент или другие компоненты калькируются, ср.: рус. электросталь — чув. *электрохурçă*, рус. инфразвук — чув. *инфрасасă*, рус. ультракрасный — чув. *ультрахĕрлĕ*, рус. железобетон — чув. *тимĕр-бетон*, рус. ветродвигатель — чув. *çил двигателĕ*, рус. двухфазный — чув. *ик фазăллă*;

3) если один из компонентов русского сложного термина представляет собой полное слово, другие компоненты — сокращенные слова, то полное слово переводится (если оно переводимо), а сокращенные слова заимствуются, ср.: рус. леспромхоз — чув. *вăрманпромхоз*, рус. литобъединение — чув. *литпĕрлешӳ*; рус. политдень — чув. *политкун*, рус. Чувашпотребсоюз — чув. *Чăвашпотребсоюз.*

С 20-х годов русские сложносокращенные слова, как правило, калькировались, ср.: рус. *рабселькор* — чув. *ĕçялкор*, рус. *исполком* — чув. *ĕçтăвком*, рус. *районо* — чув. *райçутĕçпай.*

В 1960 году школы Чувашии с 5-го по 10-й класс перешли на русский язык обучения. Казалось бы, с переводом преподавания школьных наук на русский язык и прекращением издания на родном языке учебников по общеобразовательным дисциплинам, потребность в научных терминах на национальном языке отпадает. Но этого не случилось. Наоборот, в связи с развитием в республике электротехнической, текстильной, химической, приборостроительной, машиностроительной, тракторостроительной и других отраслей промышленности, в чувашском языке в пределах, необходимых для массовой информации и

пропаганды достижений науки и техники среди населения, научно-техническая терминология постоянно пополняется новыми терминами.

Освоение человеком космического пространства породило новые отрасли науки и техники, которые обогатили языки народов мира новыми терминами. Много новых терминов воспринял чувашский язык в связи с запуском спутников земли, а затем космических кораблей с человеком на борту. В чувашских газетах, теле- и радиопередачах часто можно наблюдать употребление таких терминов, как *космонавт*, *космодром*, *космонавтика*, *космос аппарачĕ* «космический аппарат», *космос двигателĕ* «космический двигатель», *космос ракети* «космическая ракета», *реактивлă куçăм* «реактивное движение», *космос тĕпчевĕ* «космическое исследование», *атмосфера тулашĕ* «атмосферная внешность», *автоматла станци* «автоматическая станция».

Активное употребление терминов в сферах массовой коммуникации делает их достоянием общелитературного языка, т.е. общепонятными и общеупотребительными словами. Об этом свидетельствует сравнительное изучение словарей чувашского языка, изданных в разное время. Так, в переводной части «Русско-чувашского словаря» 1951 г. (под редакцией Н.К. Дмитриева) большинство заимствованных из русского языка специальных слов представлено с толкованием их значений. В «Русско-чувашском словаре» 1971 г. (под редакцией И.А. Андреева и Н.П. Петрова) у многих заимствованных слов толкования опущены. Без пояснения даны здесь *алгебра, алебастр, антенна, бактерия, банк, баржа, бацилла, белок, бокс, боксер, вазелин, вальс, вариант* и многие другие, которые в «Русско-чувашском словаре» 1951 г. снабжены пояснениями на чувашском языке.

Колоссальный приток информации во всех областях науки и техники и хозяйственно-производственной деятельности способствует интенсивному пополнению национальных языков терминами, номенклатурными словами, которые, не удерживаясь в рамках одного языка, становятся межнациональными и международными. Вместе с тем заимствование межнациональных и интернациональных терминов не является единственным источником обогащения и унификации национальной терминологии. Наряду с заимствованием готовых иноязычных терминов язык постоянно пополняется новыми образованиями, рождающимися в недрах родного языка.

*И.В. Алексеев, Г.А. Дегтярёв*

## К ВОПРОСУ О СОЗДАНИИ КОМПЬЮТЕРНОЙ ТЕРМИНОЛОГИИ НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

Становление чувашской сферы Интернета, кратко именуемой *Чуваштет* (на чуваш. языке — Чӑваштет, на англ. — Chuvashtet), вызвало потребность в развитии новых функций чувашского языка, неразрывно связанных с переводом на чувашский язык пользовательского интерфейса целого ряда компьютерных программ и веб-сервисов, справочной информации и документации к ним.

Как известно, при создании популярных веб-сервисов и компьютерных программ преимущественно используется английский язык. По мере распространения Интернета, компьютеров и программного обеспечения (ПО), стала нарастать потребность в обработке информации не только на английском, но и на других языках. Выход был найден в интернационализации и локализации используемого ПО.

Интернационализация (англ. internationalization) — принцип проектирования ПО, при котором с самого начала закладывается возможность многоязыковой поддержки. Технически это реализуется за счет того, что данные, которые могут изменяться в зависимости от языка пользовательского интерфейса, выделяются в отдельные файлы. Такой способ позволяет переводить программный продукт на различные языки без изменения кода самой программы.

В большинстве случаев интернационализация также подразумевает использование юникода, возможности изменения форматов представления чисел, валют, дат и времени, динамического изменения размеров элементов интерфейса. В настоящее время в ряд популярных компьютерных программ включена возможность интернационализации, что позволяет проводить их дальнейшую локализацию и самими пользователями этих программ.

